Чăваш Республикин культура,
национальноçсен тата архив ĕçĕн министерстви
Чăваш Республикинчи Халăх пултарулăхĕн центрĕ

«Клуб репертуарĕ» ярăмри кăларăм

# ЧАРШАВ УÇĂЛСАН…

Пьесăсен пуххи

Шупашкар – 2024

Чăваш Республикинчи Халăх пултарулăх центрĕ
«Клуб репертуарĕ» ярăмри кăларăм
ЧАРШАВ УҪĂЛСАН…
Пьесăсен пуххи
Шупашкар: 2024

Чаршав уҫăлсан… Пьесăсен пуххи. – Шупашкар: 2024. - 67 стр.
Ку сборник икĕ драматург пултарулăхĕпе паллаштарать. Пĕрремĕш пьеса – Игнатий Молодов К.В. Иванов «Нарспи» поэма тăрăх ҫырнă «Нарспи» драма, иккĕмĕш – Леонид Родионов ҫырнă «Асамат кĕперĕ» пьеса. Ку пьесăсене Республикăри халăх театрĕсемпе драма ушкăнĕсене пулăшу кӳрес тĕллевпе тата халăх театрĕсен репертуарне пуянлатас шутпа хатĕрленĕ.

© АУ «Республиканский центр народного творчества «ДК тракторостроителей» Минкультуры Чувашии, 2024

## УМĔН КАЛАНИ

Сирĕн умра «Клуб репертуарĕ» ярăмри кăларăмăн «Чаршав уçăлсан…» пьесăсен пуххин черетлĕ номерĕ. Эпир ку номере Чăваш халăх артисчĕ Игнатий Осипович Молодовпа Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Леонид Никонорович Родионов режиссер пултарулăхне халаллас терĕмĕр. Чăваш театрĕнче ĕçлекен паллă артистсем те, режиссерсем те вăрçă хыççăнхи çулсенче уйрăмах наци драматургине аталантарма тăрăшнă, паллă произведенисене сцена валли инсценировка туса хатĕрлес, çĕнĕ пьесăсем калăплас ĕçе хастар хутшăннă. И.О. Молодов К.В. Ивановăн «Нарспи» поэма тăрăх çырнă «Нарспи» драми Чăваш театрĕн сцени çинче кун çути курайман, çавăнпа та халăх театрĕсемшĕн вăл интереслĕ пулма кирлĕ. Л.Н. Родионов çырнă «Асамат кĕперĕ» пьеса ял тата çамрăксен темипе çыхăннă, хальхи вăхăтра вăл уйрăмах сцена çинче кирлĕ пулассăн туйăнать. Пьеса авторĕсем çинчен кăштах вуласа пĕлме вĕсен кĕске биографине пичетлерĕмĕр, пьеса шыракансем, тен, вĕсем çинчен вуласа пĕлсе вĕсен ытти пьесисемпе те паллашма кăмăл тăвĕç. 2025 çул ку авторсемшĕн – юбилейлĕ çул! Игнатий Осипович Молодов çуралнăранпа – 120 çул, Леонид Никонорович Родионов çуралнăранпа 110 çул çитет.

«Клуб репертуарĕ» малаллахи кăларăмсенче драматургсен пултарулăхĕпе паллаштарсах тăрĕ, интереслĕ пьесăсем пичетленсех пырĕç.

***Надежда Кириллова,***
*Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки,*
*Республикăри халăх пултарулăх центрĕн*
*театр енĕпе ĕçлекен методисчĕ*

## ПЬЕСА АВТОРĔ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин халăх артисчĕ Игнатий Осипович Молодов пултарулăхĕ пирĕн театр историйĕнче чăннипех тивĕçлĕ, хисеплĕ вырăн йышăнать. И.О. Молодов Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Елчĕк ялĕнче 1905 çулхи юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. 1919 çулта вăл ялти активлă комсомолецсенчен пĕри пулса тăрать. Хут пĕлменнисене çырма, вулама, шутлама вĕрентет. Алăпа çырса кăларакан журнал валли сăвăсем çырать, драма кружокне активлă хутшăнать.

1924 çулта Чĕмпĕрти ялхуçалăх шкулне вĕренме кĕрет. Кунта вăл драма кружокĕн ĕçне активлă хутшăнать. Н. Гоголĕн «Женитьба», А. Луначарскин «Королевский брадобрей» пьесăсемпе лартнă спектакльсенче вылять. Май пур чух Чĕмпĕрти драма театрне çӳреме те вăхăт тупать. Пĕррехинче Чăваш драма театрĕ çумĕнчи актерсен студине вĕренме чĕнекен пĕлтерӳ курсан аслă курсри Игнатий Молодов, паян-ыран агроном пулмалласкер, нумай шухăшласа тăмасăрах Шупашкара тухса вĕçтерет. Экзаменсене ăнăçлă тытса вĕренме кĕрет. Студире ăна тӳрех асăрхаççĕ, вĕренме кĕрсен виçĕ уйăхранах театрта пыракан спектакльсене хутшăнтараççĕ.

1929 çулта пухнă студие талантлă, театр искусствине чун-чĕререн юратакан чăваш каччисемпе хĕрĕсем пуçтарăннă. Кунта Игнатий Молодовпа пĕрле пулас паллă режиссер Константин Иванов, паллă артист Борис Алексеев тата ыттисем вĕреннĕ. Шăп вĕсен ĕнтĕ çирĕммĕш ĕмĕрти çирĕммĕш йывăр çулсенче театрăн чака пуçланă чапне çĕнĕрен çĕклемелле пулнă. Çамрăксене студирен вĕрентсе кăларнă хыççăн театр хăвачĕ хăвăрт ӳсме пуçлать. Шăпах çав çулсенче коллектив театр историне ĕмĕрлĕхех асра юлнă спектакльсем лартнă. Вĕсен хушшинче – В. Катаевăн «Квадратура круга», В. Киршонăн «Чудесный сплав», Н. Погодинăн «Аристократы» тата «После бала», Н. Корнейчукăн «Платон Кречет», И. Кошкинскин «Çĕр çĕкленет» тата «Сатурпа Илем». Тĕнче классикĕсен: Ф. Шиллерăн «Коварство и любовь», М. Горькин «Васса Железнова» пьесисем кĕнĕ. Игнатий Молодов кашни спектакльте тенĕ пекех вылянă. Вылянă çеç мар, тĕп рольсене хутшăннă вăл: Кременский, Гоша Филиппов, Берест, Президент, Лыняев ролĕсем. Игнатий Молодов пултарулăх енчен хăвăрт ӳснĕ. Вăл социалла геройсене выляс тĕлĕшпе пысăк ăста пулса тăнă: Серго Орджонокидзе, Иван Шадрин, Фрунзе, Шульга, Чакка, Пинарин ролĕсем. Игнатий Осипович 1931 çулта çамрăксемпе пысăках мар концерт бригади йĕркелесе республика тăрăх тухса каять. Сценкăсемпе концерт номерĕсем, такмаксемпе çивĕч сăмахсем, кашни ялтах кăларакан стена хаçачĕсемпе боевой листоксем вĕсен хăватлă хĕç-пăшалĕ пулнă.

Игнатий Молодова актер пулса çирĕпленме Евгений Токмаков, Константин Иванов, Леонид Родионов режиссерсем пысăк пулăшу кӳнĕ. Паллах, актер килĕштернĕ драматурги те пулăшнă. Уйрăмăнах классика уншăн пысăк ăсталăх шкулĕ пулса тăнă. Игнатий Молодов пултарулăхĕ театр историне вăл вылянă Отелло тата Восьмибратов, Несчастливцев тата Бессеменов, Кнуров тата Ляпкин-Тяпкин сăнарĕсемпе те кĕнĕ. Унсăр пуçне чăвашла пьесăсем тăрăх спектальсенче те чаплă сăнарсем тунă вăл. Çакăнта ĕнтĕ тăван халăх пурнăçне пĕлни, унăн кăмăл-туйăмне, сĕткенне туйса тăни уççăнах куράннă. Вăл вылянă Ванюкпа Çтаппана, Айтарпа Тăхтамана, Улайпа Эрхипе, Иван Яковлевич Яковлева тата ытти рольсене куракансем нихăçан та манмĕç.

Анчах актер сцена çинче вылянипе çеç çырлахмасть. Вăл тăван театр тата колхоз театрĕсен сценисем çинче, радиора хĕрĕхе яхăн спектакль лартнă, вунна яхăн пьесăсемпе инсценировкăсем çырнă. Вĕсенчен С. Элкерĕн «Асран кайми кунсем», Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕсенчен йĕркеленĕ инсценировкăсене, «Телей» пьесине пирĕн театр сцени çинче лартнă. Игнатий Молодов куçару ĕçне те тунă, общество ĕçĕнче те хастар пулнă. Ăна тăван çĕршывăн орденĕсемпе, медалĕсемпе наградăланă, «Чăваш АССР халăх артисчĕ» ятне панă. Игнатий Осипович Молодов пек çынсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.

**Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх артисчĕ - Геннадий Терентьев**

*(Геннадий Терентьев «Чуна уçса калаçни», Шупашкар, 2004)*

**НАРСПИ**

4 пайлă, 9 картинăллă драма

Драмăри çынсем: Нарспи
Сетнер
Сетнер амăшĕ
Михетер
Михетер карчăкĕ
Тăхтаман
Сентти
Туй пуçĕ
Шăпăрçă
Хăна
Пĕр çын
Пулăç
Тарçăсем тата туй халăхĕ

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

### Пĕрремĕш картина

*Каçхи вăхăт. Ешере пуçланă çўллĕ сăрт тайламĕнче ларакан Силпи ялĕ. Ял çумĕпе юхса выртакан çырма шывĕ сулахая, сцена умнелле тухать. Сцена вăта çĕрнерех кĕперĕн пĕр вĕçĕ курăнать. Вата çын пулă тытса ларать. Çырма хĕррипе ял хушшинче те вата йăмрасем, хурăнсем, чăрăшсем ўсеççĕ. Чаршав уçăлсан кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетни, кĕтў ачи шăхлич калани тата аякран çамрăксен вăйă юрри илтĕнет.*

ПУЛĂÇ. Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.
Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать,
Вата йăмра тайăлса
Тĕсне пăхса савăнать.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
Ырă шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен
Лайăх юрри янăрать.
Кайăк юрри, çын сасси
Ян-ян ярать таврана,
Çуркуннехи хавас юрă
Килсе кĕрет хăлхана.
Аслă калăм эрнинче
Мĕнле чăваш ĕçмен-ши?!
Тарăн нўхреп ăшĕнче
Мĕн чухлĕ сăра пĕтмен-ши?!

*Хăнапа пĕр çын юрлани илтĕнет.*

ХĂНА. Вăхăчĕпе ĕçлĕпĕр,
Вăхăчĕпе ĕçĕпĕр…
Килте ĕçме пулмасан,
Кўршĕ патне кĕрĕпĕр. *(Кĕреççĕ.)*
Кўршĕн ĕçме пулмасан,
Уйранне те ĕçĕпĕр.
Уйранĕ те пулмасан,
Турă парасса кĕтĕпĕр…
Тавси, хăта!

ПУЛĂÇ. Тавах, тав.

*Вăйă юрри хытăрах илтĕнет.*

ПĔР ÇЫН. Çавăрăнса пăх халĕ:
Акăшсем пек утаççĕ,
Чăнкăр-чăнкăр тенкисем
Йăлтăртатса пыраççĕ.

ХĂНА. Михетерĕн Нарспине
Çитекенни çук теççĕ…
Ытла каçа юлсассăн,
Çитеймĕн те, сывă пул.
Хушăлкана пырсассăн
Хам патăмра хăна пул.

ПĔР ÇЫН. Эпир унта пырăпăр…

ПУЛĂÇ. Турă пӳрсен, сывă пулсан,
Кăмăлăра татмăпăр!

ХĂНА. Турă пӳрет, тур парать,
Михетер ав хĕр парать.
Хĕр çураçнă, таталнă –
Урăм-сурăм туй пулать… *(Каять.)*

ПУЛĂÇ. Паллаймарăм, ăçтисем
Пулчĕ вара ку хăна?

ПĔР ÇЫН. Хушăлка таврашĕсем,
Туртăм тивет кăшт кăна:
Те анне енчен тăван?.. *(Каять.)*

ПУЛĂÇ. Аван, аван, пит аван…
Апла эппин Михетер
Качча парать-ха хĕрне?..
Каллех кунта чупаççĕ.
Эх, ку ачи-пăчине!
Ак, эп сире вĕлтренпе…
Пулли тарчĕ пулмалла, –
Йĕкĕлтеççĕ кунĕпе…
Тьфу, мур пулли, выçă пыр,
Каллех татнă ăмана…
Каяс пулĕ… Кăштах пур.

*Юрă çывхарать.*

Çитет-ха ку яшкана. *(Каять.)*

*Сцена хыçĕнче: «Нарспи, тар! Сетнер, пӳлсе ил!» – тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ. Çамрăксем «мăшăрла» выляççĕ. Сцена çине пĕр каччă чупса кĕрет. Вăл Нарспие тытасшăн, Сетнер чупса тухать те качча тытса ун тавра çаврăнать. Çав вăхăтра Нарспи сцена умне, йывăç тĕмĕ хыçне чупса пырать. Сетнер Нарспие пырса тытать.*

2-мĕш КАЧЧĂ. Курăр халĕ вĕсене…

1-мĕш КАЧЧĂ. Питĕ чее-мĕн Нарспи!

1-мĕш ХĔР. Шывпа сапса пĕр-пĕрне
Уйăраймăн. Çапла-и?

*Темиçе мăшăр умлăн-хыçлăн тухаççĕ. Хыçалти мăшăрсем хурал тавра çаврăнса пĕрлешме чупаççĕ. Çамрăксем шавласа тухса каяççĕ.*

НАРСПИ. Ăшă пулчĕ, ан тыт-ха…

СЕТНЕР. Халĕ лекрĕн, ямастăп.

НАРСПИ. Тутăра кăшт майлам-ха.
Ан хăра, халь тармастăп…

СЕТНЕР. Ывăнтăн пуль, ан васка…

НАРСПИ. Питĕ хытă чупрăмăр.

СЕТНЕР. Кăшт ларар-ха, ак каска… *(Лараççĕ.)*

НАРСПИ. Тинех пĕрле пултăмăр…

СЕТНЕР. Çакăн пекех пĕрлешни

Пурнăçра та пуласчĕ…
НАРСПИ. Кам-ши вăл сан пуласси?
Манăн ятне пĕлесчĕ…
СЕТНЕР. Унăн хитре сăн-пичĕ
Хĕвел пекех çутатать.
Нарспи, Нарспи ун ячĕ, –
Ман пуласси çав пулать.
*(Нарспие ыталать, кулаççĕ.)*
Пĕррехинче пĕр-пĕрне
Çăл патĕнче тĕл пулсан…
Калас тенĕ ĕмĕте
Калаймарăм эп, айван…
НАРСПИ. Тăтăн вара итлесе
Саркайăксен юррине…
СЕТНЕР. Шăнкăртатса витрене
Валакран шыв юхнине…
Эс пĕр кайăк куртăн та
Куç илмерĕн ун çинчен…
НАРСПИ. Эс шухăша путрăн та
Тем шутларăн ман çинчен.
СЕТНЕР. Çав вăхăтрах пăхатпăр –
Шыв шавласа тăкăнать.
НАРСПИ. Иксĕмĕр те кулатпăр…
Хамăрăн пит-куç çунать! *(Кулаççĕ.)*
Халĕ те ав, илтетне,
Епле чĕвĕлтетеççĕ… *(Çӳлелле пăхать.)*
СЕТНЕР. Чунăм, вĕсем, пĕлетне,
Сана савса юрлаççĕ… *(Нарспие чуптăвать.)*
Халь тармарăн ак манран…
Ун чух çавах ĕлкĕртĕм
Тем кăшкăрма сан хыçран…
Астăватна, мĕн терĕм?
НАРСПИ. Астăватăп, Сетнерĕм… –
«Кайăк пекех пăр-р туса
Вĕçсе кайрĕ сарă хĕр…
Çак вăхăтра кил татах,
Каллех пĕрле итлĕпĕр
Саркайăксен юррине!» –
Терĕн эсĕ ун чухне.

*Нарспи сиксе тăрать те чупать. Сетнер ăна хăваласа каять. Шавласа кĕрекен çамрăксем вĕсене асăрхаççĕ.*

3-мĕш ХĔР. *(Нарспипе Сетнер кайнă еннелле пăхса юрлать.)*
Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет.
1-мĕш КАЧЧĂ *(юрлакана пӳлсе, ытти каччăсене).*
Мĕнех чечек ӳснинче?
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет…
ПĔР ÇЫН. Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччă чĕри çĕкленет,
Çӳхе тути кулнă чух
Каччăн чунĕ çемçелет.
3-мĕш ХĔР. Санăн чуну çемçелни
Мĕне кирлĕ Нарспие?
Кампа кайрĕ, куртăн-и? –
Ма пăхтăр вăл сан çине?..

1-мĕш КАЧЧĂ.	Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?
2-мĕн ХĔР.	Ытла ырă, тантăшсем,
Вăйăсенче каçхине.
Сисместĕн те вăхăтсем
Епле иртсе кайнине.
ПĔР ÇЫН.	Нарспи те ав сисмерĕ
Часах арăм пуласса…
Лешĕ, кĕлмĕç, Сетнерĕ,
Юлтарах халь шăхăрса…
Тăхтаманĕ, Тăхтаман
Евчĕ янă ав паян…
Эп пĕлетĕп вăл çынна, –
Çак таврара пĕр пуян…

*Хĕрсем вăйă кĕвви калаççĕ. Нарспипе Сетнер кĕреççĕ. Нарспи вăйă ушкăнне хутшăнать.*

СЕТНЕР.	Яшсем, атьăр-ха пĕрре
Карталанса вăй калар.
1-мĕш КАЧЧĂ.	Хитре сарă хĕрсене
Хамăр куçран пăхтарар.

*Çамрăксем вăйă картине тăраççĕ. Икĕ хĕр аяккине тăрса юлаççĕ.*

2-мĕш ХĔР.	Нарспи туйĕ хăçан-ши?
Тен, пĕлетĕн, кала-ха,
Каччи мĕнле ялтан-ши?
1-мĕш ХĔР.	Сетнер юлчĕ хурлăха…
ПĔР ÇЫН.	Çимĕк эрни çитсессĕн,
Вĕсен туйĕ пуçланать.
1-мĕш ХĔР.	Çав телейсĕр Нарспишĕн
Хамăн чун та хурланать.
3-мĕш ХĔР.	Çинçе хăçан çитĕ-ши,
Епле вăхăт ирттерес?
Çимĕк кунĕ инçе-ши,
Епле унчченех тӳсес?

*Вăйă картине хутшăнаççĕ.*

Тантăш качча каять-çке, каять-çке, –
Тӳрри пăшăрханать-çке.
Вăй каламан хĕрсемшĕн, хĕрсемшĕн
Чунăм вăчăлтатать-çке.
Пилеш йывăç ту çинче, ту çинче, –
Мĕлки Самар шыв çинче.
Ман выляса куласси, куласси
Çырла пиçнĕ кунсенче.

*Çамрăксем хушшинче пĕр ача шăхличпе ташă кĕвви калать.*

1-мĕш КАЧЧĂ.	Эй, ачасем, ташлар-и?
2-мĕш КАЧЧĂ.	Кил-ха, иккĕн пуçлăпăр…
1-мĕш КАЧЧĂ.	Вăй калама чарар-и?!
Хĕрсемпеле ташлăпăр.

*Ташă пуçлаççĕ.*

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ КАРТИНА

*Çимĕк эрни. Ирхине. Сцена çинче валашка вĕçĕ курăнать. Ун тăрăх пысăк валашка çине шыв юхса выртать. Аяккарах ял тата ем-ешĕл йывăççем курăнаççĕ. Кĕтӳ хăвалани илтĕнет. Кăшт тăрсан лаша ури сасси çывхарать. Сетнер кĕрет те шăхăрса лашине шыв ĕçтерет.*

СЕТНЕР. Нарспи килмен… Ир антăм…
Унччен кĕтем çакăнтах.
*(Лашине.)* Шывне ĕçсе тăрантăн,
Ĕнтĕ курăк çи кăштах.

*Тухать, унтан каялла кĕрет. Çăл шывĕпе çăвăнать.*

Ав вăл икĕ витрипе
Шăлтăр-шăлтăр килет-çке,
Савни, сана курнипе
Чĕре сиксе тапать-çке.

НАРСПИ. Каçарсамччĕ, ан çилен,
Кăшт кĕттертĕм пулĕ те… *(Чĕрçиттипе питне хуплать.)*

СЕТНЕР. Ĕмĕр-ĕмĕр кĕтĕттĕм
Эпĕ сана çак тĕлте.
Нарспи, чунăм, каласам,
Темĕн ырă мар пулас?

НАРСПИ. Эй, Сетнерĕм, пулăшсам,
Чунăм çунать, мĕн тăвас?
Хĕвел ансан, каç пулсан,
Паян туя лартаççĕ,
Хушăлкари пуянпа
Манăн туя пуçлаççĕ.

СЕТНЕР. Çаплах вара, Нарспиçĕм,
Çук-шим манăн ăраскал?
Çаплах сана ют çĕре
Илсе кайĕ-шим усал?

НАРСПИ. Атте-анне ухмах çав,
Мĕн каласа кăнтарас?
Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас?

СЕТНЕР. Ах, телейĕм çук-тăр çав,
Аçу-аннӳ пит пуян!
Хăйсен пуянлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук çынран…

НАРСПИ. Сана тем пек юратса,
Савса эпĕ пурăнтăм.
Анчах çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм.

СЕТНЕР. Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур.
Вĕсенчен те хаклăрах,
Чунăм савни, эсĕ пур,
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур.
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур.

НАРСПИ. Тăшман ытла хаяр тет,
Епле унтан хăтăлас?

Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта каяс, мĕн тăвас?
Çамрăк пуçпах хур курма
Ӳснĕ-мĕн эп тĕнчере…
Хамăр тĕллĕн пурăнма
Ирĕк çук-мĕн çав пире…

СЕТНЕР. Хăвăн кăмăлу пулсан
Лашам çине лартăттăм,
Аяккаллах ку ялтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм.

НАРСПИ. Кирек мĕнле пулсан та,
Пирĕн пĕрле пулмалла.

СЕТНЕР. Хĕн-хур урлă пулсан та,
Пурнăç пĕрле тумалла.

НАРСПИ. Килĕшетĕп, Сетнерĕм…
Хĕр ĕмĕрне ăсатма
Тантăшсемпе kaçхине
Тухăп вăйă калама…

СЕТНЕР. Кантăрварăн пуçĕнче
Пире кĕтĕ урхамах…
Тăван Силпи ялĕнчен
Пирĕн кĕçĕр тармаллах.

НАРСПИ. Санпа тĕнче хĕррине
Кайма хатĕр эп, Сетнер.
Каплах пулсан, ыррине
Камран ĕнтĕ халь кĕтер?
Тăшман кулли пуличчен,
Савни, санпа таратăп…
Пуçăм сая кайиччен
Санпа пĕрле пулатăп.

СЕТНЕР. Çитес çĕре çитĕпĕр
Кăвак çутă киличчен.
Таçта тарса ӳкĕпĕр
Усал куçсем куриччен!
Сыв пул, Нарспи, чипер юл…

НАРСПИ. Сывă пулах, сывă пул!

*Сетнер каять. Нарспи Сетнер кайнине вăрахчен пăхса тăрать. Лаша ури сассисем илтĕнми пулаççĕ. Нарспи валакран шыв тултарать.*

Çак мăшкăлтан хăтăлас,
Шанчăк йăлтах Сетнерте.
Тараймасан, мĕн тăвас?
Вут çунать-çке чĕремре… *(Нарспи шыв ăсса каять.)*

ЧАРШАВ.

## ВИÇÇĔМĔШ КАРТИНА

*Чаршав умĕнчен Михетер карчăкĕ иртсе каять. Йывăç витрепе сăра йăтнă, тепĕр аллинче йывăç кашăк.*

КАРЧĂК. Ырă тантăш-тăвансем!
Пире хисеп тумăр-ши?
Хĕре качча паратпăр,
Тури касса утмăр-ши?

*Пулăçăпа пĕр старике сăра ĕçтерсе хăварать.*

ПУЛĂÇ. Пырăпăрах, пырăпăр,
Пымасăрах юлмăпăр!

*Пулăç иртсе каять. Карчăк сасси сцена хыçĕнчен илтĕнет.*

КАРЧĂК. Ырă тантăш-тăвансем,
Тури касса уттарар!
Перекетлĕ сăрана
Ĕçе-ĕçе туй лартар!

*Чаршав уçăлать. Михетер килкартийĕ. Пӳрт умĕнче Михетер чĕлĕм туртса ларать. Сцена умĕнче, сылтăм енче, хура пӳрте кĕмелли алăк. Ун хыçĕнче шурă пӳртрен килкартине картлашка тухать. Пӳрт умĕ урам енчи пусма патне илсе тухать. Сулахай енче кĕлет. Пӳртпе кĕлет хушшинче хапха. Вăл уçă. Хапха леш енче – Силпи ялĕ. Пӳртрен Нарспи амăшĕ вăрçни илтĕнет. Нарспи шурă пӳртрен тухать те хура пӳрте кĕрсе каять.*

КАРЧĂК *(кĕлете тухать.)*
Ха, эс! Вăл çаплах ларать
Хăй чĕлĕмне паккаса.
Хатĕрлен туй халăхне
Кĕтсе илме чысласа!
Нарспи, Нарспи, хавăртрах,
Тумлан кĕрсе кĕлете!

*Тарçăсем кĕрсе хура пӳрт еннелле каяççĕ.*

Харам пырсем, час пулăр,
Васкамастăр пĕрре те!

1-мĕш ТАРÇĂ. Карчăк çынна хăртмасăр
Пĕр сăмах та калас çук…

2-мĕш ТАРÇĂ. Выçă вилсен ыйтмасăр
Татăк çăкăр парас çук…
Хура пӳрте кĕрер-ха
Нарспи тухса кайиччен,
Яланах вăл çитерет
Çын кăмăлĕ туличчен…

МИХЕТЕР. Ӳссе çитрĕ, пулчĕ хĕр –
Пуян упăшка кирлĕ,
Упăшкине тупрăмăр –
Пире тата мĕн кирлĕ.
Юлашки хут хĕрĕмшĕн
Тар юхтарса ĕçлерĕм, –
Туй кӳмине пĕр-пĕччен
Ирех тăрса сиплерĕм.
Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм
Çак тарана çитерме,
Ĕнтĕ паян юлашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.
*(Тарçисене.)* Часрах пулăр, тарçăсем,
Мантăрам мĕн хушнине?

1-мĕш ТАРÇĂ. Хырăм выçă…

МИХЕТЕР. Вăл тарам…
Тикĕтлĕр туй кӳмине.

1-мĕш ТАРÇĂ. Эп паçăрах…

МИХЕТЕР. Ан павра!
Кайăр часрах ĕçлеме!

*Тарçăсем каяççĕ.*

Кускалăр-ха ман тавра,
Вĕрентĕп эп итлеме.

*Карчăк тата ик-виç арăм ĕçме-çиме йăтса кĕлетрен тухаççĕ те пӳрте кĕрсе каяççĕ.*

КАРЧĂК. Тумлан, Нарспи, часрах пул…

*Нарспи хура пӳртрен тухса амăшне тем каласшăн пулать, анчах амăшĕ пӳрте кĕрсе каять. Карчăк часрах каялла тухса Михетер патне пырать.*

Нарспи çаплах тумланман…
Тата миçе хушмалла?

*Нарспи вĕсем патне пырать.*

Каччă чаплă, Тăхтаман, –
Савăнăçлă пулмалла.

НАРСПИ. Атте-анне, анваскăр,
Тата пĕр çул тăрăр-ха,
Пĕртен-пĕрех хĕрĕре
Тата пĕр çул усрăр-ха.

КАРЧĂК. Хуп çăварна, намăссăр,
Ватта юлас тетĕн-им?
Е сан, çынна култарса,
Ятна ярас килет-им?

НАРСПИ. Эй, аттеçĕм-аннеçĕм,
Мĕншĕн мана сутатăр?
Мĕншĕн савнă хĕрĕре
Тĕнче кулли тăватăр?

КАРЧĂК. Чарăн! Илтнĕ тахçанах
Мĕншĕн турткалашнине.
Ăнланăн-ха ак хăвах
Хĕр чух ухмах пулнине…
Атте-анне ирĕкне
Пурсăмăр та пăхăннă, –
Куçпа курман çыннине
Качча панă – пурăннă…

МИХЕТЕР. Пули-пулми ĕмĕтне
Сирсе ярах пуçăнтан.
Аçу-аннӳ тивлетне
Асту, ан ман çак кунтан.

*Нарспи тантăшĕсем кĕреççĕ.*

КАРЧĂК. Кĕрĕр, хĕрсем, час килĕр,
Пулăшсамăр Нарспие.
Тумлантарăр, ӳкĕтлĕр –
Сирсе ятăр хуйхине.

*Нарспипе хĕрçумĕсем кĕлете кĕреççĕ.*

Кайса кала, йăмăкăм,
Сăра ăсчăр тăвансем.

МИХЕТЕР. Асту, лайăх хăналăр, –
Савăнччăр туй çыннисем!

1-мĕш ХĔР. Юрĕ, пичче, калăпăр.
Туй халăхне чыслама
Пыл сăрине йăтăпăр, –
Çăмăл пултăр ташлама!..

*Михетер тăванĕсем кĕреççĕ. Михетер вĕсене пӳрте ăсатать.*

МИХЕТЕР. Атьăр, иртĕр, тăвансем,
Туя туй пек тумалла.
Юрлăр, ташлăр, савăнăр
Ял тĕлĕнсе тăмалла!

*Пуса каччисемпе хĕрсем ушкăнăн-ушкăнăн кĕреççĕ. Шăпăрçă хура пӳртрен тухса пӳрте кĕрет.*

ТУЙ АРĂМĔ. Ял пуянĕ хĕр парать,
Пире унта йыхăрать.
Хăйĕн савнă хĕрĕшĕн
Урăм-сурăм туй пуçлать.

МИХЕТЕР ТĂВАНĔ. Туйне-çуйне пуçличчен
Авал чăваш йăлипе

Ваттисене асăнса

Тăкар çăкăр-тăварне.

*Карчăк пуçламан çăкăр йăтса тухать. Туй арăмĕ сăра витри йăтнă. Михетерпе карчăкĕ тулли сăра куркипе.*

МИХЕТЕР. Ват аттесем, аннесем,
Ырă курăр çăтмахра,
Пирĕн çăкăр-тăварсем
Пулччăр сирĕн умăрта.
Пирĕн савнă Нарспие
Парăр ырă пурăнăç,
Парăр унăн телейне
Ырăлăхпа савăнăç!

*Сăрине кăштах çĕре тăкаççĕ те ĕçеççĕ. Хĕрçумĕсем тумлантарнă Нарспипе пĕрле кĕлетрен тухаççĕ. Шăпăрçă хĕр йĕрри кĕввине калать. Ватăраххисем Михетерпе пĕрле пӳрт умне хăпараççĕ. Нарспи хĕр йĕрри юрлать.*

НАРСПИ. Эй, турăçăм, пӳлĕхçĕм,
Чунăм вутра çунать-çке.
Тăван атте-аннеçĕм
Çичĕ юта парать-çке.
Ача чухне хĕрĕре
Юрататпăр теттĕрччĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă –
Ăна пурте хатĕрччĕ.

*Урамран Сетнер курăнать. Нарспи ăна асăрхать. Михетер хăнисене пӳрте илсе кĕрет.*

ХĔРÇУМĔСЕМ. Ватă чун та хытă чун –
Хытса кайнă кĕççĕ çав.
Çамрăк чун та пĕчĕк чун –
Чунĕ ытла çемçе çав.

*Туй курма килнĕ çамрăксем кĕреççĕ.*

НАРСПИ. Эй, Сетнерĕм, мĕскĕн чун,
Епле сана манăп-ши?
Санпа пĕрле пулмасан,
Епле ютра пулăп-ши?

ХĔРÇУМĔСЕМ. Кайăк чунĕ пулсассăн
Йĕрĕччĕ те кулĕччĕ,
Çуначĕсем пулсассăн
Вĕçĕччĕ те кайĕччĕ. *(Нарспие пӳрте илсе кĕреççĕ.)*

1-мĕш КАЧЧĂ. Хамăр ялтан – Силпирен
Çав киремет, Тăхтаман,
Пĕртен-пĕрех сар хĕре
Илсе каять ак паян.

2-мĕш КАЧЧĂ. Сарă хĕрсем халиччен
Качча кайман ют яла.

1-мĕш КАЧЧĂ. Пирĕн ял ку таранччен
Курман кун пек мăшкăла.

СЕТНЕР. Килĕшетĕп сирĕнпе,
Анчах халĕ мĕн тăвар?

1-мĕш КАЧЧĂ. Сетнер, тусăм, Нарспие
Мăшкăла эс ан хăвар…
Нарспи саншăн макăрать,
Тарăр кунтан май килсен…

3-мĕш КАЧЧĂ. Сана çеç вăл юратать,
Пулăшăпăр хĕн килсен.

1-мĕш КАЧЧĂ. Пуянсенчен хăраса
Ан мĕскĕнлен, ан кулян.

2-мĕш КАЧЧĂ. Пĕлсе тăрсам, чухăнсем, –
Пурте эпир сан тăван…
3-мĕш КАЧЧĂ. Култарас мар çавсене
Хамăртан, эй, çамрăксем!
СЕТНЕР. Пĕр шутласан, çав тери
Тарăхмалла, тантăшсем:
Çамрăк чĕре туйăмне,
Çыннăн чысне, тивĕçне
Хăй таптарĕ, хăй хĕрне –
Мăшкăлларĕ мĕскĕне…
ПĔР ÇЫН. Кĕлмĕç, качча илес пек
Нарспи пуçне çавăртăн…
Ак халь, акă, эс пире
Ют ял кулли тутартăн!..
СЕТНЕР. Ют ялсем мар, пуянсем –
Сан хуçусем кулаççĕ!
!-мĕш КАЧЧĂ. Пăрахсам, Сетнер, ан чĕнсем…
Вăл та çавсен йыттиех.
ПĔР ÇЫН. Эп Тăхтаман патĕнчен
Тухса кайнă пуçĕпех.
1-мĕш КАЧЧĂ. Нимĕнех те тăваймăн
Эс чăркăшса çӳресе.
2-мĕш КАЧЧĂ. Çӳлтен çăлтăр тытаймăн
Куштансемпе тус тесе.
1-мĕш ХĔР. Атьăр, хĕрсем, ушкăнпа
Вăйă таппине каяр!
2-мĕш КАЧЧĂ. Астăвăр, эсир вара
Ан хăварăр Нирспие.
3-мĕш КАЧЧĂ. Юлашки каç савăнар,
Итлесе ун сассине.

*Хĕрсем пӳрте кĕреççĕ. Михетер тăванĕсемпе пусма çине тухать.*

МИХЕТЕР. Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пӳрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак çук-и хĕремĕн?
Çӳрет-и вăл тенкĕсĕр?

*Хĕрçумĕсем Нарспипе пӳртрен тухса вăййа каяççĕ.*

Силпи ялĕ ĕмĕрне
Ун пек хĕрсем курас çук!
Пĕр чăваш та хăй хĕрне
Михетер пек пăхас çук!
Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-ши çуртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-шим мĕн çӳпçемре?
Тырă-пулă туллиех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?
Юрлăр-ташлăр, тăвансем,
Туя туй пек тумалла!
МИХЕТЕР ТĂВАНĔ. Акă туй та çакă туй,
Пирĕн туйсем çаплалла!

*Пӳрте кĕреççĕ. Çамрăксем Сетнерпе темĕн канашласа тухса каяççĕ.*

СЕТНЕР. Нарспи халь кĕтет мана, –
Иккĕленме сăлтав çук.

Кĕҫĕр тарса каймасан,
Пире кунта пурнăҫ ҫук. *(Каять.)*

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

### Тăваттăмĕш картина

*Ҫав вырăнтах. Ирхине. Михетер тарҫисем хура пӳртрен сăра пички кустарса тухаҫҫĕ. Халăх туй курма пухăнать. Пулăҫпа пĕр старик кĕреҫҫĕ. Хул хушшине йĕпе милĕксем хĕстернĕ.*

ПУЛĂҪ. Шăпăр сасси илтĕнмест,
Шăпăрҫи те курăнмасть.
Ырă хăна хушшинче
Эрех-сăра тăкăнмасть.

*Пулăҫпа старик пӳрт умне ларaҫҫĕ.*

СТАРИК. Мунча ăшши шерпет пек.
ПУЛĂҪ. Анчах сĕрĕм пур кăштах.
СТАРИК. Хĕрарăмсем кайиччен
Сĕрĕм пĕтет ак йăлтах.
Ҫав каткари кĕл шывĕ
Ҫитĕ-ши ку вĕсене?
ПУЛĂҪ. Ман пуҫ ҫинче ҫӳҫ шĕвĕ –
Тĕкĕнмерĕм кĕл шывне.
2-мĕш ХĔРАРĂМ. Хăй йĕркипе ташлама
Вăхăт пуса каччисен.
ПУЛĂҪ. Хăй йĕркипе юрлама
Вăхăт ҫитнĕ хĕрҫумсен.
1-мĕш ХĔРАРĂМ. Стариккипе карчăкки
Хура пӳртре вăрҫаҫҫĕ.
Мĕн пулнă-ши ҫав тĕрлех,
Пурте шăппăн ларaҫҫĕ?
2-мĕш ХĔРАРĂМ. Шăппăн-шăппăн лармасăр:
Вĕсен хĕрĕ ҫук паян,
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнă вăйăран…
1-мĕш ХĔР. Ялти хĕрсем, каччăсем
Вăййа тухнă вылямa,
Тухнă пирĕн Нарспи те
Хĕр ĕмĕрне ăсатма.
2-мĕш ХĔР. Анчах чунĕ ҫуннине
Кирек кам та сисмелле.
Вăйă калас вырăнне
Макăрчĕ ҫеҫ темелле.
2-мĕш КАЧЧĂ. Эх, эсĕ те, тăванăм,
Кайăн мана пăрахса…
Мулшăн тесен каятăр
Эсреле те «юратса». *(Кулаҫҫĕ.)*
1-мĕш ХĔР. Вăйă ҫынни салансан
Шăппăн вĕсем калаҫрĕҫ,
Ыталаса пĕр-пĕрне
Тĕттĕм ҫĕрте ҫухалчĕҫ.
2-мĕш АРҪЫН. Икĕ пуса каччийĕ,
Шăпăрҫă та вĕсемпе
Тĕттĕм ҫĕрле вăрмана
Вĕҫтерчĕҫĕ утсемпе.
Эх, чупаҫҫĕ йыттисем

Çумăр витĕр хашлатса.
Вĕçтереççĕ çыннисем
Пĕрне-пĕри васкатса.

2-мĕш ХĔР. Çиçĕм пĕрмай çиçнипе
Вăрман ăшĕ çуталать.
Сетнерпеле Нарспине
Тупрĕç те пуль, хăямат.

МИХЕТЕР *(хапхаран кĕрекен тарçисене).*
Илтĕнмест пуль нимĕн те?
Тупаймĕçех-ши вара?

1-мĕш ТАРÇĂ. Çĕр тĕпĕнчен пулин те
Сан йыттусем…

МИХЕТЕР. Ан павра!

*Тарçăсем каяççĕ. Карчăк хура пӳртрен чĕрçиттипе витсе темĕн илсе каять.*

КАРЧĂК. Михетер, эс ан кулян.
Шăпăрçăпа йытăсем
Часах тупĕç вĕсене…
Ан пĕлччĕрех хăтасем…

МИХЕТЕР. Килĕç акă тăвансем,
Пуçтарăнĕç тантăшсем…
Хĕрĕн намăс ĕç çинчен
Пĕлĕç пĕтĕм ялйышсем!

КАРЧĂК. Хăямата вĕсене!
Ялйыш хăвăн аллунта,
Хупла халăх çăварне!..

МИХЕТЕР. Чарăнасчĕ хăвăн та…

*Михетерпе карчăкĕ ятлаçса пӳрте кĕреççĕ. Халăх туй курма пуçтарăнать. Сцена хыçĕнчен шавлани илтĕнет. Нарспие çавăтса кĕреççĕ. Михетерпе карчăкĕ пӳртрен тухаççĕ. Нарспие амăшĕ çӳçрен ярса илет.*

КАРЧĂК. Ы-ы, йыт ами, чупкăн хĕр,
Кампа тарма шутларăн?..
Пĕтĕм халăх умĕнче
Çак намăса кăтартрăн…

НАРСПИ. Эй, аннеçĕм, аннеçĕм,
Мана çӳçрен ан сĕтĕр,
Мана апла вĕрентсе,
Манран ырă ан кĕтĕр.

КАРЧĂК *(туй арăмĕсене).*
Питне-куçне çăвăр та
Улăштарăр ун тумне.
Пĕркенчĕкпе хуплăр та
Пуçлăр часрах хĕр туйне.

*Нарспие хура пӳрте илсе кĕреççĕ. Шăпăрçăпа пуса каччисем тилхепепе çыхнă Сетнере çавăтса кĕреççĕ. Халăх пуçтарăнать.*

ШĂПĂРÇĂ. Авлантарар-ха пĕрре
Çак киремет ачине…

ПУСА КАЧЧИ. Ан вăрлатăр çын хĕрне,
Шутлар аяк пĕрчине!

ПУЛĂÇ *(ял çамрăкĕсене).* Пулăшăр-ха, ачамсем,
Сетнер пире ют çын мар…
Хăрушлăхра, тăвансем,
Пулăшмасан аван мар.

МИХЕТЕР. Кĕлмĕç, эсрел çăпати!
Михетере хур тума?!
Пĕт çакăнтах, мур ачи!
Манăн хĕре вăрлама?! *(Сетнере çапасшăн.)*

1-мĕш КАЧЧĂ. Ма хĕнетĕр? Чарăнăр!
Мĕскер тунă вăл сире?
Мăшкăллама памăпăр
Ним айăпсăр Сетнере!

ПУСА КАЧЧИ. Мĕне пăхса тăратăр?
Ислетĕр ун шăммине!

МИХЕТЕР. Хĕр вырăнне туянтăр
Михетерĕн чышкине.

*Михетер Сетнере çапма тăрать, 2-мĕш каччă чарать.*

2-мĕш КАЧЧĂ. Сетнер пуçне çиеймĕн,
Выçă кашкăр!.. Ан хăмсар!
Эсĕ ăна çĕнеймĕн –
Ял çынни вăл, пĕччен мар!..

ПУЛĂÇ. Пĕрне-пĕри савнăшăн
Айăплама пăхаççĕ!

САСĂСЕМ. Салтса ярас аллине,
Ытла мăшкăл тăваççĕ!..

*Çамрăксем пуса каччисемпе шăпăрçа Сетнер патĕнчен сирсе яраççĕ те Сетнер аллисене салтаççĕ.*

ПУЛĂÇ. Ку мăшкăлтан тармаллах…
Тĕрĕс тунă çамрăксем…

2-мĕш КАЧЧĂ. Сетнер пире халиччен
Усал туман, ялйышсем.

СЕТНЕР. Эй, Михетер асатте,
Хĕненипе усси çук.
Эсĕ мана хĕнесе
Кĕлрен вутă тăвас çук.

МИХЕТЕР. Сан пек çапкаланчăка
Тĕп тусан та çылăх мар!
Кĕртĕр ăна тип мунча…
Ун пек çынран тасалар!

1-мĕш ПУСА КАЧЧИ. Вĕлерсен те çылăх мар
Михетерĕн тăшманне!

2-мĕш ПУСА КАЧЧИ. Туй мыскари кăтартар
Пĕрре шуйттан Сетнерне!

*Сетнер патнелле пыраççĕ. Халăх хушшинче шав пуçланать. Михетер пӳртне кĕрет. Ун хыççăн пуса каччисем, туй арăмĕсем те кĕреççĕ.*

1-мĕш КАЧЧĂ *(Сетнере).* Мĕн тăвас тен вĕсене,
Çавсен ирĕк тĕнчере…

2-мĕш КАЧЧĂ. Пит аван-ха, мăшкăлран
Хăтартăмăр Сетнере.

*Тухса каяççĕ. Арçын туйĕ çывхарни илтĕнет.*

1-мĕш ПУСА КАЧЧИ. Ялăн тепĕр вĕçĕнчен
Пĕлĕт пек тусан тухать!

ШĂПĂРÇĂ. Михетере калам-ха, –
*(Алăкран кăшкăрать.)* Арçын туйĕ çывхарать!

МИХЕТЕР *(тухать).* Пӳлĕх, хăрпан, çут тĕнче
Мана савса тăраççĕ:
Кăвак хуппи, çут хĕвел
Мана тупăш параççĕ!
Ырă тантăш-тăвансем,
Шурă пӳрте пухăнар!
Перекетле сăрана
Ĕçе-ĕçе туй лартар!

1-мĕш ТĂВАНĔ. Çăкăр-тăварпа тухар, –
Арçын туйне чыс тăвар…

МИХЕТЕР. Анчах хальхи ĕç çинчен
Çĕн кĕрĕве калас мар.

*Пӳрте кĕреççĕ. Килкартинче халăх хĕвĕшет. Тарçăсем чупкалаççĕ. Арçын туйĕ килсе çитет. «Хушалкаран çитрĕçĕ», «Ăçта-ши çĕн кĕрĕвĕр» тата ытти те шав хушшинчен илтĕнет.*

ПĔР ÇЫН. Акă туй та çакă туй,
Пысăк туй та пăсăк туй!
Тăхтамана хĕр çинчен
Систересчĕ май килсен…

*Михетерпе карчăкĕ çăкăр-тăварпа тухаççĕ.*

ТУЙ ПУÇĔ. Пурнаççĕ-и? Кĕтеççĕ-и?
Пире хапăл тăваççĕ-и?
Кĕтсе хапăл тумасан –
Каялла та кайăпăр,
Хапăл туса кĕтсессĕн –
Малалла та иртĕпĕр!

МИХЕТЕР. Хапха уçса тăратпăр,
Кĕтсе хапăл тăватпăр.

ТУЙ ПУÇĔ *(туй курма килнĕ халăха).*
Силпи ялĕ – пуян ял,
Ларать вăрман ăшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йăмрасем айĕнче.
Ялĕ тавра укăлча,
Кив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча.
Çуртсем тавра килкарти
Чул хӳме пек çавăрнă.
Сарă хапха килсерен
Чĕнтĕрленĕ тăрăллă.

*(Михетере).* Тури касри пĕр кил-çурт
Йăмра урлă курăнать.
Çак хула пек кил-çуртра
Кин пуласси пурăнать.
Ырă хăта, Михетер,
Хăйĕн хĕрне юратса
Хушăлкари пуяна
Качча парать çураçса…
Хăта çурчĕ хула пек,
Кĕрсен, витĕр тухма çук.
Хуралтисен тăррине
Чăх-чĕп вĕçсе çитес çук.
Картиш тулли япала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.
Урхамах пек лашисем
Утă-сĕлĕ çиеççĕ:
Унăн выльăх-чĕрлĕхсем
Пичĕке пек çӳреççĕ.
Пирĕн хăта туй валли
Выльăх-чĕрлĕх пустарнă,
Çу, сĕт-турăх, сăра-пыл
Нӳхреп тулли тултарнă.
Ырă хăта-тăхлачă,
Тулчĕ-и сирĕн кăмăлăр?

МИХЕТЕР. Тавах ырӑ сӑмахшӑн,
Савса кӗтсе тӑтӑмӑр.

ТУЙ ПУҪӖ. Пирӗн хӑта ҫак туя
Тантӑшсене йыхӑрать…
Урам енчи хапхаран
Ҫын кӗрет те ҫын тухать.
Иртрӗ аслӑ ҫӑварни,
Иртсе кайрӗ пӗр ӗмӗр;
Кине илсе каймашкӑн
Урхамахсем кӳлтӗмӗр.
Хӑта патне килессе
Аран кӗтсе илтӗмӗр.
Туй халӑхпа кӗрлесе
Хӑта килне ҫитрӗмӗр.
Пирӗн каччӑ, Тӑхтаман,
Ыйтнипелен килтӗмӗр.
Ырӑ хӑта, Михетер,
Кӗтнипелен ҫитрӗмӗр.
Эй, хӑтаҫӑм, Михетер,
Тулчӗ-и сирӗн кӑмӑлӑр?
Тулманнине тултарӑр,
Ҫитменнине ҫитерӗр.

МИХЕТЕР. Тавах сана, туй пуҫӗ…
Ӗҫтер, карчӑк, пыл-сӑра.

ТУЙ ПУҪӖ. Хӑтасене чысласа
Юрӑ юрлар пӗр ҫавра…

*Туй халӑхӗ юрласа пӳрте кӗрет. Хӗрҫумӗсем Нарспие илсе кӗреҫҫӗ. Вӑл пӗркенчӗкпе.*

НАРСПИ. Эй, аттеҫӗм-аннеҫӗм,
Мӗншӗн ҫирӗр хӗр пуҫне?
Мӗншӗн патӑр хӗрӗре
Ҫичӗ ютӑн аллине?

*Чаршав хупӑнать те уҫӑлать. Ҫав вырӑнтах. Пуса каччисем туй арӑмӗсемпе ташлаҫҫӗ. Карчӑк хӑнисене сӑйлать.*

КАРЧӐК. Ӗҫер, ҫиер, хӑтасем,
Ӗмӗр пӗрле пурӑнар!

МИХЕТЕР. Хӗрпе качча юратса,
Айтӑр, шепрех туй тӑвар!

ТУЙ АРӐМӖ. Туй турӑмӑр виҫӗ кун, –
Ӗнтӗ чыса пӗлмелле.
Хушӑлка туй халӑхӗн
Кайма вӑхӑт килелле.

ХУШӐЛКАСЕМ. Вӑхӑтӗнче тухсассӑн
Каҫчен киле ҫитӗпӗр.

1-мӗш ТУЙ АРӐМӖ. Хушӑлкана ҫитсессӗн
Тепӗр кана сикӗпӗр.

ТУЙ ПУҪӖ. Хушӑлкана туй ҫитсен,
Каҫпа хӗве хупмалла…
Ыран ирех тӑмалла, –
Хӗртен арӑм тумалла…
Каяс умӗн, хӑтаҫӑм,
Тӑвар хамӑр ӗҫсене, –
Авалхисен йӑлипе
Пиллер кӗҫӗн ҫынсене…

ТУЙ ЮРРИ. Ӗҫетпӗр-ҫке паян, ай, ҫиетпӗр,
Ӗҫетпӗр-ҫке паян, ҫиетпӗр, -

Киле тухса кайма пĕлместпĕр,
Киле тухса кайма пĕлместпĕр.
Хăтăш патĕнчен хăтăш, ай, тухаймасть,
Хăтăш патĕнчен хăтăш тухаймасть, –
Ĕçкĕ-çикисене ытарса,
Хăта чун-кăмăлне ытарса.

*Пӳртрен кĕçĕн çынсене илсе тухаççĕ.*

ТУЙ ПУÇĔ. Чарăнăр-ха юрлама!
Пил парасшăн ваттисем…

МИХЕТЕР *(арăмне).* Хĕрне ан ман калама
Витĕмлĕрех сăмахсем.

*Михетерпе арăмĕ сăра куркисем тытаççĕ. Вĕсен умне Тăхтаманпа Нарспи чĕркуçленсе лараççĕ.*

МИХЕТЕР. Эй, кĕрӳçĕм, Тăхтаман,
Сана ӳпкев çук пиртен.
Урăх тата мĕн калам…
Тату пулăр виличчен…

КАРЧĂК. Нарспи, хĕрĕм, пил сана!..
Упăшкуна ан пăрах,
Аван пурăн унпала, –
Тату пулăр яланах…

*Нарспи макăрать.*

Итле ăна, йăваш пул,
Усал çынпа ан çыхлан…
Ĕçне ĕçле, ĕçчен пул,
Кирлĕ марпа ан хăтлан!..

ТУЙ ПУÇĔ. Иккĕн выртса виççĕн тăччăр,
Ача-пăчаллă пулччăр.

ТУЙ АРĂМĔ. Ырă-тату пурăнччăр,
Усал сăмах ан илччĕр.

*Пиллесе пĕтерсен сăрине ĕçеççĕ те Тăхтаманпа Нарспие тултарса параççĕ. Куркисем ăшне укçасем яраççĕ. Тăхтаман ĕçет те, укçине илсе, куркине карчăка парать. Нарспи аллинчен курки тухса ӳкет. Амăшĕн ури умне ӳксе хытă йĕрсе ярать. Ăна амăшĕ йăтса тăратать.*

ЮРЛАÇÇĔ. Атьăр кăна, атьăр, ай, каймалла,
Атьăр кăна, атьăр, каймалла.
Хушăлка вăрманне çитмелле,
Хушăлка вăрманне çитмелле.

ПĔР ÇЫН *(Сетнере тăрăхласа).* Чун савнине ăсатма
Эппин килтĕн-килтĕнех?
Анчах тарма вăрмана
Май килмест пуль çав текех?

*Сетнер чĕнмест. Вăл Нарспи юрланине итлет.*

1-мĕш КАРЧĂК. Ытла вĕçсе ан çӳре…
Камран кулма шутларăн?
Паян ĕçки, туй тесе
Хăв камне те манатăн?

*Пĕр çын пăрăнса каять.*

НАРСПИ. Эй, каччăçăм, Тăхтаман,
Манпа ырă курас çук.
Эпĕ, чунăм пĕтсен те,
Санпа пĕрле пулас çук!..

ХĔРÇУМĔСЕМ. Эсĕ юта кайсассăн
Мĕн тăвĕ-ши Сетнерӳ?
Ырă Нарспи, аппаçăм,
Ăçта санăн телейӳ?

ТУЙ ПУÇĔ. Хушăлка туй халăхĕ,
Киле кайма тапранăр!
Сăран кӳме патнелле
Çĕнĕ кине çавăтăр!

*Нарспие хĕрçумĕсем çавăтса тухса каяççĕ. Ун хыçĕнчен пурте тухаççĕ. Юрлаççĕ.*

ПĔР ÇЫН. Михетерĕ Тăхтаман
Çумĕнчен те хăпмарĕ…
Чее-мĕн мур, ват шуйттан, –
Туй мыскари пулмарĕ…

*Тăхтамана вăрттăн сăхман аркинчен туртать те пусма çине ларса аттине хывса тăхăнать.*

Шеллес килет хуçана,
Мыскараллă хăтланчĕç, –
Хушăлкари пуяна
Пăсăк тавар тыттарчĕç.

ТĂХТАМАН. Эс мĕн шăлна йĕретĕн?
Час маннă-çке эп камне!

ПĔР ÇЫН. Тӳрех чĕрре кĕретĕн –
Малтан пĕл-ха сăлтавне…
Тĕнче кулли, ял кулли
Пулса каян, Тăхтаман.

ТĂХТАМАН. Хуллентерех, йытпулли,
Кала, мĕскер пытаран?

ПĔР ÇЫН. Килеççĕ ав, пулмарĕ…
Тепĕр чух, хăв патăнта… *(Каять.)*

ТĂХТАМАН. Эсремет, тем палкарĕ…

ХĂНА. Ăçта тетĕп, – вăл кунта!..
Кукалеççĕ ыр утсем, –
Тăрасшăн мар, васкаççĕ!

*Михетерпе карчăкĕ кĕреççĕ.*

Сывă пулăр, хăтасем…

КАРЧĂК. Çул куркисĕр каймаççĕ… *(Ĕçтерет.)*

МИХЕТЕР. Турă сире пулăштăр
Кĕрӳ килне çитерме…

КАРЧĂК. Ырлăх-сывлăх сунатпăр
Арçын туйне ирттерме.

ЮРЛАÇÇĔ. Хушăлка вăрманне, ай, çитсессĕн,
Хушăлка вăрманне çитсессĕн,
Ларса та пĕр канаш тумалла,
Ларса та пĕр канаш тумалла.
Ларса та пĕр канаш, ай, тусассăн,
Каçчен Хушăлкана çитмелле. *(Каяççĕ.)*

СЕТНЕР. Тĕттĕм пулĕ, каç пулĕ
Тăшман патне çитиччен.
Тăшман чĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиччен.
Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Эпĕ пулăп вăрманта.
Тăшман, выртăн, хускалмăн,
Нарспи пулмĕ çумунта… *(Каять.)*

ЧАРШАВ.

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ

### Пиллĕкмĕш картина

*Тăхтаман килĕнче. Шурă пӳрт. Шурă кăмака. Алăк патĕнче тата тĕпелте урлă саксем. Пĕрин çинче пуçтарса хунă вырăн. Кĕтесре сĕтел-пукансем. Хуран айĕнче вут çунать.*

НАРСПИ. Çӳçентерет чунăма –
Пĕр сасă та илтĕнмест.
Çакă пӳртре пурăнма
Пĕртте кăмăл çĕкленмест.
Тавăрас çук каялла…
Иртсе кайрĕ савăнăç.
Кайрĕ пĕрпек тăсăлса
Кунран кунах пурăнăç.
Ирех хырăм тăрантса
Тухса кайрĕ Тăхтаман. *(Кантăкран пăхать.)*
Каллех утне тарлатса
Килет авă, çĕр çăтман.
Килтен каять-и тухса, –
Патак çиес пулать ман.
Киле килет-и урса, –
Çаплах хĕнет Тăхтаман.

*Урапа сасси.*

ТĂХТАМАН *(тулта кăшкăрать).*
Кама мĕн ĕç арăмпа
Эпĕ мĕнле пурăнни?
Аван теççĕ пулмалла
Çын хăлхине йĕпхĕртни…
Хам арăмпа хам хуçа!
Хĕнес тесен, хĕнетĕп…
Мĕн сăлтавĕ иккенне
Эпĕ хамах пĕлетĕп. *(Кĕрет.)*
Часрах антар яшкана,
Пиçрĕ пулĕ халиччен?!
Хире парса ямалла
Вăхăт иртсе кайиччен.
Çула тăрăх лаптăка
Паян акса пĕтерччĕр.
Хĕвел анса лариччен
Пĕр канмасăр ĕçлеччĕр.

*Нарспи йывăç чĕрес çине хурантан апат антарать.*

Тарçăсемшĕн яшкана
Тулли ан яр чĕресе.
Ахалех ĕç вăхăтне
Сая ярĕç пехлесе…

НАРСПИ. Ярсам мана Силпине,
Нумайлăха каймастăп.
Ларса кайма çул çине
Эпĕ лаша ыйтмастăп…

ТĂХТАМАН. Асту, Нарспи, йĕвенӳ
Ман алăра малашне.
Час маннă-çке ваттисем
Мĕн пиллесе янине…
Каçхи апат тумалла,
Яшка ларт-ха антарса.
Кăштах вăрт-варт пулкала,
Çӳрет ĕнтĕ хăмсарса…

*Нарспи чĕрес йăтса тухать.*

ТĂХТАМАН. *(Алă шăлать. Кулса.)*
Нумайăшĕн çĕр кăçал

Хытта юлать пулмалла…
Лашасăрсем пĕр çур ял, –
Актарасшăн çурмалла.
Акса парас, кĕркунне
Хăйсем вырса парсассăн.
Пуйма пулĕ çĕрпелен
Лайăх усă курсассăн…

*ПĔР ÇЫН кĕрет.*

ПĔР ÇЫН. Килме пултăм – çул тытрăм,
Кĕрсе курас пуль терĕм.

ТĂХТАМАН. Хам та канăç курмарăм –
Эс килессе пит кĕтрĕм.
Час килмерĕн…

ПĔР ÇЫН. Ĕç пулчĕ.

ТĂХТАМАН. Кам патĕнче ĕçлетĕн?

ПĔР ÇЫН. Хамăр ялтах, çын çинче…

ТĂХТАМАН. Çапкаланса çӳретĕн?

ПĔР ÇЫН. Ĕçлесен те укçине
Пĕрер пусăн çеç парать…

ТĂХТАМАН. Сан пек паттăр çынсене
Ĕç суйлама кам чарать?
Ыран тесен ыранах
Кил ак каллех хам пата.
Ĕçре эсĕ яланах
Пит маттурччĕ, тупата…

ПĔР ÇЫН. Пысăк хисеп тунăшăн
Тавах сана, Тăхтаман.
Ĕмĕр ĕçлĕп хуçашăн –
Сан ырлăхна эп манман.
Халĕ те ак пулăшма
Тесе кĕтĕм эп сана.
Ĕçĕ вăрттăн, мĕн тума
Систерес мар хуçана?..

*Нарспи кĕрет. Пĕр çынна курсан ун патне пырать те алă парать.*

НАРСПИ. Çӳреççĕ-и?..

ПĔР ÇЫН. Çӳретпĕр…

ТĂХТАМАН. Мĕн тăратăн, çын килнĕ,
Кăштах сăра ăсса кĕр.

*Нарспи витре илсе тухса каять.*

ПĔР ÇЫН. Эсĕ хăв та илтне тен…
Чим-ха, Нарспи ан систĕр. *(Алăкран пăхать.)*
Туятăн пуль мĕн ĕçне?
Нарспи сана пăхăнмасть…
Савнă каччи пур чухне
Пурпĕр санпа пурăнмасть.

ТĂХТАМАН. Кала часрах, кам-ха вăл, –
Пуян йăхран-и вара?
Кала ĕнтĕ, çил-тăвăл
Хускалать ман ăшăмра…

ПĔР ÇЫН. Калама та хăратăп,
Темĕн туса пăрахăн.
Сан çиллӳне куратăп, –
Эс типшар та кăтартăн.

ТĂХТАМАН. Астăватăп, кун çинчен
Сас-хура кăшт çӳрерĕ…
Çак тарана çитиччен

Ёненессём килмерĕ…
Ав мĕншĕн вăл Силпине
Каясшăн халь çунтарать?
Чун йăпатма савнине
Курасшăн-çке кастарать?..
Куççăр мар эп, куратăп
Нарспи мĕн шут тытнине.
Чĕрепеле туятăп
Сан сăмахсем чăннине.
Хама хирĕçленĕшĕн
Тĕрлĕ асап кăтартрăм.
Куллен кунах туй хыççăн
Саламатпа çунтартăм.

*Нарспи сăра ăсса кĕрсе сĕтел çине лартать. Куркасем илсе парать.*

ТĂХТАМАН *(сăра тултарать, Нарспие.)*

Тур лашана тăварччăр,
Тухса кала çавсене.
Сĕлĕ паччăр, шăварччăр…
Ме ак кĕлет уççине.

*Уçă илсе Нарспи тухса каять.*

ПĔР ÇЫН. Çамрăк арăм туянтăн,
Анчах канăçна мантăн.
Канлĕ пурăнас тесен
Укçуна çеç ан хĕрхен.
Укçа-тенкĕ чул касать –
Çапла халăх сăмахĕ.

ТĂХТАМАН. Куншăн укçа хĕрхенсен
Пулăп тĕнче ухмахĕ. *(Укçа кăларса парать.)*
Эпĕ часрах пĕлесшĕн:
Кам мана терт кӳрекен?

ПĔР ÇЫН. Тултар-ха, пыр йĕпетем.
Ёссен, вăй-хал кĕрекен. *(Укçа шутласа.)*
Ял вĕçĕнче Тукасра
Пĕчĕкçеççĕ пӳрт ларать…
Амăшĕпе çав пӳртре
Сетнер ача пурăнать.
Çав хăямат Сетнерĕн
Пĕр урхамах лаши пур,
Унсăр пуçне, эсрелĕн,
Улăпăн пек вăйĕ пур.
Хăв пĕлетĕн, ку ĕçре
Эпĕ пĕччен пулмастăп;
Çавăнпа та эп кунта
Вĕсен пайне курмастăп.

ТĂХТАМАН. Эккей, ил мĕн панине…

ПĔР ÇЫН. Ирĕксĕр мар, мана мĕн…
Эс тавăрăн телейне –
Ăна ахаль тупма хĕн.

*Тăхтаман укçа хушса парать те пĕр курка хыççăн тепĕрне тултарса ĕçет.*

ПĔР ÇЫН *(укçа шутланă май).*

Çавă Сетнер Нарспипе
Вăйă хыççăн, каçхине,
Çын курасран сыхланса
Тарса кайнă вăрмана
Урхамахне утланса.
Анчах пуса каччисем

Çĕрĕпеле йĕрлесе
Арçын туйĕ çитиччен
Тупса килчĕç сĕтĕрсе…

ТĂХТАМАН. Мĕншĕн туйра тĕл пулсан
Каламарăн кун çинчен?!
Ух, Михетер, çĕр çăтман,
Манмăп сана виличчен…
Ĕçне тусан ĕçтерĕп,
Хушса парăп çийĕнчен.

ПĔР ÇЫН. Ĕç çинчен час систерĕп…
Эппин, тепре куриччен.

*Пĕр çын тухса каять. Тăхтаман ăна ăсатма тухать. Тултан Нарспие сĕтĕрсе кĕрсе пăрахать. Алăка хупать.*

ТĂХТАМАН. Аçу-аннŭ пилленĕ
Упăшкупа пурăнан,
Çав хушăрах, пĕтменĕ,
Сетнерŭшĕн хурланан?
Эсĕ апла хĕр иккен?!
Эсĕ апла Сетнерпе
Тарнă-мĕн-ха вăрмана
Туйна тунă çĕртенех! *(Саламат илсе хĕнет.)*
Килне каяс шухăшна
Эпĕ часах мантарăп.
Сăнчăрласа сăнчăрпа
Йыт вырăнне кăкарăп!

*Саламатне пăрахса урăх япала шырать, анчах нимĕн тупса переймесĕр хăвăрт тухса каять. Нарспи çĕрте выртса юлать.*

НАРСПИ. Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар Нарспинне.
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!

*Кĕвенте çине утланса Сентти чупса кĕрет. Кĕвентине хулăпа çапать те тпру, тпру тесе сиксе чупать. Пĕр вырăнта çаврăнса, мй! тесе тапать.*

СЕНТТИ. Тпру, тпру, инке, ăçта эс?
Мĕншĕн пĕртте чĕнместĕн?
Лаши мĕнле, – пăх-ха эс,
Мĕншĕн маттур теместĕн?

*Мй! Мй! тесе урипе инкĕшне тапать. Нарспи йĕнине асăрхать.*

Ан йĕр, инкем, ан йĕрсем.
Тутăрупа шăл куçна.
Ан хуйхăрсам, инкеçĕм,
Хăваласам хуйхуна.

*Нарспи нимĕн те чĕнмест. Сентти аптранипе хуллен чакать, унтан чĕрне вĕççĕн чупса тухать. Сасси тултан илтĕнет.*

НАРСПИ. Çавтер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе выляма
Кайăк чунĕ янă çав.
Ăна курсан, çавăнтах
Аса илеп иртнине…
Пŭрт умĕнче кун хутах
Çерем çинче чупнине.
Вĕçсе анчах кайăттăм, –
Пулăттăмччĕ Силпире.
Аякран çеç курăттăм
Хамăн савнă Сетнере.

Мĕншĕн мана савнинчен
Çаплах ятăр уйăрса?
Мĕншĕн кунта киличчен
Çимерĕм-ши хам пуçа?
Çук, пуçăма çийиччен
Тăшманăма пĕтерем,
Асапланса тӳсиччен
Тăхтамана вĕлерем.
Анчах вăйăм çитĕ-ши?!
Епле кунтан çăлăнас?
Эй, пӳлĕхçĕм, пулăшсам!
Чунăм çунать, мĕн тăвас?
Эй, çут тĕнче, каçарсам,
Ан айăпла эс мана!
Теветкелпе вăй парсам
Пĕтермешкĕн тăшмана. *(Наркăмăш илет те хурана ярать.)*
Пĕтсен пĕтем, пĕт, тăшман, –
Пурăнăçăм ырах мар.
Наркăмăшăм эс паян
Хăвăн ĕçне туса пар!..

*Урамран урапа сасси илтĕнет, унтан хапха чĕриклетет. Тăхтаман тулта кăшкăрать.*

ТĂХТАМАН. Часрах, тулă çăнăхне
Çӳл кĕлете хăпартăр!
Йăтăр пысăк миххине,
Мĕскер пăхса тăратăр!

НАРСПИ. Кĕрех, кĕр, ман чунилли…
Мĕнле-ха вăй çитерес?
Хăратмĕ-ши ун вилли, –
Епле чăтса ирттерес?

*Яшка антарса сĕтел çине лартать.*

Çиех, çиех, Тăхтаман,
Наркăмăшлă яшкана.
Ĕнтĕ эсĕ малашне
Упăшка мар арăмна.

ТĂХТАМАН *(кĕрет.)* Ак, ку мана килĕшет,
Яшка та сĕтел çинче…
Ман арăма ăс кĕме
Пуçланă çак кунсенче.

*Турра асăнса апат çиме ларать.*

Эй, турăçăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар!

*Çиет. Нарспи тухса каять.*

Хуран тĕпĕ яшкара
Пĕр çăлтăр та курăнмасть…
Те хырăм пит выçнăран
Тăранассăн туйăнмасть…
Нарспи, ларса çи манпа, –
*(Алăкран.)* Ăçта тухса çӳретĕн?
Эпĕ усал, анчах та
Ма апата тиркетĕн?

*Нарспи кĕмест. Тăхтаман сĕтел хушшине ларать.*

Вăхăтĕнче авланма
Пархатарăм пулмарĕ:
Сăн-питĕме тиркесе
Нимĕнле хĕр пымарĕ.
Мул хăватне ĕненсе

Ялан пуйма тăрăшрăм.
Укçара телей тесе
Çак таранччен мул пухрăм.
Пуяс килчĕ ытларах, –
Ватăлнине сисмерĕм.
Илес килчĕ çамрăках, –
Ăна-кăна пĕлмерĕм.

*Нарспи кĕлет уççи кĕртсе парать.*

Яшка тутлă-çке паян…
Ăçта çӳрен пăрăнса?!
Мĕншĕн тухса каятăн?
Яшка тутлă, çи ларса!..

НАРСПИ. Çийĕп-çке-ха кайран та,
Пит çиессĕмех килмест. *(Каять.)*

ТĂХТАМАН. Эрне выçă ларсан та
Хĕрарăм вăл выç вилмест. *(Шыв ĕçет.)*
Тăраннине пĕлмерĕм,
Ăшăм çунать çавтерех.
Яшка хыççăн шыв ĕçрĕм,
Туйăнчĕ эрех пекех.
Усал этем хаярĕ
Вăрăнчĕ-ши ку капла?
Ак, мĕн амак хупларĕ?..
Вилес марччĕ ухмахла…
Пăсса пачĕ пулмалла…
Ытла ăша çунтарать.
Чăнах, пĕтрĕм-ши çаплах?..
Ак, халь пуçăм çаврăнать. *(Саламат илет.)*
Нарспи, часрах кĕр пӳрте!
Ыйхă килет, вырăн сар!

*Нарспи кĕрсе вырăн сарать.*

Манăн пуçа çирĕн те…

*Нарспие ярса тытать.*

Çу-ук, эп çавах вăйсăр мар!..
Эс халь манăн алăра!..

*Нарспи вĕçерĕнет.*

Ых, сана, чуниллине…
Хăвăн чунна тамăкра
Парăп эсрел аллине!..

*Вырăн çине тăсăлса ӳкет те вилет.*

НАРСПИ. Пĕтрĕ… Ытла та тискер!..
Ай, аннеçĕм, хăтарсам!
Мĕн тăвас-ха ман, мĕскер?!
Турăçăм, ан пăрахсам… *(Хуллен тухса каять.)*

ЧАРШАВ.

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

### Улттăмĕш картина

*Çĕрле. Çил ӳлет, вăрман кашлать. Сцена çине Сетнер тухать.*

СЕТНЕР. Силпире те этемсем
Нарспи Тăхтаман теççĕ.
Вĕсем ватă Тăхтаман
Хаяррине пĕлеççĕ. *(Юрлать.)*
Ах, ман хуйхăм, итле-ха,
Мĕншĕн мана çунтаран?

Мĕншĕн мана, тăлăха,
Савăнăçа мантаран?

*Сцена урлă йăванса выртакан мăкланнă йывăç çине ларать.*

Хушăлкари чăвашсем
Çывăраççă харлатса.
Анкартинчи тăмана
Анчах вĕçет ухлатса.
Нарспи, мĕскĕн, тӳсеймен
Тăхтаманăн пусмăрне.
Эп пырасса вăл кĕтмен –
Хăй таварнă тăшманне…

*Васкаса тухса каять. Нарспи чупса кĕрет. Çил тапранать.*

НАРСПИ. Ах, турăçăм, мĕн-ши ку?..
Те ман куçа курăнчĕ?
Манăн хыçран темле çын
Чупнă пекех туйăнчĕ… *(Йывăç айне кукленсе ларать.)*
Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăрать,
Арман чулĕ айĕнче
Мĕскĕн чĕре çурăлать.

*Сцена умĕнчен тухса каять те хыçал енчен çаврăнса тухать. Вăрман кĕрлет, çиçĕм çиçет, аслати авăтать, йывăç турачĕсем авăнаççĕ.*

Çул çухатрăм пулмалла,
Урасем те путаççĕ…
Армак-чармак йывăççсем
Çула пӳлсе тăраççĕ.

*Аçа çапать. Нарспи каялла кайма тăрать.*

Анчах мĕн ку, тур çырлах,
Йывăç мар, ах! Тăхтаман?!
Вилсен куçа курăнса
Хăратаймăн, çук, тăшман!
Асап тӳсрĕм эп санран…
Мăшкăл анчах çак тĕнче.
Кай, Тăхтаман, мĕн тăран?!
Пĕт, çун тамăк тĕпĕнче!..

ВĂРМАН САССИ. Тыт арамна, Тăхтаман!
Тарать усал арăму!

НАРСПИ. Ах, вăтăр та пĕр шуйттан!

*Аçа çапать, Нарспи питне хуплать.*

САСĂ. У-у, у-у, у-у, у-у-у!

НАРСПИ. Эй, турăçăм, хăтарсам
Çылăхлă ман пуçăма…
Тăхтамана ан парсам
Манăн çамрăк чунăма.

*Вăрман кĕрлет. Нарспи урлă выртакан йывăç çине ӳкет, унтан хуллен пĕлĕт çине пăхать.*

Ах, çылăхлă пуçăма
Ăçта чиксе хурам-ши?
Ах, çылăхлă чунăма
Епле тытса чарам-ши?..

*Нарспи чупса тухса каять. Тепĕр енчен Сетнер тухать.*

СЕТНЕР *(юрлать.)* Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн чуна хăрататăн?

*Инçетрен Нарспи сасси илтĕнет. Сетнер итлет.*

НАРСПИ. Хура вăрман, сĕм вăрман,

Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Савни пекех юрласа
Вилнĕ чуна вăрататăн?

СЕТНЕР. Турăçăм, мĕн илтетĕп,
Тĕлĕк мар-ши ку капла?
Çук, çук, вăл мар, пĕлетĕп:
Шухăш пирки вăл çапла. *(Юрлать.)*
Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Мана чăнне кала-ха.
Мĕскĕн чуна шеллесе
Чун савнине кăтарт-ха…

*Нарспи кай енчен сцена умнелле тухать.*

СЕТНЕР *(çаврăнса пăхать).* Анчах утать кунталла,
Ман паталла хĕрарăм;
Ырă турă, çырлахсам!
Нарспи, Нарспи, эсĕ-им?!

*Нарспипе Сетнер пĕр-пĕрин патне чупса пыраççĕ.*

ЧАРШАВ.

## ÇИЧЧĔМĔШ КАРТИНА

*Сетнер патĕнче: лутра алăк, лутра сĕтел, хура пӳрт кăмаки. Алăк патĕнче сарлака сак. Чаршав уçăлсан, Сетнер сăхманне хывса Нарспи çине уртса ярать те ыталаса чăмăртать.*

СЕТНЕР. Эсĕ тискер çумăрлă
Аслатирен хăранă…
Тĕттĕм çĕрте, вăрманта,
Тăхтаман та курăннă…
Лăплан, чунăм, ан чĕтре…
Пире пĕрле нихçан та
Кичем пулмĕ тĕнчере.

НАРСПИ. Пулса иртнĕ çак ĕçшĕн
Эпĕ, айван хĕрарăм,
Эсĕ манран сивĕнсе
Пăрахасран хăрарăм…

СЕТНЕР АМĂШĔ *(кĕрет те Нарспие пырса ыталать).*
Хĕпĕртесех халь илтрĕм
Нарспи кунта килнине.
Сетнер, ачам, тупрăнах
Эппин хăвăн телейне?!

*Сĕтел çине çăкăр хурать.*

СЕТНЕР. Халь эс маншăн, Нарспиçĕм,
Нихçанхинчен хаклăрах.

СЕТНЕР АМĂШĔ. Ĕмĕр çапла, ачамсем,
Телей пĕрле пултăрах.
Сетнер, кас-ха çăкăрне,
Кӳрше кайса килем-ха…
Пĕтермен-ши турăхне?
Эпĕ халех, – пур пуль-ха…

НАРСПИ. Çитĕччĕ мĕн пуррипе,
Чăрмантарас мар çынна.

СЕТНЕР АМĂШĔ. Хĕрĕм, эпир кӳршĕпе
Ялан пĕрле хутшăннă. *(Каять.)*

СЕТНЕР. Эпир, Нарспи, ача чух
Пурнăç çинчен шутламан.
Пĕр-пĕринпе тĕл пулсан, –

Унтан ырри ним пулман…
НАРСПИ. Эп хăш чухне хам çĕрре
Сан аллунта курсассăн, –
Мĕнччĕ-ши ман чĕрере,
Эс ăнланас пулсассăн?
Маншăн пĕтĕм çут тĕнче
Çăтмах пекех курăнчĕ.
Çынсем пурте пĕр-пĕрне
Юратнă пек туйăнчĕ.
СЕТНЕР. Тинех эпир, ак, пĕрле,
Эх, Нарспи, ку тĕлĕк мар…
Мĕншĕн халĕ пĕр-пĕрне
Пирĕн чунтан савас мар?.. *(Нарспие ыталать.)*
НАРСПИ. Чим-ха, Сетнер, ах, чунăм,
Питĕ йывăр чĕрере.
Аннӳ пĕлсен ман çинчен,
Мĕскер калĕ вăл пире?
СЕТНЕР. Пирĕн телей аннешĕн
Темĕнрен те хаклăрах.
Эсĕ халĕ пирĕншĕн
Хĕвелтен те пахарах.

*Сетнер амăшĕ турăх илсе кĕрет.*

СЕТНЕР АМĂШĔ. Тен, эпир те малашне
Çын ĕретне кĕрĕпĕр? –
Сывлăх пулсан, тур пӳрсен,
Ырлăхне те пĕлĕпĕр.
Килĕр-ха, ак, çисемĕр,
Çын çимесĕр пурнаймасть.
Çиес килни, атьсемĕр,
Нихçан куçа курăнмасть.

*Сĕтел хушшине лараççĕ. Нарспи çимест.*

СЕТНЕР. Тĕрĕс, анне! Нарспи, çи…
Çийĕпĕр те канăпăр.
Ыран сывлăм шывĕпе
Утă çулма кайăпăр.
НАРСПИ. Пурнăç çинчен шутласан
Сиксех тухать ман чĕре.
Сетнер, айăп пысăк ман,
Пурнăç памĕç çав пире.
СЕТНЕР АМĂШĔ. Нарспи, санăн канмалла.
Лăплан, ним те пулаймĕ.
СЕТНЕР. Пире пĕрле курăнма
Халь никам та чараймĕ.

*Михетерпе карчăкĕ килсе кĕреççĕ.*

КАРЧĂК. Пирĕн Нарспи ку пӳртре
Çук-ши тесе килтĕмĕр.
Ялти ырă çынсенчен
Кунта тесе илтрĕмĕр.
МИХЕТЕР. Эх, хĕр, хĕ-ĕр… Хĕр-и эс?
Нарспи, мĕскер хăтлантăн?
Епле çынсен умĕнче
Çак намăса кăтартрăн?
КАРЧĂК. Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!

МИХЕТЕР. Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм,
Хĕр кăмăлне татмарăм.
Савнă хĕршĕн пуянлăх
Кунĕн-çĕрĕн пуçтартăм.
Епле качча парăп-ши
Тесе ялан шутларăм.
Хĕр телейшĕн тăрăшса
Пуян каччă шырарăм.

КАРЧĂК. Шеллеместĕн аннӳне,
Ах, çĕр çăтман пуçуна!
Камăн хĕрĕ пултăн-ши,
Кам ӳстерчĕ-ши сана?

МИХЕТЕР. Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пӳртрен.
Тепĕр каччă тупăпăр
Яту çĕрсе кайиччен.

НАРСПИ. Эй, аттеçĕм, пурнăç мар.
Савман каччă килĕнче…
Пуянлăхра анчах мар
Ыр курасси – çынсенче…

КАРЧĂК. Е-е, усал, ытлашши
Ан кар ĕнтĕ çăварна.
Аннӳн ăшне çунтаран,
Турран килешшĕ пуçна!

МИХЕТЕР. Атя, Нарспи, ан хуйхăр,
Санăн аçу пур вĕт-ха.
Яту пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха.

НАРСПИ. Арăм пулнă пуçăмпа
Киле пырса тăрăп-и?
Савман качча кайсассăн,
Татах асап чăтăп-и?
Çук-çук, атте, ан та чĕн,
Халь тин киле пыраймăп.
Çапла пулса пĕтсен тин
Каччă кĕтсе лараймăп.
Эсир мана ӳстертĕр,
Ача чухне юратрăр,
Анчах ӳссе çитрĕм те,
Хĕрĕр чунне курмарăр.
Эсир хăвăр хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те укçашăн
Сутса ярса пĕтертĕр.
Эпĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, эпĕ мар.
Сетнер кĕрӳ пулмасан,
Эпĕ сирĕн хĕрĕр мар.

КАРЧĂК. Ав-ав, хĕрӳ мĕн калать, –
Сетнер, шуйттан, илĕртнĕ,
И-и, Михетер, каяр-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ!

МИХЕТЕР. Ы-ых, Сетнер, астăвăн:
Манăн хĕре эс çирĕн!
Эсĕ çавтер усал хĕр,
Хура пӳртрех тип эппин!

КАРЧĂК. Пĕтĕр, пĕтĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

*Каяççĕ.*

СЕТНЕР АМĂШĔ. Э-хе-хех, ку пуянсем!
Çын весемшĕн ним те мар.
Шалтах кайăн тĕлĕнсе, –
Хăй ачи те тăван мар…

НАРСПИ. Хуть те мĕнле ылханччăр,
Анне, маншăн ан шиклен.
Эпĕ халĕ ăнлантăм:
Чăнлăх вăйлăрах иккен. *(Сетнере ыталать.)*

СЕТНЕР. Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

ЧАРШАВ.

## САККĂРМĔШ КАРТИНА

*Чаршав уçăличчен Михетер карчăкĕ кăшкăрни илтĕнет. Михетерĕн килкарти хапхи уçă. Пӳрт алакĕ тата кĕлет алакĕсем те уçă. Сцена çинче тĕттĕм. Хапхаран ПĔР ÇЫН чупса кĕрет. Хура пӳрте пырса пăхать.*

ПĔР ÇЫН. Лешсем мулне çаратса
Вăрманалла тариччен,
Тарçисем те урăлса
Вăранас çук халь ирччен.
Сетнер чупса килетех…
Хастарччĕ-ха вăл ялан.
Вăрă-хурах вĕлерсен
Ĕç майлашать пит аван.
Юри хытă кăшкăртăм
Сетнер тĕлне чарăнса.
Вăл киличчен лешсене
Кăштах тăрасчĕ чарса. *(Пӳрт алăкне уçса.)*
Такам чупать кунталлах…

ВĂРĂ САССИ. Эппин халех тарăпăр…

ПĔР ÇЫН. Тăхта эсĕ, ан шавла.
Авă çитрĕ, сыхă тăр.
Пӳрте кĕнĕ-кĕменех
Леш тĕнчене ăсатăр…

*Хура пӳрте кĕрсе каять. Сетнер, ун хыççăн Нарспи васкаса кереççĕ.*

НАРСПИ. Сетнер, эпĕ хăратăп.
Ним сас-хура илтĕнмест.
Анне! Ăçта эс аннеçĕм?!
Ырра мар ку, – вăл чĕнмест.

СЕТНЕР. Алăк уçă, хапха та…
Тарнă пулас вăррисем.
Килте çук-шим никам та?

НАРСПИ. Чим-ха, ăçта тарçăсем?

*Хура пӳрте пырса пăхать. Сетнер пӳрте кĕрет.*

Çывăраççĕ вилнĕ пек…
Сетнер, ан кай, ăçта эс?

*Пўртрен Сетнер: «Ах!» – тени илтĕнет. Нарспи пўрте чупса кĕрет. Нарспи макăрни илтĕнет. Урапа сассисем аяккалла кайса çухалаççĕ. ПĔР ÇЫН урама чупса тухать те кăшкăрать.*

ПĔР ÇЫН. Михетере çаратнă!

САСĂ. Ăçта тарнă вăррисем?!

ПĔР ÇЫН. Вăрманалла чуптарнă,
Ăçта тарччăр-ха вĕсем?

*Халăх пуçтарăнать. Пĕр çын хура пўрте пырса пăхать. Пулăç кĕлете пăхать.*

САСĂСЕМ. Михетере çаратнă!

ПУЛĂÇ. Пĕр япала хăварман.
Çĕр çăтманĕ вăрăсем
Турăран та хăраман.
Пўрте кĕрсе пăхар-ха,
Темĕнле сас илтĕнет.

*Пўрте кĕреççĕ. Пулăç часах каялла тухать.*

Михетерпе карчăкне
Иккĕшне те вĕлернĕ.

ПĔР ÇЫН. Çичĕ тарçи-тĕрçине
Эрех парса ўсĕртнĕ.

ПУЛĂÇ. Сетнер чупса çитнĕ-мĕн
Иккĕш пĕрле Нарспипе.
Вăрă, шуйттан, хĕрхенмен,
Пуçне çурнă пурттипе.

ПУРТЕ: Ай, тур çырлах, тур çырлах, –
Епле чăтать çут тĕнче?!
Ун пек усал ĕç курман
Силпи ялĕ халиччен…

*Хĕрарăмсем Нарспие пўртрен çавăтса тухаççĕ. Халăх шăпланать. Пусма çинчен ансан Нарспи пĕр сасăсăр тўнсе каять, анчах ăна хĕрарăмсем ярса тытаççĕ. Нарспи пўрте кĕресшĕн. Ăна тытса чараççĕ.*

НАРСПИ. Сетнер, Сетнер… ах, Сетнер!
Пĕртен-пĕр ман пурнăçăм!
Эй, чунăмçăм, çамрăк пуç,
Мĕншĕн çапла пултăн-ши?!
Пĕтĕм тĕнче хушшинче
Эсĕ пултăн ытлашши…

МИХЕТЕР ТĂВАНĔ. Кур-ха ăна, путсĕрскер,
Камшăн куççуль юхтарать?!
Ашшĕшĕн мар, – намăссăр, –
Сетнерĕшĕн макăрать…

*Нарспи макăрса тухса каять.*

1-мĕш КАЧЧĂ. Чĕлхў ытла хаяр сан…
Чашкăратăн çĕлен пек.
Мул хуçисем урмасан
Пулас та çук ку инкек.

2-мĕш КАЧЧĂ. Мăшкăл, асап кăтартрĕç
Нарспине чуниллисем!
Сетнере те пĕтерчĕç
Çавсем, куштан пуянсем!..

МИХЕТЕР ТĂВАНĔ. Ман тăвана, кĕлмĕçсем, –
Михетере тĕп турĕç…

САСĂ. Турри курать вĕсене!..
Сетнер пуçне ма çирĕç?!

ПĔР ÇЫН. Хуп çăварна, киремет!
Ма пăтратан халăха?
Кам айăпне кам пĕлет?

ПУЛĂÇ. Эх, ку вăрă-хураха…
Ан кăшкăр-ха, пĕлетпĕр
Эсĕ камăн йыттине.
2-мĕш КАЧЧĂ. Кам курнă-ха йытăсем
Хуçи çине вĕрнине?!
САСĂСЕМ. Çурт-йĕр çук ун, выльăх çук,
Çĕр ĕçне те ĕçлемест.
Ĕçмешкĕн те укçи çук,
Анчах урă çӳремест…
ПУЛĂÇ. Ял-йыш, темле пулсан та,
Тек харкашса тăрар мар!
Ирччен çуртне питĕрсе
Хуралçăсем хăварар!..
Атьăр, халăх, Сетнере,
Пӳртрен илсе тухăпăр,
Амăш патне, хăй килне,
Йăтса кайса хурăпăр…
*Халăх шавласа пӳрте кĕрет.*

ЧАРШАВ.

## ТĂХХĂРМĔШ КАРТИНА

*Силпи ялĕ хысĕнчи кантăрвар сăрчĕ. Сăрт айĕнче пĕчĕк çырма шывĕ юхса выртать. Хĕвел тухать. Чаршав уçăлсан сцена çине пулăç тухать.*

ПУЛĂÇ. Йĕре-йĕре, хуйхăрса
Нарспи утрĕ хирелле.
Ялтан тухрĕ, уттарчĕ
Кантăрварĕ еннелле.
Ăçта кайрĕ-ши, мĕскĕн?
Хурлăх курчĕ çамрăклах.
Самани-çке питĕ хĕн…
Эх-хех-хех-хех, тур çырлах!
Кайса ларам çавăнта, –
Вырăнĕ пит килĕшет.
Хĕвел тухнă вăхăтра
Пиншер пулă хĕвĕшет. *(Каять.)*
НАРСПИ *(кĕрет.)* Ах, çут тĕнче, çут тĕнче,
Аслă та эс, мухтавлă…
Анчах мĕншĕн эс, тĕнче,
Маншăн пултăн ултавлă?
Епле капăр эс паян,
Ах, çĕршывăм, çут тĕнче.
Çăтмах пекех туйăнан, –
Хĕвел тухсан ир çинче.
Çакă аслă çĕр çинче
Пур чĕлхесĕр чĕрĕ чун
Хĕвел ăшши айĕнче
Савăнать-çке кунран-кун.
Мана пурнăç памарĕç,
Туртса илчĕç телее.
Савăнăçа таптарĕç, –
Ман пĕртен-пĕр Сетнере.
Хĕвел тухнă ятпалан
Çутçанталăк умĕнче
Ылханатăп пурнăçа

Çак ылханлӑ çӗр çинче!..
Сетнер, санран уйрӑлса
Эпӗ пӗччен юлас çук.
Хам шӑпама пӑхӑнса
Мӑшкӑл тӳссе пурнас çук.

*Аякра çынсем шавлани илтӗнет.*

Çынсен сасси вӑрманта…
…………………………
Халӗ пире тытаймӑр!..
Тӗнче мӑшкӑлне курма
Çичӗ юта параймӑр…
Ах, Сетнерӗм, пыратӑп!
Епле сана манӑп-ши?
Санпа пӗрле пулмасан,
Епле ютра пулӑп-ши?..

*Сцена хыçнелле утать. Ирхи тӗтре ӑшне путнӑ вӑрмана кӗрсе çухалать. Аякран халӑх юрлани илтӗнет.*

ЮРӐ. Сӗм-сӗм вӑрман, сӗм вӑрман,
Мӗншӗн хыта шавлатӑн?
Мӗншӗн шӑй-шай шӑхӑрса
Вилнӗ чуна вӑрататӑн?..

ПУЛӐÇ *(кӗрет).* Шыракансем таврӑнчӗç
Лашисене çунтарса:
Кантӑрварта йӑмраран
Вилнӗ, терӗç, çакӑнса…
Çапла иртрӗ пурӑнӑç,
Пусӗ пӗтрӗ çамрӑклах,
Ашшӗ-амӑш ухмахран
Пӗтрӗ хуйхӑ-суйхӑпах.
Пӳлӗх-туррӑн кӑмӑлӗ
Ӑслӑ турӗ хӑй хӗрне,
Атте-анне ирӗкӗ
Çирӗ сарӑ хӗр пуçне.

ЧАРШАВ.

# ПЬЕСА АВТОРĔ ÇИНЧЕН

Леонид Никонорович Родионов 1915 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Самара облаçне кĕрекен Сергиевски районĕнчи Кив Якаль ялĕнче çуралнă. 1924–1928 çулсенче хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта, 1928–1931 çулсенче Аслă Микушкелĕнчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕренет. 1931 çулта Шупашкарти музыкăпа театр техникумне вĕренме килсе кĕрет, анчах кĕçех унăн тăван ялне таврăнма тивет. Ку çулсенчех Леонид хăйĕн пирвайхи сăввисене çырать, шкулти литература журналне редакцилет, Самарта чăвашла тухакан «Колхозник» хаçатра та заметкăсемпе статьясем тăтăшах кăларать. Колхоз çамрăкĕсен шкулĕ хыççăн 1930 çулта вăл комсомола кĕрет, 1932 çулта Самарта педагогика рабфакĕнче вĕренет, 1933–1936 çулсенче вăл – Шупашкарти музыкăпа театр техникумĕн студенчĕ. Вĕреннĕ хушăрах çамрăксен театрĕ лартакан спектакльсенче вылять, Чăваш академи театрĕн спектаклĕсенче массăллă сценăсене хутшăнать, сăввисем вара «Вăтам Атăл» альманахра, «Хатĕр пул» журналта, «Çамрăк большевик», «Пионер сасси» хаçатсенче пичетленеççĕ. Техникумран вĕренсе тухас умĕн Леонид Родионова Василий Фролов студентпа пĕрле Чăваш академи драма театрĕнче А. Арбузовăн «Ултă савни» пьесине лартма шанаççĕ. Спектакле халăх кăмăлласа йышăнать. Леонид Родионова малалла вĕренме сĕнеççĕ. 1936–1940 çулсенче вăл Мускаври А.В. Луначарский ячĕпе хисепленекен театр институтĕнче вĕренет, РСФСР халăх артисчĕ Б.Е. Захава профессор ертсе пынипе режиссер дипломне хӳтĕлесе Шупашкара таврăнать. Академи драма театрĕн пурнăçĕнче паллă вырăн йышăннă «Чакка» спектакль, çамрăк режиссерăн малтанхи дебючĕ пулнăскер, тата вăрçă çулĕсенче лартнă «Нарспи» спектакль чăваш халăхĕшĕн чăн-чăн уяв пулнă. Леонид Никонорович режиссер пулнипе кăна мар, драмăллă произведенисем çырнипе те чăваш театрне юратакансемпе çывăх туслашнă. Хăйĕн малтанхи «Колхоз хĕрĕсем» пьесине вăл 1948 çулта А. Афанасьевпа пĕрле çырнă. Çавăн хыççăн унăн «Сенкер кӳлĕ», «Юратнă хĕр», «Чĕре çунать, мĕн тăвас!», «Мĕншĕн куртăм-ши сана?», «Ашшĕ çулĕпе», «Вĕçленеймен юрă», «Айăпа кĕнĕ хĕр», «Асамат кĕперĕ», «Çумăр сывлăмран пуçланать» тата ытти пьесисемпе комедисем çуралаççĕ. Чăваш театр искусствине аталантарас тĕлĕшпе нумай çул ĕçленĕшĕн ăна «Хисеп палли» орденпа, РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. 1945 çулта Леонид Родионова Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне панă. Николай Терентьев драматургăн «Хумсем çырана çапаççĕ» пьесипе лартнă спектаклĕшĕн 1971 çулта ăна К.С. Станиславский ячĕпе хисепленекен РСФСР Патшалăх премийĕн лауреачĕ ятне панă.

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

*Икĕ пайлă драма*

ВЫЛЯКАНСЕМ:

Петĕр
Ирина
Марине
Лида – вăтам шкул вĕренсе пĕтерекенсем
Елена Тимофеевна – Ирина амăшĕ
Афанасий Александрович – Ирина ашшĕ
Олимпия Порфирьевна – Петĕр амăшĕ
Иван Иванович – Петĕр ашшĕ
Максим Максимович – учитель

### ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

*Апрель уйăхĕ. Хĕвеллĕ кун. Çырма урлă каçма хывнă. Çывăхра лапсăркка йăмра ӳсет, çулçисем каçма çинех усăнса аннă. Çырма хĕрринче кивĕ кимĕ выртать, ăна кутăн çавăрса хунă. Кимĕ çинче Олимпия Порфирьевна ларать, вăл симĕс шăлавар тăхăннă. Аллинче пысăк мар карçынкка, ăна шурă татăкпа витнĕ.*

ОЛИМПИЯ. Çук, çук, пултараймастăп. *(Тăрать.)* Алă йăтăнмасть. *(Карçынккине уçса пăхать.)* Çывăрать. Кам йыттин çури-ши? Ăçтан пирĕн пата килсе çакланчĕ? Хура хăй, мăйĕ шап-шурă, картин çинчи пек. Хитре. Çавăн пек чуна епле шыва пăрахас-ха?

*Ира кĕрет. Аллинче чечек çыххи.*

ИРА. Салам, Олимпия Порфирьевна!

ОЛИМПИЯ. Сывлăх сунатăп, Ирочка. Ку капăр чечек çыххине ăçта илсе каятăн?

ИРА. Шкула. Паян шкулта вечер пулать. Петя каламарĕ-им сире?

ОЛИМПИЯ. Ах, мансах кайнă! Каланăччĕ-çке. Вечера мана та чĕнчĕ.

ИРА. Пыратăр-и, Олимпия Порфирьевна?

ОЛИМПИЯ. Пĕлейместĕп çав… Питĕ пырас килетчĕ те… Вăхăт çукрах çав, хĕрĕм, вăхăт çук. *(Чечек çыххине пăхса.)* Ара, кун пек чечек те ӳсет-и пирĕн патра? Капăр чечек, чăнах та… Хăвах ӳстертĕн-и?

ИРА. Хамăрах ӳстеретпĕр.

ОЛИМПИЯ. Лайăх, лайăх.

ИРА. Эп пĕччен мар, Олимпия Порфирьевна, мана юлташсем те пулăшаççĕ. Килте эпир аттепе чечек ӳстерме ятарласа теплица турăмăр, шкулта та Максим Максимович ертсе пынипе чечек ӳстеретпĕр. Оранжерея унта пирĕн. Сире килĕшет апла пирĕн чечек?

ОЛИМПИЯ. Хитре, тĕлĕнмелле хитре!.. Анчах та эп сан вырăнта пулсан, чечек вырăнне çĕр çырли ĕрчетнĕ пулăттăм. Тупăшĕ те ытларах пулĕччĕ, сывлăхшăн та усăллăрах…

ИРА. Эп чечек юрататăп.

ОЛИМПИЯ. Кама мĕн килĕшерех пулать ĕнтĕ. Кала-ха, Ира, çак йытă çури камăнне пĕлместĕн-и? *(Карçынккине уçса кăтартать.)*

ИРА. Ой, мĕнле хитре! Çук, пĕлместĕп.

ОЛИМПИЯ. Таçтан муртан пирĕн пата пырса çыхланчĕ. Петĕр, ухмах, вилсех кайнă уншăн, йытти сăтăр кăна туса пурăнать. Кавире вараλать, сĕтел-пукан урисене йăлтах кăшласа пĕтерчĕ. Тен, сана кирлĕ йытă? Илсе кай.

ИРА. Савăнсах илнĕ пулăттăм та… Петя мĕнле-ха вара? Кӳрентерес килмест ăна манăн. Илес мар пуль.

ОЛИМПИЯ. Хăвăн ирĕкӳ. Хăвăн ирĕкӳ, хĕрĕм. Эп мĕн-ха… Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн эс ялтах юлма шутланă теççĕ. Тĕрĕсех-и?

ИРА. Эпĕ çеç мар, пурте юлатпăр – класĕпех… Çапла йышăнтăмăр.

ОЛИМПИЯ. Пĕтĕм класĕпех çапла йышăнтăр-и? Апла, пирĕн Петĕр те сирĕнпе юлма килĕшрĕ-и? Эпир ăна Мускав университетне яма хатĕрленетпĕр те… Вăл талантлă ача – математик!

ИРА *(нимĕн пулман пекех).* Аха, Олимпия Порфирьевна, Петĕр те ялтах юлать.

ОЛИМПИЯ. Чипер калаç-ха эс!.. Петĕрĕн пысăк пуласлăх. Ĕмĕтне пурнăçлама ăна ма чармалла-ха. Петĕре Максим Максимович питĕ талантлă тесе мухтанине эс, Ира, хăв та лайăх пĕлетĕн. *(Ира чĕнмест.)* Ахаль те хĕрсемпе явăçса кайса вĕренмесĕр юласран чунăм çукчĕ. Пĕри те тепри çыпăçать ун çумне. Хĕр шухăшĕ пулмалла-и халь унăн?

ИРА. Мĕншĕн эсир ун пирки мана калатăр?

ОЛИМПИЯ. Ытахальтен, сăмах май… Эпĕ, амăшĕ, тăрăшмасан, кам тăрăшать уншăн… Вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтерме пултарать ман Петĕр. Сана мĕн… Аннӳ шкул директорĕ.

ИРА. Мĕн каласшăн вара эсир унпа?

ЛИДА *(чупса килет).* Салам, Олимпия Порфирьевна!.. Ира, куратăн-и? Асамат кĕперĕ! Мĕнле хитре! Атя ун айĕпе чупса тухар! Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пурнăçланать, тет, ун айĕн чупса тухсан!

ИРА. Тĕрĕс мар, Лида.

ЛИДА. Эсĕ чупса тухса куртăн-им?

ИРА. Иртнĕ çул хăтланса пăхрăм, ĕç тухмарĕ. Хăваласа çитме çук ăна.

ЛИДА *(куляннăн).* Чăнах-и? Эх, ĕмĕт пурнăçланаймасть ĕнтĕ манăн! *(Сасартăк.)* Пăх-ха, Ира! Петĕрпе Марине килеççĕ. *(Шӳтлерех.)* Шывра сапса уйăрайми тăватă тус яланхи пекех ăшă та хĕвеллĕ кун пĕчĕк юханшыв хĕрринче, кивĕ кимĕ патĕнче, лапсăркка йăмра айĕнче тĕл пулатпăр.

ИРА *(васкаса).* Чăрмантарар мар вĕсене… Атя асамат кĕперĕ айĕнчен чупса тухса пăхатпăр… Тен, телейлĕ ку хутĕнче.

ЛИДА. Хаваспах! *(Лидăпа Ира чупса тухса каяççĕ.)*

ОЛИМПИЯ. Йытă çурине Петĕре кăтартас марччĕ…

*Йывăç хыçне кайса пытанать. Аякра Ира сасси: «Хытăрах чуп! Чупса тухăпăр!» Олимпия йăмра хыçĕнчен пуçне кăларса пăхать.*

Çук, ывăлăм çулĕ урлă пурĕпĕр чупса каçаймастăн. *(Пытанать.)*

*Петĕрпе Марине кĕреççĕ.*

ПЕТĔР. Ира сасси пекех туйăнчĕ… Вăлах… Чăнах вăл, ав, Лидăпа… *(Кăшкăрать.)* Ира-а! Лида-а! Эпир те пыратпăр! Тăхтăр!

МАРИНЕ. Мĕн тăватăн вĕсемпе, çӳреччĕрех.

ПЕТĔР. Илтмерĕç. Çил те вăл еннелле вĕрет-çке. Тĕлĕнмелле.

МАРИНЕ. Тĕлĕнмелли ним те çук. Илтмест пулсан – юратмасть.

ПЕТĔР. Кам пирки эс?

МАРИНЕ. Ан курнăçлан. *(Кулса.)* Мĕншĕн юратмасть вăл сана, пĕлетĕн-и? Санран чипертерех каччăсем пур…

ПЕТĔР. Кам-ши вăл унашкал чипер каччă?

МАРИНЕ. Пур çав ун пекки, пур!..

ПЕТĔР. Сана шӳт туса пултăр… Шӳт шухăшĕ мар-ха манăн, Марине. Эх, пĕлесчĕ…

МАРИНЕ *(ассăн сывласа).* Пĕлетĕп-çке, пĕлетĕп… *(Пауза.)* Атя кимĕ çине ларатпăр…

ПЕТĔР. Вăхăт çук, Марине. Мантăн-им, шкулти пысăк зала илемлетмелле.

МАРИНЕ. Эх, çын та вара эс, Петька. Мĕншĕн сана хĕрсем юратаççĕ-ши? *(Петĕрпе Марине каяççĕ.)*

ОЛИМПИЯ *(йывăç айĕнчен тухать).* Ак сана Петька, ак сана сăпайлă, йăваш ача, ак сана ывăл… Хĕрсем, йыт-пуллисем, ача пуçне çавăраççĕ. Вĕсене пулах экзамен тытаймасть ĕнтĕ. Пĕтрĕ вара ылтăн медаль, Мускав университетчĕ пирки ĕмĕтленмелли çук. Мĕн тăвас-ши? Петька пуçне хăш йĕкехӳри çавăрать-ши: Ира-ши е Лида-ши?

*Максим Максимович кĕрет.*

ОЛИМПИЯ *(савăнăçлăн).* Ырă кун пултăр, Максим Максимович!

МАКСИМ. Салам, Олимпия Порфирьевна! Кама кĕтетĕр? Петĕре-и?

ОЛИМПИЯ. Вĕсем нумай пулмасть кунтан кайрĕç. Виçĕ хĕрача… Вăл пур – пĕр-пĕччен çавсем хыççăн çапкаланса пырать, пăхма намăс.

МАКСИМ. Мĕншĕн намăс? Вĕсем туслă, пĕр-пĕринпе килĕштерсе çӳренĕшĕн савăнмалла кăна, Олимпия Порфирьевна. Учитель пулнă майĕпе вĕсен туслăхне курса савăнатăп эпĕ.

ОЛИМПИЯ. Ырă сăмахăршăн тавтапуç. Анчах вĕсем туслă пулни мана пĕрре те хĕпĕртерттермест.

МАКСИМ. Мĕншĕн-ха апла?

ОЛИМПИЯ. Вуннӑмӗш класра Петӗр палламалла мар улшӑнчӗ: яланах шухӑшлӑ, сахал калаҫать. Апат ҫиме те манать тепӗр чух. Йӑлтах начарланса кайрӗ.

МАКСИМ. Мда-а… Пулкалать ун пекки ҫамрӑксемпе. Уйрӑмах юратса пӑрахсан…

ОЛИМПИЯ. Уроксене хатӗрленме пачах пӑрахрӗ, пӗлетӗр-и эсир? Кӗнекесӗр, тетрадьсӗр шкула ҫӳрет. Паян-ыран экзамен…

МАКСИМ. Шкулта ӗлкӗрсе пырать-ха вӑл, ҫапах та асӑрхаттарнӑшӑн тавтапуҫ, Олимпия Порфирьевна. Вӑл талантлӑ ача, малашлӑхӗ пысӑк унӑн. Ҫавӑнпа та пирӗн, учительсен, ун пек ачасене пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ ҫине тухма ҫине тӑрсах пулӑшас пулать.

ОЛИМПИЯ. Тавтапуҫ сире, Максим Максимович, анчах хӗрачасем пӑтратаҫҫӗ-ха ӑна, пуҫне ҫавӑрса ячӗҫ ӗнтӗ.

МАКСИМ. Ытлашши ан кулянӑр, Олимпия Порфирьевна. Пурте йӗркеллех пулать, каларӗ тейӗр. Юрату, ман шутпа, лайӑх вӗренме чӑрмантармасть, пулӑшать кӑна.

ОЛИМПИЯ *(ассӑн сывласа).* Малтан вӗренсе пӗтерес пулать унӑн, Максим Максимович. Акӑ, ун портфелӗнче мӗн тупрӑм. *(Хут кӑларса парать.)* Ҫыру. Вуласа пӑхӑр-ха.

МАКСИМ. Ҫук, ҫук, вуламастӑп, Олимпия Порфирьевна. Ун пек лайӑх мар.

ОЛИМПИЯ. Ытлашши нимех те ҫук… Пурӗ те икӗ йӗрке сӑвӑ ҫеҫ… *(Вулать.)* «Миллионсӑр пурӑнатӑп лайӑх… Пӗр ҫынсӑр ак пурӑнаймастӑп…» Лида ҫырнӑ пуль тетӗп.

МАКСИМ. Лида? Пулма пултараймасть!. *(Ҫырӑва илсе пӑхать.)* Йӑнӑшатӑр, Олимпия Порфирьевна, эпӗ хам вӗрентнӗ ачасен почеркне пӗлетӗп… Ку Лида алли мар.

ОЛИМПИЯ. Апла, Ира ҫырнӑ-ши, Марине-ши?

МАКСИМ *(куларах).* Виҫҫӗшӗнчен пӗри…

ОЛИМПИЯ. Апла пулсан Ира ҫырнӑ. Вӑл хӗрача чечек ҫав тери юратать, унӑн чунӗнче лирика, вӑлах ҫырнӑ ку сӑвва.

МАКСИМ *(кулса).* Эсир Мэгре комиссартан пӗрре те кая мар, Олимпия Порфирьевна…

ОЛИМПИЯ. Сире кулӑ, Максим Максимович.

МАКСИМ. Ҫук, куласшӑн мар-ха эп.

ОЛИМПИЯ *(хӑвӑрт).* Ҫавӑнпа вуннӑмӗш класс пӗterекенсене ялта юлма хӗтӗртетӗр-и?

МАКСИМ. Вӗсем текех пӗчӗк ачасем мар. Ялта юлассипе юлас маррине хӑйсемех татса пама пултараҫҫӗ.

ОЛИМПИЯ. Вунҫиччӗре-вунсаккӑрта ҫеҫ-ха вӗсем… Пуҫӗсенче ҫил вылять. Вӗсем ҫамрӑк хунавсем пек халь, ҫил ӑҫталла вӗрет, ҫавӑнталла авӑнаҫҫӗ.

МАКСИМ. Эп сирӗнпе килӗшместӗп. Вунҫиччӗре-вунсаккӑрта ҫеҫ пулин те, хурапа шурра чухлаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршывшӑн мӗн усӑллӑраххине пӗлеҫҫӗ. Ҫук, Олимпия Порфирьевна, вӗсем ҫитӗннӗ ӗнтӗ. Аттестатпа пӗрле професси те туянаҫҫӗ.

ОЛИМПИЯ. Ҫапла-ҫке, ҫапла. Професси те илеҫҫӗ. Ҫитменнине, модӑри професси: тракторист, комбайнер, каменщик! Чаплӑ, чаплӑ, нимӗн те калаймӑн.

МАКСИМ. Ахалех ун пек калатӑр, Олимпия Порфирьевна. Калӑр-ха, механизатор мӗнрен начар професси?

ОЛИМПИЯ. Мана ӳкӗтлеме кирлӗ мар пуль, Максим Максимович. Эп радио та итлетӗп, хаҫат та вулатӑп. Вуннӑмӗш класс пӗтернӗ хыҫҫӑн ҫамрӑксем чылайӑшӗ ялтах юлаҫҫӗ. Анчах ман Петӗр, ман Петӗр…

МАКСИМ. Тӗрӗс. Петӗр – пултаруллӑ ача. Вӑл университета вӗренме кӗретех. Пӗр-икӗ ҫул ялта юлса ӗҫлени уншӑн усӑллӑ пулать. Ҫитменнине, вӗсем класӗпех калаҫса татӑлнӑ.

ОЛИМПИЯ *(Максим Максимовича пӳлсе).* Калаҫса татӑлнӑ эппин!.. Эсир те вӗсен юрринех юрлатӑр иккен… Кӗтменччӗ сирӗнтен, кӗтменччӗ. Эсир учитель-ҫке, сирӗн ачасене малалла вӗренме ӑс памалла пек. Эсир пур: «Калаҫса татӑлнӑ, калаҫса татӑлнӑ!..»

МАКСИМ. Тӗрӗс, сӑмах тытма пӗлни – пурнӑҫра чи хакли. Ун пек ачаран ҫын пулатех.

ОЛИМПИЯ. Ялах юлсан, мӗнле ҫын пултӑр унран? Трактор мазучӗпе ҫӑрӑлса пурӑнакан ҫын ҫын-и вӑл? Эх, учитель!..

МАКСИМ. Эп сире кӳрентерес теменччӗ, Олимпия Порфирьевна. Трактор мазучӗпе ҫӑрӑлакан ҫынсем – ӗҫ паттӑрӗсем, ӗҫ геройӗсем. Вӗсемсӗр халь пурӑнма ҫук. Вӗсем чи кирлӗ ҫынсем. Ҫӑвӑн пек ман сӑмахӑм. Ну, эп кайрӑм, каҫарӑр. *(Каять.)*

ОЛИМПИЯ *(Максим кайнӑ еннелле пӑхса).* Ку эпӗ шухӑшланӑ пек айван мар иккен… Кӳренчӗ. Кӳренин тата, кӳрентӗрех… Ҫук, учитель юлташ, эсӗ шухӑшланӑ пек пулмасть… Петӗр, ман ача… аттестат илсенех университета тухса вӗҫет, курса юл кӑна. Ирина-ха иккен ман ача пуҫне пӑтратаканни, шкул директорӗн хӗрӗ! Юра-ать, юра-ать. Амӑшӗпе калаҫса

пăхăпăр, эппин. *(Карçынккине уçса пăхать.)* Кунĕпех çывăрать ку йыт çури, çиме те ыйтмасть. *(Тем аса илнĕ.)* Чим-ха, Елена Тимофеевнăна сĕнсе пăхас мар-ши? Ирина паçăр илес пек калаçрĕ. Тĕлĕнмелле çемье. Ашшĕ алкоголик, амăшĕ шкул директорĕ, хĕрĕ ман ывăл хыççăн чупать. Çук, вăл çемьепе хурăнташланма ĕмĕрте килĕшместĕп. Çав Ирина ĕнтĕ пĕтĕм класĕпех яла юлма хĕтĕртекенни. Хăйĕн хĕрне чарайман хĕрарăм ăçтан шкул директорĕ пулма пултартăр? Упăшкине те чараймасть те… Упăшки, Афанасий, лайăх çынахчĕ-ха. Аслă ывăлĕ чикĕре пуçне хунă хыççăн ĕçке ерчĕ. Мирлĕ вăхăтра вилни уйрăммăнах хытă кулянтарать. *(Елена Тимофеевна кĕрет, ăна хирĕç Олимпия Порфирьевна кулкаласа пырать.)*

ОЛИМПИЯ. Сывă-и, Елена Тимофеевна?

ЕЛЕНА. Сывах-ха, Олимпия Порфирьевна.

ОЛИМПИЯ. Ман сирĕнпе калаçмалли пурччĕ те… Васкатăр-им?

ЕЛЕНА. Васкамаллаччĕ те, юрĕ, калаçар, эппин.

ОЛИМПИЯ. Эпĕ вăрах тытса тăмастăп. Эп… хамăн ывăл пирки, Петĕр пирки калаçса пăхасшăн.

ЕЛЕНА. Мĕн пулчĕ унашкалах?

ОЛИМПИЯ. Çук, нимех те пулман. Унăн пуласлăхĕ пăшăрхантарать мана.

ЕЛЕНА. Мĕншĕн? Сирĕн Петĕр шкулта лайăх вĕренет. Кăлăхах пăшăрханатăр ун пирки.

ОЛИМПИЯ. Апла пулсан, ман Петя шкула медальпе пĕтерме пултарать-и? Кăштах та пулин шанчăк пур-и?

ЕЛЕНА. Ку вăл, Олимпия Порфирьевна, пĕтĕмпех хăйĕнчен килет.

ОЛИМПИЯ. Сиртен те нумай килет, Елена Тимофеевна.

ЕЛЕНА. Мĕншĕн манран?

ОЛИМПИЯ. Эсир директор-çке.

ЕЛЕНА. Çук, манран килмест, пĕтĕмпех хăйĕнчен килет. Сирĕн ытлашши хăрамаллиех çук. Математик Максим Максимович мухтать ăна.

ОЛИМПИЯ. Математикăпа тытĕ те-ха, ытти предметсемпе мĕнле? Йăлтах вĕренме пăрахрĕ, килте кĕнеке тавраш алла та илсе пăхмасть. Йăлтах улшăнса кайрĕ, палламалла та мар. *(Шăппăн.)* Юратса пăрахнă пулмалла.

ЕЛЕНА. Вăл та пулма пултарать. Ку япăх-и вара?

ОЛИМПИЯ. Калама çăмăл, пирĕн – ывăл, сирĕн – хĕрача. Ăна института вĕренме кĕреймесен те çара илмеççĕ.

ЕЛЕНА. Совет çарĕ, Олимпия Порфирьевна, ачана тĕрекленме, çын тума пулăшать. Кăна эпĕ, чикĕре Тăван çĕршывшăн пуçне хунă ывăлĕн амăшĕ калатăп.

ОЛИМПИЯ. Вăл çаплах-ха, сирĕн ывăлăр паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Çапах та сирĕн йăпанмалăх килте хĕрача пур. Пирĕн пĕртен-пĕр ывăл çеç.

ЕЛЕНА. Тĕрĕс, Ирина пирĕншĕн телей те, савăнăç та. Каçар, мана шкулта кĕтеççĕ.

ОЛИМПИЯ. Кăштах тăхтăр-ха, тархасшăн. Эпир калаçса пĕтереймерĕмĕр-çке. Мĕн тумалла ман, канаш парсамăр.

ЕЛЕНА. Пĕлместĕп. Тем каламалла… Петĕрпе хăйĕнпе калаçăр. Шанса, ӳссе çитнĕ çынпа калаçнă пек.

ОЛИМПИЯ. Елена Тимофеевна, эсир хăвăр та калаçса пăхмăр-ши?

ЕЛЕНА. Эпĕ те калаçма пултаратăп.

ОЛИМПИЯ. Петĕрпе мар, хăвăр хĕрачăрпа калаçма ыйтатăп.

ЕЛЕНА. Ăнланмастăп.

ОЛИМПИЯ. Петĕрпе Ира каççерен хаклă вăхăта пĕрле ирттереççĕ. Сирĕн, амăшĕн, çавна пĕлмеллех ĕнтĕ.

ЕЛЕНА *(кӳренсе)*. Эсир кăна пĕлсех калатăр-и? Ира мана кун пирки нимĕн те каламан-çке.

ОЛИМПИЯ. Апла пулсан, чăрмантарнăшăн каçарăр.

ЕЛЕНА. Тархасшăн, паян шкулта вечер пулать. Пырăр. Ачасем тĕлĕнмелле лайăх концерт кăтартаççĕ. *(Каять.)*

*Афанасий кĕрет.*

АФАНАСИЙ. Елена Тимофеевнăна курмарăн-и? Кунтан иртсе каймарĕ-и?

ОЛИМПИЯ *(кулса)*. Эс мĕн ирех арăмна шырама пуçланă?

АФАНАСИЙ *(тарăхса)*. Çывăрса юлнă, ара, çывăрса юлнă!

ОЛИМПИЯ. Ма çав териех кирлĕ пулчĕ арăму? Шкулта пуль вăл, чуп шкула.

АФАНАСИЙ. Ёҫе пынине юратмась вăл. Ăҫта кайса кĕресех? Пуҫ ҫурăлса тухать.

ОЛИМПИЯ *(илĕртсе кулса).* Те пулăшмалла ĕнтĕ сана?

АФАНАСИЙ. Тархасшăн, Олимпия Порфирьевна. Парăмра юлмастăп эп, хăвах пĕлен.

ОЛИМПИЯ. Апла пулсан ҫав карҫынккана ил те унти йытă ҫурине шыва путар. Вара ман пата каятпăр.

АФАНАСИЙ *(хăраса ӳксе).* Мĕн терĕн эс? Мана кам вырăнне хуран? Ку алкоголик пĕр черкке эрехшĕн тем тума та хатĕр тетĕн-им? Ун пек ирсĕр ĕҫе тумастăп эп, сан патна та пымастăп. Кирлĕ мар эрехӳ те.

ОЛИМПИЯ *(карҫынккана уҫса пăхать).* Тухса тарнă шуйттан анчăкĕ. Хăйне пурăнмалăх ăсĕ ҫитет айванăн.

АФАНАСИЙ *(савăнса).* Тĕрĕс тунă! Сан пек чуниллинчен тармалла та…

ОЛИМПИЯ. Таси паха. Юрĕ эппин, атя пирĕн пата. Пĕрер черкке ярса парăп ҫапах та.

АФАНАСИЙ. Кун пек сĕнӳ хыҫҫăн пырас та килмест. Мухмăр иртсе кайрĕ.

ОЛИМПИЯ. Атя ĕнтĕ, кăмăлна йывăра ан ил. *(Тухса каяҫҫĕ.)*

*Ҫутă сӳнет.*

*Шкул директорĕн кабинечĕ. Елена Тимофеевнăпа Максим Максимович лараҫҫĕ. Залран юрă илтĕнет.*

ЕЛЕНА *(сĕтел ҫинчи хаҫата илет).* Саламлатăп, Максим Максимович, лайăх статья ҫырнă. Тĕрĕссипе, эп сирĕн вырăнта пулнă пулсан, аванс пама васкаман пулăттăм.

МАКСИМ. Мĕн пирки эсир?

ЕЛЕНА. Акă мĕн ҫыратăр: «Ҫамрăксем хăйсем вăтам шкул пĕтернине юлашки урокăн юлашки шăнкăравĕ тесе ан шутлаччăр. Мĕншĕн тесен пурнăҫ ҫулĕ шăпах ҫак тапхăртан пуҫланать… Вĕренӳре илнĕ пĕлӳ вĕсене пурнăҫра хăйсен тивĕҫлĕ вырăнне тупма пулăштăрччĕ…». Тата вăтам шкултан кăҫал вĕренсе тухакансем пурте яла ĕҫлеме юлаҫҫĕ тетĕр. Кун ҫинчен хаҫатра пĕлтерме васкамарăр-и?

МАКСИМ. Ачасем яла хăйсен кăмăлĕпе, хăйсен ирĕкĕпе юлаҫҫĕ, пурнăҫăн анлă ҫулĕ ҫинче пĕрремĕш утăм тăваҫҫĕ. Ĕненетĕп, малашне вĕсенчен агрономсем, инженерсем, ученăйсем те тухĕҫ.

ЕЛЕНА. Хăшпĕр вĕренекенĕн ашшĕ-амăшĕ класс пухăвĕ йышăннине хирĕҫ. Паян Петя Орешин амăшĕ ҫул ҫинче тĕл пулчĕ…

МАКСИМ. Манпа та сăмахларĕ вăл. Мĕнех вара?

ЕЛЕНА. Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем хушшинче хирĕҫӳ тухса ан кайтăрччĕ.

МАКСИМ. Ахалех пăшăрханатăр, Елена Тимофеевна. Вуннăмĕш класс вĕренсе пĕтерекен ачасем, пĕчĕк ачасем мар ĕнтĕ. Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултараҫҫĕ тесе шутлатăп. Пурин амăшĕ те Петя Орешин амăшĕ мар…

ЕЛЕНА. Эсир ăна пĕлместĕр-ха, Максим Максимович. Вăл ҫынни ҫавнашкал.

МАКСИМ. Ывăлĕ сирĕн Иринăпа туслă. Каҫсерен иккĕшĕ вăхăта пĕрле ирттернишĕн те хаклă вăхăта сая яраҫҫĕ тесе вăрҫать.

ЕЛЕНА. Ира халиччен манран нимĕн те пытармастчĕ-ҫке? Чи вăрттăн шухăш-туйăмне те уҫса параканччĕ. Петьăпа туслă пулни ҫинчен шарламан вара.

МАКСИМ. Хăшпĕр япалана ашшĕ-амăшĕ пуринчен кайран пĕлет ҫав…

ЕЛЕНА. Орешин – лайăх ача, унпа туслă пулни япăх мар. Амăшĕ тăрлавсăртарах та-ха… Ку хутĕнче тĕрĕсех калать-ха вăл: кĕҫех экзаменсем, вăхăта ахалех сая яма кирлĕ мар. Анчах Ирина, Ирина…

МАКСИМ. Юлташла кăна пуль-ха вĕсем, туслăхĕ ҫирĕпленсех ҫитмен пуль, ҫавăнпа сире каламан.

ЕЛЕНА *(ассăн сывласа).* Апла та пулма пултарать. Тата пирĕн килти лару-тăру та йĕркеллех мар. Ун ҫинчен хăвăрах пĕлетĕр. Ҫавăнпа та шарламан пуль.

МАКСИМ. Пĕлетĕп. Питĕ шеллетĕп сирĕн мăшăрăра эп. Ҫавăнпа сивлеме те хăяймастăп.

ЕЛЕНА. Упăшкапа эп нимĕн те тăваймастăп, ним каласа тăна кĕртейместĕп. Ывăл вилни ăна йăлтах пĕтерчĕ. Тепĕр чух хĕрхенес те килет ман ăна. Ывăл виличчен вăл апла марччĕ… Фронтра ун пуҫне хытă… *(Пауза.)* Коля вилсен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ĕҫме… тытăнчĕ. Халĕ чăрăнаймасть.

МАКСИМ. Больницăна хумалла мар-и ăна?

ЕЛЕНА. Иван Ивановичпа калаҫса пăхрăм та: «Пĕтĕмпех хăйĕнчен килет, – терĕ. Хăй ҫине тăмасан сиплени те пулăшмасть», – тет. Хуйха пулах ĕҫме тытăнчĕ. Ним тума та пĕлместĕп халь.

МАКСИМ. Ĕҫ тупса памалла. Килĕшекен, чун патне пыракан ĕҫ. Эрех ҫинчен мантаракан ĕҫ.

ЕЛЕНА. Ĕҫлеме пултарать вăл, алли ун ылтăн!

МАКСИМ. Ку ыйтупа калаҫса пăхмалла мар-и, Елена Тимофеевна?.. Хăвăра, тен, аванах мар. Мана юрать. Паянах калаҫатăп.

*Ҫутă сӳнет.*

*Олимпия Порфирьевна пурăнакан ҫуртăн хăтлă пӳлĕмĕ. Сĕтел ҫинче ĕҫмелли те, ҫимелли те ҫителĕклех. Олимпия Порфирьевнăпа Афанасий Александрович ҫитсе кĕреҫҫĕ.*

ОЛИМПИЯ *(хаваслăн).* Куртăр-и? Пурте хатĕр ман. Атя, мухмăрна чĕртер. (*Черккесене тултарать. Ĕҫет. Афанасий хăй черккине сĕтел хĕррине лартать.)* Эх, кăмăл уҫăлса кайрĕ халь манăн. Шутсăр юрлас килет. *(Юрласа ярать.)*

Ан авăн шĕшкĕ, ан авăн та,
Ан авăн шĕшкĕ, ан авăн.
Кăштах ҫилĕ вĕрнипе те,
Кăштах ҫилĕ вĕрнипе…

*(Афанасий ĕҫменнине асăрхаса юрлама чарăнать.)* Афанасий, эс мĕн ĕҫместĕн тата? Пăх-ха эс ăна, мĕн хăтланать? Эп хăйне хĕрхеннипе илсе килтĕм, ара, вилĕмрен ҫăлас терĕм ҫынна. *(Сĕтел ҫинчи черккене илсе Афанасие ĕҫтерме тăрать.)*

АФАНАСИЙ. Ҫук, Олимпия Порфирьевна, ĕҫместĕп. Мухмăр ĕҫмесĕрех иртсе кайрĕ манăн. Ĕҫес килмест халь.

ОЛИМПИЯ. Ак тата! Эп пур – тăрăшрăм, тăрăшрăм. Ырă ҫын чунне савăнтарам-ха терĕм. Ĕҫ ĕнтĕ, ĕҫ…

АФАНАСИЙ. Ан хупăрла, ĕҫместĕп.

ОЛИМПИЯ. Ан тĕлĕнтер-ха, Афанасий, мĕн пулчĕ? Кӳренмерĕн пулĕ те?

АФАНАСИЙ. Эп эс хушнă ĕҫе тăваймарăм, ҫавăнпа ĕҫместĕп.

ОЛИМПИЯ. Апла пулсан мĕн тума килтĕн?

АФАНАСИЙ. Хам та пĕлместĕп. Эс мана ҫавăн пек киревсĕр ĕҫ тума хушсан, тăруках ҫухалса кайрăм эп, пуҫ арпашăнса кайрĕ. Ҫавăнпа килсе лартăм пулмалла.

ОЛИМПИЯ. Чипер калаҫ-ха, Афанасий, эп сана хисеплесе чĕнтĕм. Ман ун ҫинчен, эп ăна шӳтлесе-мĕнле ҫеҫ каларăм.

АФАНАСИЙ *(ассăн сывласа).* Хисепленĕ ҫынна ун пек ĕҫ хушмаҫҫĕ, хисепрен тухрăм иккен эп. Эх, хуйхăма пула ĕҫе-ĕҫе ҫын шутĕнчен те тухса ӳкрĕм иккен! Халăхран уйрăлтăм. Тавтапуҫ, Олимпия, ман куҫа уҫрăн эс.

ОЛИМПИЯ. Ак тата… Кӳрентертĕм пулать сана?

АФАНАСИЙ. Ҫук, уншăн кӳренместĕп эп. Килте Елена Тимофеевна ан ĕҫ тесе йăлăннă чухне шутсăр ĕҫес килетчĕ. Халĕ, ак, умра тулли черкке, хуҫи те ĕҫме сĕнет, анчах ĕҫес килмест. Эрехе сĕнме те пĕлес пулать иккен. Ку енĕпе вара эс ăста, Олимпия Порфирьевна. Юрĕ. Нумай лартăм. Киле каяс. *(Ура ҫине тăрать.)*

ОЛИМПИЯ. Тăхта-ха, Афанасий Александрович. Юрĕ, ĕҫместĕн пулсан, ан ĕҫ эппин. Ман санпа урăх ĕҫ пирки те калаҫмалли пур.

АФАНАСИЙ. Юрĕ, итлетĕп. *(Ларать.)*

ОЛИМПИЯ. Пирĕн Петĕрпе сирĕн Ирина пĕр-пĕрне килĕштереҫҫĕ пулас.

АФАНАСИЙ *(тĕлĕнсе).* Ҫăнах-и? Вăт эп кăна пĕлмен. Ирина чечек юратнине пĕлетĕп, анчах каччăсем пирки иртерех-ха ăна. Малтан вĕренсе пĕтерес пулать.

ОЛИМПИЯ *(савăнса).* Вăт, вăт… Эпĕ те ҫавна каласшăн. Ман ывăл шкулта ҫав тери лайăх вĕренет. Темле пулсан та, унăн университета кĕмелле. Юрату шухăшĕ пулмалла-и халь вĕсен?

АФАНАСИЙ. Эпĕ те ҫавăн пек шухăшлатăп та, Олимпия Порфирьевна, анчах юрату вăхăта пăхса килмест, ниме те кĕтмест вăл.

ОЛИМПИЯ *(тарăхарах).* Юратаҫҫĕ-и, юратмаҫҫĕ-и? Тарам-ха вăл. Шкулта иккĕшĕ те отличниксем, ҫав шухăшлаттарать-ха мана.

АФАНАСИЙ. Вăл япăх-и вара?

ОЛИМПИЯ. Япăххи япăх мар-ха, анчах пĕр шкултанах икĕ ылтăн медаль параççĕ-ши? Сирĕн Ирина ылтăн медаль илес пулсан, директор хăй хĕрне юриех хӳтĕленĕ темĕç-и çынсем?

АФАНАСИЙ. Вăн ăçталла пăратăн иккен эс калаçăва? Итле, пултараççĕ пулсан, пур вĕренекен те ылтăн медаль илччĕр. Иринăна ун пек никам та калаймасть. Шкулта Елена Тимофеевнăсăр пуçне ытти учительсем те пур. Вăл мĕнле вĕреннине пурте пĕлеççĕ.

ОЛИМПИЯ. Çапли çаплах пуль-ха, Афанасий Александрович. Сирĕн Ирина вуннăмĕш класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренме каять-и? Вăл ялта ĕçлеме юлать тенине илтрĕм эп. Мĕн тума кирлĕ пулать ун чух ăна ылтăн медаль?

АФАНАСИЙ. Эс мĕн ылтăн медаль пирки çеç калаçан çак? Ман Ирина вăл хăй ылтăн, урăх ылтăн кирлĕ мар пире. Малалла вĕренме каять-и вăл е ялтах юлать, хăйĕн ирĕкĕ.

ОЛИМПИЯ *(савăнăçлă пек пулса)*. Ийя, çапла. Паллах, çапла. Анчах ман Петĕрпе вĕсем туслă. Ирина хыççăн ман Петĕр те ялтах юласран хăратăп. Калăр-ха Иринăна, ман Петĕре ан астартăр.

АФАНАСИЙ. Петĕрĕн хăйĕн пуçĕ пур пуль.

ОЛИМПИЯ. Пур-ха пуçĕ унăн, пу-ур, анчах хĕрсем каччăсен пуçĕсене часах çаврăрса яраççĕ, Афанасий Александрович. *(Итлесе.)* Такам алăка чăрмалать. *(Алăка уçса пăхать. Тарăхса.)* Каллех килнĕ эсрелĕ.

АФАНАСИЙ. Кама ятлатăн çак эс, Олимпия Порфирьевна?

ОЛИМПИЯ. Леш – эсрелĕ – йытă çури каллех килнĕ.

АФАНАСИЙ. Пит аван. Чăрмантарать пулсан, хама парса ярăр.

ОЛИМПИЯ. Илсе кай, ара, илсе кай, тархасшăн. (*Тухса карçынкка йăтса кĕрет.)* Аран-аран тытрăм. Çав тери йăрă. *(Карçынккине урайне лартать.)* Мĕн калас терĕм-ха эп? Ах, астурăм, астурăм. Сан арăму шкул директорĕ. Кала-ха эс ăна, ылтăн медальне Петĕрех патăр. Уншăн ахаль тумастăп эп сире. Мĕн кирлĕ – çавна ыйтăр.

АФАНАСИЙ *(тарăхса кайса сиксе тăрать)*. Вăт сыранчĕ!.. Пултарать пулсан илтĕр! Икĕ, виçĕ медаль илтĕр ывăлу!.. Совеçе сутмасть ман арăм, ан ман çакна! *(Васкаса тухса кайма тăрать, Олимпияна пырса çапăнать.)*

ОЛИМПИЯ. Ой. *(Хăвăрт пăрăнать. Афанасий тухса каять те каялла çаврăнса кĕрет, каллех Олимпияна пырса çапăнать, карçынккине илсе тухса каять.)* Ку алкоголика ĕçтеретĕп те хам шухăша майĕпен пурнăçлатăп тенĕччĕ. Ĕç тухмарĕ. Мĕн тумалла халь манăн? Ывăла университета мĕнле кĕртмелле?!..

*Çутă сӳнет.*

*Уйăхлă каç. Çырма хĕррине ӳпĕнтерсе хунă кимĕ. Йăмра. Каçма урлă Лида чупса кĕрет, ăна Марине хăваласа çитет.*

МАРИНЕ *(аран-аран сывлăш çавăрса)*. Тăхта-ха, тăнран тухнăскер!

ЛИДА. Ой, Маришка! Ой, Марине! Трактора ниепле те тапратса яраймастăп, ухмах мар-и ĕнтĕ? Хуть выртса ӳле. Хускалмасть, тăрать упа пек ман трактор. Мотор ĕçлеме тытăнсан, савăннипе куççуль тапса тухрĕ. Трактор кĕрлет, эп савăннипе йĕретĕп.

МАРИНЕ *(сӳрĕккĕн)*. Эп илтрĕм. Айван та-çке эс, Лидка… Тем пулнă пек савăннă! Тепри космоса вĕçсе кайсан та сан пек савăнас çук.

ЛИДА. Хăвна пĕлесчĕ. Мĕншĕн кутăна петĕн? Мĕншĕн руль умне лармарăн?

МАРИНЕ. Ларас килмест, çавăнпа лармарăм. Эпĕ пурпĕрех трактористка пулмастăп. Суратăп эп трактор çине – вăт! Тьфу! Тьфу! Тьфу! Техникăна кураймастăп. Ялти пурнăç йăлăхтарчĕ.

ЛИДА. Ăшă сĕтсĕр пуçне…

МАРИНЕ. Ăшă, тин сунă сĕте юрататăп… Суймастăп. Мĕнех вара? Тин çеç уçланă çăва та кăмăллатăп. Кăмакаран кăларнă хĕрлĕ питлĕ çăкăра та… Кĕркуннене юрататăп. Çĕр шурă юрпа витĕнет. Кашни килтех купăста тĕвеççĕ… Тук-тук-тук… Пурпĕрех ялта юлмастăп, юлмастăп! Манăн хамăн тĕллев, хамăн пуласлăх.

ЛИДА. Пĕлетĕп. Сана ташласа та юрласа пултăр. Кунта ташламалла çеç мар, ĕçлемелле те!

МАРИНЕ. Мансăр та лайăх ĕçлеççĕ. Аттестат илесчĕ кăна… Вара мана кур та юл.

ЛИДА. Мĕскер? Эс халь анчах пĕтĕм класĕпе яла юлатпăр тесе сасăларăн-çке?

МАРИНЕ. Сасăларăм, мĕнех вара? Пурте сасăларĕç. Чăннипе, кам юлать-ха, курăпăр.

ЛИДА. Эс пуриншĕн те ответ ан тыт.

МАРИНЕ. Хăвăн ăслă сăмаххусемпе йăлăхтартăн мана, Лида. Иркка мĕншĕн сасăларĕ, пĕлетĕн-и? Мĕншĕн тесен вĕсен килĕнче пурте йĕркеллех мар.

ЛИДА. Çук, уншăн кăна пулсан, Ирина килте юлмасть. Петĕрĕн килĕнче пурте йĕркеллĕ, вăл та сасăларĕ-çке.

МАРИНЕ. Тархасшăн, ун хутне ан кĕр, Петĕр Ирккана юрататъ, çавăнпа сасăларĕ. Иркка ăçта, вăл та унта. Мана та Петĕр килĕшет. Эпĕ вăл сасăланине кура сасăларăм. Лида, вăт мĕне пĕлтерет «пурте пĕр сасăллă пулса йышăннă» тени.

ЛИДА. Ĕненместĕп сана, Марина! Хăвна ман умра юриех эгоистка пек кăтартатăн эс.

МАРИНЕ. Юрĕ-çке, лăплан, çапла пултăр. *(Кичеммĕн.)* Ой, йăлăхтарчĕ-çке, йăлăхтарчĕ! *(Йăмрана пăхать.)* Çапах та тăван ялтан уйрăлса каяс килмест… Çак йăмра айĕнче миçе каç ирттермен-ши эпир пĕрле вĕренекенсемпе… Мĕн чухлĕ каччăпа хĕр тăман-ши кунта? Вăхăт иртет, анчах та çак каçма, çак кĕпер, çак лапсăркка йăмра ĕмĕрлĕхех асра юлать. Вĕсене аса илсен, яланах ачалăхăнти савăнăçлă вăхăтсем куç умне тухĕç.

ЛИДА. Фантазерка та иккен эс, Марине! Палкатăн çеç, кайма ниçта та каяймастăн.

МАРИНЕ. Каятăп эп, Лида, каятăп.

ЛИДА. Каятăнах пулсан, сана никам та вăйпа тытмасть. Юлташсен умĕнче шанăçран тухатăн вара.

МАРИНЕ. Пурпĕр каятăп. Института кĕреймесен, продавеца вĕренме кĕретĕп. Продавщицăсем пур хулара та кирлĕ теççĕ.

ЛИДА *(шухăшлăн)*. Ял председателĕн сăмахĕ чĕренех кĕрсе ларчĕ. «Машина, техника нумай, ĕçлекен çук», – терĕ вăл. Стариксемпе карчăксене комбайн е трактор çине лартса ĕçлеттерейместĕн ĕнтĕ. Афанасий Александрович пек чирлисене те…

МАРИНЕ. Каларăн та… «Чирлĕ»… Афанасий пичче магазинран кашни кун эрех илет тет. Атте каларĕ. Ниçта та ĕçлемест, укçа ăçтан тупать вăл?

ЛИДА. Ытлашши нумай пĕлет сан аçу.

МАРИНЕ. Вăл пурне те пĕлет. Ун магазинĕнче кунне мĕн чухлĕ çын пулать те…

ЛИДА. Пĕлсен те шарлас марччĕ. Çын çинчен япăх калаçни лайăх мар.

МАРИНЕ. Мĕншĕн калаçас çук? Мĕншĕн ялта юлма пурне те хĕтĕртсе ячĕ Иркка? Ашшĕ унăн ĕçке ернĕ. Çавăнпа ялта ĕçлеме юлать. Тепĕр тесен, ку – вĕсен ĕçĕ. Анчах та мĕншĕн-ха пирĕн ăна пула яла юлмалла? Пулмасть вăл!

ЛИДА. Вă-ăт мĕнле çын иккен эс, Марина.

МАРИНЕ. Ман шутпа, кăштах талант пуррисен пурин те вĕренме каймалла. Ялта ĕçлеме нимĕнле талант та кирлĕ мар.

ЛИДА. Суятăн, суятăн! Тĕрĕс мар!

МАРИНЕ. Ĕне сума та талант кирлĕ-и?

ЛИДА. Кирлĕ.

МАРИНЕ. Хур, чăх-чĕп, сысна пăхма та-и?

ЛИДА. Паллах!

МАРИНЕ. Култаратăн вара. Фермăри пылчăка çăрма вунă класс пĕтермеллехчĕ-ши?

ЛИДА. Санпа калаçса ывăнтăм, Марина. Урăх ӳкĕтлеместĕп сана.

ИРА *(шăппăн пырса кăшкăрса хăрататъ)*. Хо-оп!

МАРИНЕ *(шартах сиксе)*. Ну, Ира, çапла юрать-и вара?

ИРА *(кулать)*. Юрать, ялтан тарма ĕмĕтленекенсене хăратма юрать! Тĕрĕс, Маринка, тĕрĕс. Хула ял мар. Çавă, ман шутпа, лайăх та… Ял хăйĕн илемлĕхĕпе пуян…

МАРИНЕ. Пĕлетпĕр эпир çав «илемлĕхсене», çавăнпа çынсем çемйи-çемйипе хуланалла тараççĕ.

ИРА. Кам тарать?

МАРИНЕ. Сăмахран, Олимпия Порфирьевна. Паян-ыран çемйипех хулана куçса каяççĕ. Тĕрĕс тăваççĕ… Çавăн пек хĕрарăмăн тĕттĕм ялта пурăнмалла-и? Мĕнле илемлĕ тумланать, хитре юрлать, ăста ташлать.

ИРА. Кирлĕ-кирлĕ мара ан шухăшласа кăлар, Марине. Иван Иванович пирĕн ялтан нимĕнле хулана та куçса каймасть. Хăçантанпа кунта врачра ĕçлет те. Ăна пурте пĕлеççĕ, юратаççĕ.

ЛИДА. Петĕр те каймасть.

МАРИНЕ. Ытлашши нумай пĕлетĕр. Сиртен питех ыйтса тăраççĕ пуль. Кайма шухăш тытрĕç-тăк – каяççĕ, никамран та ыйтса тăмаççĕ. *(Ташланă пек туса çаврăнкаласа юрлать.)* «Буду я тоже генералом, буду я тоже генералом, если капрала, если капрала переживу…»

ИРА. Ан курнăçлан! Каяççĕ пулсан, çулĕ такăр пултăр, ирĕксĕр никама та тытса тăмаççĕ кунта. Ытлашши темех пур ĕнтĕ хулара? Кайччăр-иç.

МАРИНЕ. Телей, хаваслă пурнăç! Ак мĕн хулара.

ИРА. Телей тетĕн? *(Пауза.)* Эп телее урăхла ăнланатăп. Эп çак ялта çуралнă, çак каçма урлă шкула çӳренĕ, çак çырмара шыва кĕнĕ, çак çыранран сарă чечек татнă. Вĕсемсĕр пурăнаймастăп эпĕ. Вăт ăçта ман телей.

МАРИНЕ. Хулара пурăнса кур-ха, вара ăнланăн.

ЛИДА. Пирĕн те кĕçех пурте пулать: культура çурчĕ, универмаг, больница.

МАРИНЕ *(куларах).* «Пулать, пулать». Хăçан пулать-ха вăл? Хулара вĕсем тахçанах пур. Ăçта каяс килет, унта кай: опереттăна-и, цирка-и, музее-и.

ЛИДА. Эс тӳрех опереттăна, çапла-и?

МАРИНЕ. Мана кирек ăçта та хапăл тусах йышăнаççĕ. Мĕншĕн тесен эп хăшпĕрисенчен илемлĕрех…

ИРА. Марине! Халех каçару ыйт.

МАРИНЕ. Мĕншĕн вăл хăй малтан сăмах тĕкет?

ЛИДА. Эп кӳренместĕп, Ира. Марина сăнпа чăнах та хитре. Эпир, хитре маррисем, тен, чунпа…

МАРИНЕ. Каçар, Лида. Эп сана кӳрентерес тесе мар. Каçар, э?

ИРА. Ахалех тавлашатпăр эпир. Пирĕн ял, паллах, нихăçан та хулапа танлашаймасть… Кирлĕ те мар. Аслă урамсенче асфальт пултăрччĕ, çуран çӳрекенсем валли – тротуар пек çул. Тата кашни çурт умĕнче, пахчара чечексем ешерччĕр.

МАРИНЕ. Унтан пĕр-пĕр тракториста качча каятăн, унăн вараланса пĕтнĕ çипуçне çăватăн.

ИРА. Эпир прачечнăй тăватпăр. Кирлех пулсан, çуса та паратăп.

МАРИНЕ. Ху вара тепĕр вунă çултан карчăк пулса ларатăн…

ЛИДА. Ах, вăйлă çаптаратăн-çке! Маттур!

ИРА. Уçă сывлăшпа юратнă ĕç этеме питĕ час ватăлтарни çинчен ăçта, камран илтрĕн? Хулара, тен, тата иртерех ватăлатăн?

МАРИНЕ. Ватăлсан… Косметика мĕншĕн? Вăл пулăшнипе аллă-утмăл çулхисем çирĕм-вăтăр çулхисем пек курăнаççĕ. Кунта тутана сăрласан та, шурă курак çине пăхнă пек пăхаççĕ. *(Шухăша кайса.)* Хĕрсем, пĕлетĕр-и? Артистка пулас килет манăн. Тĕлĕкре час-часах хама Пысăк театр сцени çинче куратăп.

ИРА. Артистка пулма эсĕ питĕ çăмăл тетĕн-и? Пулас тени çеç сахал вăл, Марина.

МАРИНЕ. Эп театр институтне вĕренме кĕретĕп. Олимпия Порфирьевна мана пысăк артистка пулатăн тет.

ИРА. Институтра та сан пирки Олимпия Порфирьевна пек каласан питĕ аванччĕ.

МАРИНЕ. Калаççĕ. Эп шанатăп.

ИРА *(шухăшлăн).* Шанăçа çухатманнисем телейлĕ.

МАРИНЕ *(кулса ярать).* Театрта мана кĕтеççĕ, сансăр пĕтетпĕр теççĕ. Ха-ха-ха!

ИРА. Марина, ан курнăçлан.

МАРИНЕ *(çиллессĕн кулса).* Ма курнăçланас çук ман? Камран япăх эп?

ЛИДА. Çитет пуль, Марина!

МАРИНЕ. Юлташсем тесе сирĕнпе канашлама килтĕм. Эсир иксĕр те пĕр юррах юрлатăр. Ман ăшра мĕн пулса иртнине пĕлме тăрăшмастăр. Тен, эп тарăхнипе ялтан кайма шутланă?

ЛИДА. Тарăхнипе? Кама тарăхнă эс? Мĕншĕн ăна пирĕнтен пытаратăн?

МАРИНЕ. Пытарма шухăшламастăп, анчах сире каласа пани мĕн усси? Эсир пурпĕр ман чуна йăпатма, лăплантарма пултараймастăр.

ИРА. Сана йăпатни кирлĕ-и апла?

МАРИНЕ. Кирлĕ. Шутсăр кирлĕ. Мана, хитре те талантлă хĕрачана, никам та юратманни канăç памасть, тарăхтарать те тепер чухне.

ЛИДА. Марине, эс хуçкаланса, курнăçланса йăлăхмарăн-и?

ИРА. Чи хакли вăл – этем уçă чунлă пулни, юлташсенчен нимĕн те пытарманни.

ЛИДА. Тата кăмăллă пулни.

МАРИНЕ *(Ирăна тарăхса пăхса).* Вĕрентĕр, вĕрентĕр пурнăçран юлнă юлташăра. Эсир вĕт чи малти ретре.

ИРА. Хаяр та иккен эс, Марина.

МАРИНЕ. Тата мĕнле калаçмаллаччĕ ман санпа?

ИРА. Марина, эпĕ сан умра айăпа кĕнĕ пекех калаçатăн-çке?

МАРИНЕ. Тĕрĕс, эсĕ айăплă.

ЛИДА. Марина, чарăн! Халех чарăннă пултăр!

ИРА. Ан тив, калатăр.

МАРИНЕ. Калатăп! Эп Петĕре юрататăп! Эс ăна манран туртса илтĕн! Эсĕ…

*Каçма çинче Петĕр курăнса каять.*

ПЕТĔР. Эсир кунта-çке? Эп сире шкулта шыратăп. *(Хĕрсем патне пырать.)* Мĕн пирки тавлашатăр?

ЛИДА. Ним пирки те. *(Марине хăвăрт чупса тухса каять.)*

ПЕТĔР. Мĕн пулнă ăна?

ЛИДА *(хулпуççине хускатса).* Пĕлместĕп.

ПЕТĔР. Эп унран кăнтăрлах тĕлĕнтĕм. Ним тусан та трактор çине лармарĕ. Класри ачасенчен пĕр-пĕччен права илмесĕр юлчĕ.

ЛИДА. Ним сăлтавсăрах кутăнлашрĕ. Пирĕн, хĕрачасен, пулкалать ун пекки.

ПЕТĔР. Пурин те мар пулĕ тетĕп. Ун вырăнне эсир, ак, иксĕр те маттур! Çамрăк трактористсене чун-чĕререн саламлатăп.

ЛИДА. Эпир те сана саламлатпăр.

ПЕТĔР. Ира, эс кăмăлсăр пек, мĕн пулчĕ?

ЛИДА *(сăмаха урăх енне пăрса).* Эпир Ирăпа ирхине, асамат кĕперĕ айĕнчен чупса тухас тесе, ухмаха ернĕ пек чупрăмăр-чупрăмăр… Асамат кĕперĕ айĕнчен чупса тухаканăн ĕмĕчĕ пурнăçланать теççĕ.

ПЕТĔР. Чупса тухрăр-и?

ЛИДА. Ăна эпир хамăр çеç пĕлетпĕр. Ну, эп кайрăм.

ИРА. Эпĕ те пыратăп, пĕрле каятпăр.

ПЕТĔР. Ира… тăхта-ха пăртак?

ИРА. Лида, тăхта. Пĕрле каятпăр.

ЛИДА. Эп васкатăп, Ира. Халĕ те анне кĕтсе ывăнчĕ пуль. Эп паян килте те пулман.

ИРА. Ан кай, кӳренетĕп.

ЛИДА. Эп сана пĕччен хăвармастăп пуль. *(Шăппăн.)* Çапла кирлĕ. *(Хыттăн.)* Ан çилен, юрать-и? *(Каять. Пауза.)*

ПЕТĔР. Эп сана шкулта шырарăм. Тем вăхăтра тухса кайма ĕлкĕрнĕ эс… Асăрхаман та. Е сан асамлă çĕлĕк пур-и? Тăхăнатăн та, юмахри пек, курăнми пулатăн.

ИРА. Ăхă, тинех пĕлтĕн. Эп асамçă хĕр, хаяр фея, халиччен пĕлмен-и вара? Эп кам мĕн шухăшланине те йăлтах пĕлетĕп.

ПЕТĔР. Тĕрĕс мар. Эсĕ ырă кăмăллă фея. *(Сасартăк.)* Эп мĕн çинчен шухăшлатăп халь, кала?

ИРА. Эс ăна ху та лайăх пĕлетĕн.

ПЕТĔР. Апла пулсан кала: мĕн çинчен шухăшлатăп эп?

ИРА. Ху кала, ма ман сан шухăшна каламалла?

ПЕТĔР. Хал çитмест. Хăравçăсене эсир, хĕрсем, юратмастăр, çапла-и?

ИРА. Тĕрĕс, юратмастăп.

ПЕТĔР. Апла пулсан, юратман çынна ун çинчен мĕн шухăшланине йăлтах калама юрать.

ИРА *(тăхтасан.)* Калатăп. Халь эс мана ху яла ĕçлеме юлманни пирки пĕлтересшĕн. Анчах та хăяймастăн. Мĕнле, пĕлтĕм-и?

ПЕТĔР *(шăппăн).* Çук, пĕлмерĕн. Эп ун çинчен мар, эп сана пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп. Çав юрату çинчен шухăшларăм халь.

ИРА *(кăштах кăшкăрса яраймасть, çăварне аллипе хуплать).* Ан хăйнă пултăр, Петĕр! Илтетĕн-и? Ан хăйнă пултăр!

ПЕТĔР. Эс йĕретĕн мар-и?

ИРА. Ан тĕкĕн мана! Ил аллуна! Ан тĕкĕн! Кай!

ПЕТĔР. Эп ятарласа санпа калаçасшăн килтĕм те, эс хăвалатăн мана халь.

ИРА. Пӗтӗм класа улталама пултарни ҫинчен-и?

ПЕТӖР. Хальлӗхе эпӗ никама та улталаман, Ира.

ИРА. Ӗненместӗп, Петӗр, ӗненместӗп. Сӑмахпа кӑна паттӑр иккен эс. Икӗ енлӗ те ҫаптаратӑн пулсан, кам вара эс? Мӗнле ҫын?

ПЕТӖР. Ыттисем пек ҫынах…

ИРА. Мӗнле ыттисем пек? Эпӗ шутланӑччӗ…

ПЕТӖР. Мӗн шутланӑччӗ – кала!

ИРА. Калатӑп. Пӗтӗмпех калатӑп. *(Пауза.)* Ирхине аннӳ – эс Мускаври университета кӗме шухӑш тытни ҫинчен каларӗ. Ӗненесех килмерӗ ӑна ман ун чухне. Халь ыттисем те ҫавнах калаҫҫӗ.

ПЕТӖР. МГУра вӗренме чӑнах та шут тытнӑ пулсан? Преступлени туни пулать-им? Усал ӗҫ туни-и?

ИРА. Хӑҫан кун пек шухӑш тытрӑн? Хӑҫан? Ӗнер-и е виҫӗмкун-и? Е паян ирхине? Ма чӗнместӗн? Кала?

ПЕТӖР. Хӑҫан пулсан та пурӗпӗр мар-им?

ИРА. Пухура чухне мӗншӗн класӗпех яла ӗҫлеме юлатпӑр тесе сасӑлама хӑйрӑн? Кала-ха, мӗнле? Путсӗрле пулать вӑл! Нивушлӗ ҫакна ӑнланаймастӑн!

ПЕТӖР *(тарӑхса).* Ӑнланатӑп. Арпашӑнса кайрӑм ӗнтӗ эп. Мана икӗ пая уйӑраҫҫӗ. Анне пӗр еннелле, эсӗ ачасемпе пӗрле тепӗр еннелле туртатӑн.

ИРА. Ай-уй, мӗскӗнскер! Мӗскӗн ача. *(Ҫирӗппӗн татса.)* Эпир ачасемпе сана ниҫта та, нихӑш еннелле те туртмастпӑр. Унтан та ытларах эсӗ халь кӑмӑл тусан та, эпир сана илместпӗр. Пире сан пеккисем кирлӗ мар.

ПЕТӖР. Кирлӗ мар?.. Сана та-и? *(Ира тухса кайма тӑрать.)* Ира! Ира! Тӑхта-ха, тӑхта! *(Чупса ҫитсе Ирӑна чарать, Ира каясшӑн, Олимпия кӗрет.)*

ОЛИМПИЯ. Лекрӗр-и, кӑвакарчӑнсем! *(Ирӑна.)* Хӗр чухне эпир каччӑсене алла илме тӑрӑшса вӗсен хыҫҫӑн чупман.

ПЕТӖР. Мӗн калаҫатӑн эс, анне? Кай, пире иксӗмӗре ҫеҫ хӑвар, ыйтатӑп, кай, тархасшӑн.

ОЛИМПИЯ. Турӑҫӑм! Тӑван амӑшне хӑвалать ку! Курӑр-ха, тӑван амӑшне ним вырӑнне хумасть.

ПЕТӖР. Анне, чарӑн! Чарӑнсам…

ОЛИМПИЯ. Чӑртмах! Аннӳпе ҫапла калаҫатӑн-и? *(Ирӑна.)* Эсӗ-им-ха, чиперккеҫӗм, ман ывӑлӑма амӑшпе ҫакӑн пек калаҫма вӗрентетӗн? Э? Эпӗ сана ыррӑн асӑрхаттарса калатӑп, ман ывӑл пуҫне ан пӑлхат! Аттестат илсен вӑл ялта пӗр кун та тӑмасть. Тепӗр куннех, ҫав кунах вӗренме тухса каять, хам ӑсатatӑп, ҫавна пӗл! Сана кунта ялта килӗшет пулсан, пурӑн киленсе, уҫӑ сывлӑшпа сывласа. *(Петӗре.)* Эп санпа килте калаҫӑп-ха. *(Ирӑна.)* Эс, эс ман ывӑл ҫумне текех ан ҫыпӑҫ. Намӑссӑр!

ПЕТӖР. Анне! Тепӗр сӑмах хушсанах…

ИРА. Мӗншӗн кӑшкӑратӑр эсир мана? Мӗншӗн кӳрентеретӗр? Мана сирӗн Петӗрӳ кирлӗ мар! Кирлӗ мар! *(Чупса тухса каять.)*

ПЕТӖР. Ира, Ира, каялла таврӑн! *(Ира хыҫҫӑн чупса тухса каять.)*

ОЛИМПИЯ. Ну, тӑхта, ывӑлӑм, ӳкӗнмелле ан пултӑр! *(Каять. Тӑхтасан Еленӑпа Максим кӗреҫҫӗ.)*

ЕЛЕНА *(чарӑнса).* Илемлӗ вырӑн…

МАКСИМ. Каҫ пулас умӗн пушшех. Эпӗ ӗнтрӗк вӑхӑтне питӗ юрататӑп. Пур тавралӑх уҫҫӑн, витӗрех курӑннӑ ҫӗртен – майӗпен кӗтмен ҫӗртен тӗттӗмпе витӗнеҫҫӗ.

ЕЛЕНА *(кударах).* Математик кун пек калаҫма пӗлнинчен кӑштах тӗлӗнмеллерех…

МАКСИМ. Математикӑна кичем наука теҫҫӗ. Апла математикӑн та кичем пулмалла-и? Математикӑсӑр пуҫне эп географине, историне, литературӑна юрататӑп. Анчах математика – тӗп предмет. Унсӑрӑн пурнӑҫ малалла каяймасть, наука та пӗр вырӑнта тӑнӑ пулӗччӗ.

ЕЛЕНА. Эсир математик-лирик, Максим Максимович. Унпа сирӗн кружока шкул ачисем юратсах ҫӳреҫҫӗ. Математикӑна пур предметпа та ҫыхӑнтарма пултаратӑр. Литературӑпа та, географипе те…

МАКСИМ. Тӗрӗс. Пӗлетӗр-и? Ҫӗршер, пиншер математик географине пулӑшать. Ак метеорологипе океанологинех илер-ха. Ученӑйсем тунӑ уравненисемпе компьютерсем

планетипех мĕнле çанталăк пулассине, океансем ăçталла юхнине, пĕтĕм тинĕс экваторинче шыв хăпарнипе чакнине тата ыттисене те пĕлеççĕ.

ЕЛЕНА. Чăнах, Максим Максимович. Математика пулмасан, космоса та вĕçеймен пулăттăмăр. Сăвăçсем те ун çинчен сăвăсем çыраймастчĕç. Паллах, пĕтĕм пурнăç вăл предметпа çыхăннă. Пурнăç çĕнелсех пырать. Эпир ватăлса пыратпăр ак. Шутлатăп та, шкул директорĕ манăн мар, сирĕн пулмалла, Максим Максимович.

МАКСИМ. Çук, Елена Тимофеевна. Мана иртерех-ха ун пек ĕç йышăнма. Пурнăçа та сахал пĕлетĕп, опыт та çук.

ЕЛЕНА. Пурнăçа пĕлни… Пурăнăç… *(Шухăшлăн.)* Сирĕн çулсенче чух, Максим Максимович, çак йăмра айĕнче эпир те Иван Ивановичпа сахал мар пурнăç çинчен тавлашаттăмăр. Эсир ăна пĕлетĕр. Вăл халь больницăра главнăй врач…

МАКСИМ. Петя Орешин ашшĕ-и?

ЕЛЕНА. Çавă. Унпа калаçма интереслĕччĕ. Питĕ мал ĕмĕтлĕччĕ вăл.

МАКСИМ. Эсир унпа туслă пулнă эппин.

ЕЛЕНА. Аха, юлташла туслăхчĕ пирĕн. Савма эп Афанасие саваттăм. Ну, ун çинчен калаçмăпăр, сăмах май кăна тухса кайрĕ ман. *(Петĕр чупса кĕрет.)*

ПЕТĔР. Елена Тимофеевна, эсир Ирăна курман-и?

ЕЛЕНА. Шкулта курнăччĕ, кăнтăрла. Мĕн пулнă?

ПЕТĔР. Ниçта та тупаймастăп, кӳренчĕ те таçта тарса пытанчĕ…

МАКСИМ. Эс кӳрентертĕн-им ăна?

ПЕТĔР. Эпĕ… Тата ман анне…

ЕЛЕНА. Мĕнле пулса тухрĕ-ха апла?

ПЕТĔР. Мĕн… Юрататăп терĕм… Мускава вĕренме каятăп терĕм…

ЕЛЕНА. Тупасчĕ ăна, Максим Максимович, пулăшăр.

МАКСИМ. Тупатпăр, Елена Тимофеевна, тем пулсан та тупатпăр. *(Петĕре.)* Атя! Орешин. *(Каяççĕ. Елена ерипен кимĕ çине ларать.)*

ЕЛЕНА. Ирочка, хĕрĕм, çавнашкалах кӳрентерчĕç-и сана? Ăçта халь эс? *(Сиксе тăрать.)* Шырас, шырас пулать… мĕн туса ларатăп-ха эп.

*Çутă сӳнет.*

*Шыв хĕрринчи хăвалăх. Каç тата ытларах тĕттĕмленет.*

ПЕТĔР *(чупса кĕрет).* Ира! Ăçта эс? Ира-а-а!

МАКСИМ *(Петĕре хирĕç кĕрет).* Çук-им? Тупаймарăн-им? *(Кăшкăрать.)* Ир-и-ина!

ЕЛЕНА *(тайкаланса кĕрет. Вăл халран кайнă).* Хĕрĕм, хĕрĕмçĕм… Иринушка.

МАКСИМ *(Петĕре).* Тен, килте вăл?

ПЕТĔР. Çук, килте те çук… Эп кайса килтĕм.

МАКСИМ. Шырамалла, шырас пулать… Шырар. *(Максимпа Петĕр ик еннелле тухса каяççĕ.)*

ЕЛЕНА. Ирочка, ăçта пытантăн эс? Çав териех кӳрентерчĕ-им сана? *(Тухса каять. Ира пытанса ларнă çĕртен тухса амăшĕ хыççăн чупасшăн пулать те, Олимпия Порфирьевнăна курсан чарăнать.)*

ОЛИМПИЯ. Петро! Петро! Ăçта кайса кĕтĕн эс? Ан асаплантарсам хăвăн аннӳне. *(Олимпия каять, сасси те илтĕнми пулать. Карçынкка йăтса Афанасий кĕрет, вăл кăштах сыпнă.)*

АФАНАСИЙ *(хăй тĕллĕн).* Олимпие тарăхнипе ĕçрĕм халь. Мур хĕрарăмĕ, мĕнлерех пӳтсĕр вăл. Çук, текех ĕçсе хамран култармастăп. *(Такăнса ӳкет, карçынкки шыв хĕрринелле кусса каять. Шыв шăмпăртатни илтĕнет.)* Вăт хăятмат! Ку йытă çурине çăлаймарăм ĕнтĕ паян. *(Тăрса çыран хĕррипе чупкалать.)* Карçынкккана хам ятарласа шыва пенĕ пек пулса тухрĕ халь. Йăлтах эрехе пула… Ĕçекен çын сăлтавне тупать тесе тĕрĕсех каланă çав. Эпĕ те сăлтавне тупрăм ав.

ИРА *(пытаннă çĕртен тухать).* Атте, йытă çури шыва путать вĕт!

АФАНАСИЙ *(айăплăн).* Эп ун пек тăвасшăн марччĕ, хĕрĕм… Эп айăплă. Эп сана валли парне пултăр тенĕччĕ. Ăçта кайрăн эс? Хĕрĕм? Ан хăйнă пултăр? Авăр унта! Шывĕ пăр пек сивĕ… *(Ира шыв хĕррине чупать. Шыва йытă çурине çăлма сикет. Афанасий шыв хĕрринче ним тума пĕлмесĕр чупса çӳрет… Ларса аттине хывма тытăнать.)*

АФАНАСИЙ. Хӗрӗм, эп халех… халех… Тытӑнса тӑр! Халех… кӑштах, кӑштах тытӑнса тӑр! *(Шыва сикет.)*

ИРА САССИ. Атте! Эс ӳсӗр! Путатӑн! Атте!

*Ҫутӑ сӳнет. Чаршав.*

## ИККӖМӖШ ПАЙӖ

*Олимпия Порфирьевна пурӑнакан пӳлӗм.*

ОЛИМПИЯ *(гитара калать. Чуна пырса тивмелле кӗвӗ янӑрать).* Ҫак юррӑн сӑмахӗсене пӗлетӗн-и?

МАРИНЕ. Пӗлетӗп. Анчах та эп япӑх юрлатӑп.

ОЛИМПИЯ. Ытлашши сӑпайлӑ-ҫке, хӗрӗмҫӗм. Санӑн сассу питӗ илемлӗ, хӑлху ҫивӗч. Юрла-ха, юрла. И-и-и!

МАРИНЕ *(юрлать).* А где мне взять такую песню,
И о любви, и о судьбе.
И чтоб никто не догадался,
Что эта песня о тебе.

ОЛИМПИЯ. Чаплӑ, питӗ чаплӑ, тӗлӗнмелле лайӑх юрлатӑн!

МАРИНЕ. Каларӑр та, Олимпия Порфирьевна!

ОЛИМПИЯ. Эп хам мӗн каланине чухлатӑп. Талантлӑ хӗрача эс. Аҫуна хунӑ пулас. Аҫу та сан хӑйне евӗрлӗ талант! Питӗ хисеплетӗп эп ӑна.

МАРИНЕ. Вӑл та сире хисеплет. Сире вӑл пысӑк чунлӑ ҫынна ӑнланакан ҫепӗҫ хӗрарӑм тет…

ОЛИМПИЯ. Тавтапуҫ, хӗрӗм. Эс мана ҫав тери савӑнтартӑн. Сан аҫу сӑмахӗ маншӑн ылтӑнпа пӗрех. Атту ҫак Ирӑпа пулса тухнӑ истори хыҫҫӑн ял халӑхӗ ҫисе яратех пуль терӗм. Пӗтӗмпех эп айӑплӑ пек… Мана айӑплама мӗн тунӑ вара эп? Мӗн шухӑшланине ҫеҫ каларӑм. Ав, мӗнле тӗрӗслӗхе юратмаҫҫӗ ҫынсем. *(Пауза.)* Эс паян Ира патӗнче пултӑн-и?

МАРИНЕ. Пултӑм. Питӗ япӑх, вайсӑр… Врачсем кризис иртсе кайнӑ теҫҫӗ.

ОЛИМПИЯ. Иван Иванович каларӗ-ха. Мӗн калаҫрӑр? Малалла мӗн тума шутлани ҫинчен тапратмарӗ-и? Петӗр ҫинчен асӑнмарӗ-и?

МАРИНЕ. Ун пек-кун пек калаҫман эпир. Вӑл ытларах уроксем пирки сӑмахлать. Ачасенчен юласран хӑрать. Больницӑна учебниксем илсе пыма ыйтать.

ОЛИМПИЯ. Характерӗ пур вара, нимӗн те калаймӑн.

МАРИНЕ. Ой, мансах кайнӑ! Атте калама хушнӑччӗ. Сельмага мамӑк тутӑрсем илсе килнӗ терӗ. Сирӗн валли виҫӗ тутӑр хӑварнӑ.

ОЛИМПИЯ. Оренбург тутӑрӗсем-и?

МАРИНЕ. Ӑхӑ.

ОЛИМПИЯ *(шухӑшласа).* Хм… Мана тӑваттӑ кирлӗччӗ те… Тӑваттӑ илме пулмасть-ши? Манӑн хулара парне памалли ҫынсем пурччӗ.

МАРИНЕ. Пулать, пулмасӑр. Калаҫмалли те ҫук, халех аттене калатӑп.

ОЛИМПИЯ. Питӗ аван. Ӑслӑскер эс, Маринка. *(Пауза.)* Эс вӗренме ӑҫта каясшӑнччӗ-ха?

МАРИНЕ. Эп театрпа музыка тата кино институтне каясшӑн.

ОЛИМПИЯ. Тӗрӗс, питӗ тӗрӗс шухӑшлатӑн. Сан талантупа, сан сӑнупа, сан пӗвӳ-сийӳпе шӑпах унта каймалла. Тепӗр пилӗк-ултӑ ҫултан тӗнчипе паллӑ артистка пулатӑн.

МАРИНЕ. Тен, Мускава ГИТИСа каяс? Петьӑпа пӗр хулара вӗренеттӗмӗрччӗ. Эсир хирӗҫ мар-и?

ОЛИМПИЯ. Мӗншӗн хирӗҫ пулмалла-ха? Эп сана института кӗме пулӑшайӑп-шӑ. Адрес пама пултаратӑп. Ман унта пӗр ҫывӑх паллакан хӗрарӑм пур. Вӑл сана, кирлӗ пулсан, момент хваттер тупса парать. Хӑш районта пурӑнас килет, унта тупса парать, суйла кӑна… Тӑрӑшнӑшӑн, паллах, ӑна…

МАРИНЕ. Ӑна-кӑна чухлатпӑр ӗнтӗ. Атте маншӑн нимӗн те шеллемест.

ОЛИМПИЯ. Тӗрӗс, питӗ тӗрӗс тӑвать. Вӗренме каймаллах сан. Ытти юлташусене ан пӑх. Каяҫҫӗ-и вӗсем, каймаҫҫӗ-и, вӑл вӗсен ӗҫӗ. Кайран хӑйсемех чавсисене ҫыртасшӑн пулӗҫ те… Ашшӗ-амӑшӗсемпе калаҫман-туман, класӗпех ялта юлма йышӑннӑ.

МАРИНЕ. Ухмахлантӑмӑр ҫав, асӑнас та килмест. Кашниех ӑслӑ пуласшӑн, хӑйне кӑтартасшӑн…

ОЛИМПИЯ. Çапла çав, çапла.

МАРИНЕ. Ман пирки кирек мĕн калаччăр, эп пурпĕрех вĕренме каймасăр юлмастăп. Тĕрĕс-и, Олимпия Порфирьевна? Мускавра эп, тен, качча тухатăп. *(Пауза.)* Петя сирĕн ниçта та каймасть теççĕ. Тĕрĕсех-ши?

ОЛИМПИЯ. Çапла çав, çапла. Мăкла вăкăр пек… каласа та тăна кĕресшĕн мар.

МАРИНЕ. Вăл яла ĕçлеме юлатпăр тесе пуринчен малтан алă йăтрĕ. Кама улталас тенĕ, сире-и е Ирăна? *(Лида кĕрет.)*

ЛИДА. Сывлăх сунатăп, Петĕр çук-им?

ОЛИМПИЯ. Салам, Лидочка. Петĕр çук-ха. Кăштах пирĕнпе калаçса лармастăн-и?

ЛИДА. Кăштах ларма пултаратăп.

МАРИНЕ. Олимпия Порфирьевнăпа класри пуху çинчен калаçрăмăр. Петя пуринчен малтан алă йăтрĕ, çапла-и?

ЛИДА. Çук, иккĕмĕш. Малтан Ира сасăларĕ – унтан Петя.

ОЛИМПИЯ. Класа хирĕç пырайман ĕнтĕ.

ЛИДА. Ячĕшĕн çеç йăтнă тетĕр-и?

ОЛИМПИЯ. Ячĕшĕн çеç-и, ячĕшĕн çех мар-и, вăл ниме те пĕлтермест, Лида. Петя ачаранах Мускаври университета вĕренме кайма ĕмĕтленет. Шухăшла-ха эс, Лида. Çавăн пек ĕмĕтленсе пурăннă хыççăн, ăçтан ялта юлтăр-ха вăл?

ЛИДА. Апла вăл икĕпитлĕ…

ПЕТĔР *(кĕрет).* Калаçу ман çинчен пырать-и?

ОЛИМПИЯ. Сан çинчен калаçмасан, пирĕн урăх калаçу çук-им? Ăçта çухалса çӳрерĕн?

ПЕТĔР. Оранжерейăра пултăм. Ира больницăран тухиччен эп ун вырăнне ĕçлетĕп. Уроксене унпа пĕрле больницăра хатĕрлетĕп.

ОЛИМПИЯ. Ара çав, çак çеç çитменччĕ… Оранжерейăна чупнипе çитмест-им? Паян-ыран экзамен…

ПЕТĔР. Экзамена эпир, анне, Ирăпа хатĕрленетпĕр.

ОЛИМПИЯ. Ашшĕ пекех кутăн. Мĕн тума кирлĕ сана оранжерея? Чечек юратмастăп тесе ху каларăн-çке?

ПЕТĔР. Мĕнле чечек? Пирĕн оранжерейăра, анне, пачах урăх çĕрте ӳсекен чечексем… Эпир вĕсене Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне Шупашкара ăсататпăр. Вăрçă ветеренĕсем валли. Акă мĕншĕн оранжерейăра пурте тăрăшса ĕçлетпĕр. Халь пире Афанасий Александрович та пулăшать.

ОЛИМПИЯ. Сирĕн оранжерейăрта мĕн шăрши ытларах кĕрет вара, чечек шăрши-и е эрех шăрши? *(Кулать.)*

ПЕТĔР. Афанасий Александрович халь пĕр тумлам эрех ĕçмест. Çине тăрса ĕçлет вăл. Урăх ĕçместĕп тесе Ирăна сăмах панă.

ОЛИМПИЯ. Фантазер! Эс, Петя, питĕ ырă кăмăллă, анчах та айван ача. Ун пек каланăшăн ан çилен мана. Аннӳсĕр пуçне кам сана тĕрĕсне калатăр, ывăлăм?

ПЕТĔР. Ман паян кăмăл калама çук лайăх. Юрлас та ташлас, ташлас та юрлас килет. Тархасшăн, çав ырă кăмăла ан пăсăр. *(Хĕрачасене.)* Эсир, хĕрсем, мĕншĕн хурлăхлă?

МАРИНЕ. Сана итлетпĕр, эс калаçнине. Чечек çинчен ытла та хитре калатăн.

ОЛИМПИЯ. Турăçăм! Тупнă калаçмалли! *(Петĕре.)* Сан Петĕр, пĕлĕтре вĕçсе çӳремелле мар, хăвăн пуласлăх пирки ытларах шухăшламалла. *(Тепĕр пӳлĕме тухать.)*

ПЕТĔР *(кулать).* Ира ятне илтсенех аннен мигрень. *(Шухăшласа.)* Нивушлĕ халĕ те ăнланмарĕ вара? *(Лида та, Марине те чĕнмеççĕ.)*

*Çутă сӳнет.*

*Больницăри палата. Ира кровать çинче выртать. Юнашар пукан çинче Елена Тимофеевна ларать.*

ИРА. Анне, киле кай эс.

ЕЛЕНА. Кăштах ларатăп та каятăп.

ИРА. Миçе каç çывăрмастăн ĕнтĕ эс. Хама халь лайăх туятăп, анне, кай, кайса çывăр.

ЕЛЕНА. Каятăп ĕнтĕ халь, кĕçех каятăп.

ИРА. Иван Иванович тĕлĕнмелле чаплă врач, çапла-и?

ЕЛЕНА. Вăл та икĕ каç куç хупмарĕ. Сан патăнтах ларса ирттерчĕ.

ИРА. Атте мĕнле?

ЕЛЕНА. Вăл пуринчен ытларах асапланать. Мастерскойĕнче ĕçлет, оранжерейăра сан тусусене пулăшать.

ИРА. Мĕншĕн ман пата пĕрре те килмест?

ЕЛЕНА. Именет. Ман пирки чирлесе ӳкрĕ тесе питĕ кулянать.

ИРА. Йыт çури мĕнле? Пурăнать-и?

ЕЛЕНА. Чĕртрĕмĕр. Вылять ĕнтĕ.

ИРА. Юрать-ха, карçынккине лайăх çыхнă, тухса ӳкетчĕ атту.

ЕЛЕНА. Текех асăнар мар ун çинчен, хĕрĕм.

ИРА. Юрать, асăнмăпăр, анне… *(Алăка шаккаççĕ.)* Атте мар-ши? Кĕрĕр. *(Палатăна Лида кĕрет. Вăл Ира выртакан çĕре пырать те çаврăнса тăрса йĕрет.)* Мĕн пулчĕ, Лида? Ма макăратăн?

ЛИДА. Савăннипе эп, савăннипе, Ирочка.

ЕЛЕНА *(Лидăна кровать хĕррине лартать).* Лар, Лида, лар. Ура çинче тĕрĕслĕх çук тенĕ ваттисем.

ИРА. Лида, сан тĕкĕр çук-и?

ЛИДА. Пĕлнĕ пекех чиксе килтĕм. *(Ирăна тĕкĕр парать.)*

ИРА *(тĕкĕр илсе пăхать).* Кăштах начарланнă эп.

ЛИДА. Начарланмасăр, мĕнле йывăр чирлесе вывртрăн та. Мана эс халь тата ытларах хитреленнĕ пек туйăнать. Аха, аха…

ИРА. «Начарланнă… хитреленнĕ»… Каларăн та.

ЛИДА. Юрĕ ĕнтĕ, пытар тĕкĕрне. Парса хăваратăп. Эпир кайсан мĕн чухлĕ пăхас килет, çавăн чухлĕ пăх. Ман сан валли пĕр сюрприз пур. Пĕл, мĕнлескер?

ИРА. Çыру пулĕ.

ЛИДА. Кур-ха, пĕлчĕ вĕт! *(Çыру парать.)* Болгарирен.

ИРА *(вулать).* «Сан çинчен «Ровесник» журналта вуласа пĕлтĕмĕр. Эпир санпа çыхăну тытасшăн. Роза чечек вăррине сан пата ятăмăр. *(Савăнса.)* Ку чăн та сюрприз-тăк сюрприз. Тавтапуç, Лида. Анне, мĕн эс, мĕн пулчĕ?

ЕЛЕНА. Хам та пĕлместĕп… Темшĕн чун хурланчĕ.

ИРА *(амăшне ыталать).* Аннеçĕм, хаклă аннеçĕм! Эпĕ сывалатăп, кĕçех сывалса тухатăп… Ан пăшăрхан.

*Çутă сӳнет.*

*Сад. Темиçе сак. Пĕрин çинче Олимпия ларать. Больницăран Елена тухать.*

ОЛИМПИЯ *(тăрса Еленăна хирĕç пырать).* Аван-и, Елена Тимофеевна.

ЕЛЕНА. Салам, Олимпия Порфирьевна.

ОЛИМПИЯ. Мĕскĕн Ирочка, мĕскĕн хĕрача. Паян-ыран экзамен, вăт кĕтмен инкек. Ылтăн медаль кам илĕ-ши ĕнтĕ? Кам тивĕçлĕ пулĕ-ши? *(Елена пĕр сăмах чĕнмесĕр иртсе каять.)* Эсир ман Петьăна курман-и?

ЕЛЕНА. Курман.

ОЛИМПИЯ *(Елена хыççăн утать).* Вăл кунта килчĕ терĕ те Марине.

ЕЛЕНА. Пĕлместĕп. Курман.

ОЛИМПИЯ, Эсир, мĕн-и, больницăрах çывăратăр-им?

ЕЛЕНА *(чарăнать).* Сире мĕн? Эп ăçта çывăрсан та пурĕпĕр мар-и?

ОЛИМПИЯ. Иван Иванович виçĕ каç килте çывăрмарĕ.

ЕЛЕНА. Мĕн каласшăн вара эсир?

ОЛИМПИЯ. Ун кабинетĕнче диван пур… Эсир ăна пĕлместĕр-им?

ЕЛЕНА *(çилĕпе).* Эсир… Эсир… Мĕн каласшăн?

АФАНАСИЙ *(пырать).* Лена, кирлĕ мар, ан çыхлан. Эх, Олимпия Порфирьевна, сана пĕр-ик сăмах питĕ калас килет те – Иван Ивановича хисепленипе çех тытăнса тăратăп.

ОЛИМПИЯ. Калăр, ма каламастăр? Сирĕн хĕрĕре вилĕмрен çăлнă врач арăмне тав тăвас вырăнне – кӳрентерĕр.

ЕЛЕНА. Атя, Афанасий, кайрăмăр, ан çыхлан. *(Еленăпа Афанасий каяççĕ.)*

ОЛИМПИЯ. Куртăр-и, мĕнле çынсем пулаççĕ тĕнчере? Мĕнле те пулин хытăрах ыраттармалла калама çех тăрăшаççĕ. Ну, Иван, эпĕ сана текех алхастармастăп! Эп сана эрнипе

киле таврăнмасăр пурăнма лайăх вĕрентетĕп-ха! Эп сана рецепт çырса паратăп-ха… ĕмĕр апчхулатса çӳрĕн-ха! *(Больница еннелле çирĕппĕн утса каять.)*

*Çутă сӳнет.*

*Иван Ивановичăн больницăри кабинечĕ. Иван Иванович ĕçлесе ларать. Олимпия кĕрет.*

ОЛИМПИЯ. Ларатăн-и-ха? Çыратăн-и? Сан арăмунтан кулаççĕ, мăшкăллаççĕ!.. Эс мĕншĕн ку дивана хăвăн кабинетна лартнă? Мĕншĕн? Кала-ха, мĕншĕн?

ИВАН. Хуллентерех, кунта пасарта мар, больницăра эс, шăппăнрах калаç.

ОЛИМПИЯ. Эс сăмаха аяккалла пăрса ан яр, кала, мĕншĕн ку диван сан кабинетра ларать?

ИВАН. Мĕн çыпăçрăн эс çак диван çумне? Кĕртсе лартнă та – ларать…

ОЛИМПИЯ. Мĕн тума сана кирлĕ пулчĕ вăл?

ИВАН. Тĕлĕнмелле ыйту паратăн эс, Липа. Вăл ĕмĕрех ларнă. Эп врач, ăнланатăн-и? Врач! Ман пата чирлисем килеççĕ, ман вĕсене йышăнмалла-и, çук-и?

ОЛИМПИЯ. Ширма хыçĕнче кушетка çитмест-и?

ИВАН. Хăшпĕр чухне хам та выртса канатăп. Йывăр чирлисем пулсан, талăкĕ-талăкĕпе больницăран тухаймастăн, хăвах пĕлен.

ОЛИМПИЯ. Çапла пулмасăр, пĕлетпĕр мĕнле йывăр чирлисем лекнине. Миçе каç киле пымарăн халь, кала-ха?

ИВАН. Виçĕ каç. Кун пекки сайра пулать. Аран-аран çăлса хăвартăмăр.

ОЛИМПИЯ. Ирина ӳпке шыççипе выртрĕ тейĕпĕр. Эс ăна вилĕмрен çăлтăн… Елена Тимофеевна мĕн чирĕпе выртрĕ тата, ăна мĕнле чиртен çăлса хăвартăн?

ИВАН. Мĕнле, мĕнле чир? Унăн хĕрĕ чирлĕ!..

ОЛИМПИЯ *(куççуль витĕр).* Еленăна мар, мана качча илнипе паян кун та асапланатăн эс.

ИВАН. Мĕн сӳпĕлтететĕн çак? Эпир санпа пĕтĕм пурнăçа пĕрле пурăнса ирттертĕмĕр. Мĕн пек ывăл çуратса ӳстертĕмĕр?

ОЛИМПИЯ. Пăх-ха ăна, вăл ывăл пăхса çитĕнтернĕ! Вăл пăхнă! Вăл çитĕнтернĕ! Эс пĕрле ларса пĕр вунă сăмах калаçнă-и ывăлупа? Сан пуçунта больница та чирлисем анчах. Çук сан çемье, маннă эс ăна… Эс çемье çинчен тахçанах шухăшлама пăрахнă.

ИВАН. Кирлĕ-кирлĕ мара ан калаç-ха.

ОЛИМПИЯ. Çапла-çке, çапла! Петĕр ялта ĕçлеме юласшăн. Ирăран уйрăлаймасть. Эп ăна ял çынни пулма пăхса ӳстермен… Эп сире иксĕре те лайăх пултăр тесе мĕн чухлĕ тăрăшман пуль, пĕтĕм çамрăклăха сире панă… Эсир мана иксĕр те суратăр. Эп сана та, Петĕре те кирлĕ мар иккен. Ăслă-пуçлă ача хĕре пула вĕренме каймасăр юлать-и? Мĕн тупрĕ вăл çав Ирина çумĕнче?

ИВАН. Вĕренес килмесен ирĕксĕр хĕнесе вĕрентейместĕн, амăшĕ. Вĕренме ячĕшĕн мар, чун туртнипе вĕренмелле, юратнă професси суйласа илмелле. Çавăн чухне тин вĕреннин усси пулать.

ОЛИМПИЯ. Вĕрентетĕп, мĕнле вĕрентетĕп-шă! Математик, математик вăл пирĕн. Çав енĕпе вĕренмелле те унăн.

ИВАН. Ман шухăшпа, сан ăна ирĕксĕрлемелле мар. Ялта ĕçлес тет пулсан, ĕçлетĕрех.

ОЛИМПИЯ. Ăхă, ăхă, тракторпа силленсе çӳретĕрех.

ИВАН. Итле, эп ывăлăма апла та капла та ирĕксĕрлеместĕп. Вăл каччă ĕнтĕ. Иринăпа туслă пулни лайăх тесе шутлатăп. Вăл лайăх хĕрача.

ОЛИМПИЯ. Ой-ой! Каласа тултарчĕ… Эс ашшĕне пăх-ха, кам вăл? Ĕçке ернĕ çын, çапкаланчăк!

ИВАН. Каллех йăнăшатăн. Ку кунсенче эп унпа пĕр хут çеç мар тĕл пулса калаçрăм. Ĕçмест вăл халь. Малтан ĕçнишĕн те шутсăр кулянать. Вăл пĕтнĕ çын мар.

ОЛИМПИЯ. Аха çав. Миçе çул ĕнтĕ йĕркеллĕн урăлса кураймасть.

ИВАН. Атя, урăх калаçмăпăр ун пирки. Эп сана татăклăн калатăп: Петĕр шухăшне ырлатăп эп. Пĕр-ик çул ял халăхĕпе пĕрле ĕçлени уншăн усăллă та. Ытти çамрăксемшĕн те çавах. Пирĕн Петĕр математикăпа вăйлă пулсан, ыттисем урăх предметпа вăйлă. Пурпĕр яла юлаççĕ. Петĕрĕн мĕншĕн уйрăм пулас?

ОЛИМПИЯ. Тавтапуç, ăпплантартăн. Халĕ ĕнтĕ мана итле. Эс мана лайăх пĕлетĕн. Эп вилсен те хам шухăша пăрахмастăп. Пĕртен-пĕр ывăлăма ĕмĕр тӳрлетме çук йăнăш тума памастăп. Петĕрĕн вуннăмĕш класс ылтăн медальпе пĕтермелле. Вара ăна ялта юлма намăс

пулĕ. Ун чухне ăна малалла вĕренме кайсан та сивлекен пулмĕ. Юлташĕсем те тĕрĕс тăвать Петĕр тейĕç.

ИВАН. Кала ăна эппин, ылтăн медаль илме тăрăштăр.

ОЛИМПИЯ. Арăмунтан ан кул, Иван. Ылтăн медаль илес тесен – лайăх вĕренни çеç сахал. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх пирĕн шкула пĕр медаль кăна pană, тивĕçлисем темиçен. Вăл шутра Ирина та. Унăн амăшĕ – шкул директорĕ. Апла-тăк вĕрентекенсенчен кам ăна хирĕç пулать? Никам та! Хайхи ылтăн медале Иринăна параççĕ те! Петĕре, мĕнле те пулин сăлтав тупса, нимĕнсĕр тăратса хăвараççĕ.

ИВАН. Тăхта-ха, тăхта. Мĕншĕн пирĕн шкула пĕр ылтăн медаль çеç параççĕ тет? Вĕренсе тухакансенчен тивĕçлисем пиллĕкĕн-улттăн пулсан? Вара мĕн тумалла тет?

ОЛИМПИЯ. Эс ĕнер çуралнă ача пек калаçатăн, Иван. Халь пур çĕрте те план, лимит… калана сана, пирĕн шкула пĕр ылтăн медаль кăна уйăрса панă тесе.

ИВАН. Ĕненместĕп эп сана. Ну, юрĕ. Пĕр медаль кăна пултăр. Нивушлĕ Елена Тимофеевна, директор тесе, çав медале Ира тивĕçлĕ пулмасан та ăна парать, тетĕп?

ОЛИМПИЯ. Парать. Эп ун пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Ун ырăнĕнче кирек кам амăшĕ те çапла тунă пулĕччĕ. Манах ил. Эпĕ çав тери тĕрĕс çын пулсан та, Елена ырăнĕнче пулнă пулсан…

ИВАН. Ахалех эс хăвна Елена Тимофеевнăпа танлаштаратăн. Эсир тĕрлĕ çынсем…

ОЛИМПИЯ. Эс вăл манран тасарах, лайăхрах тесшĕн-и? Вăл, эппин, манран йĕркеллĕрех, çапла-и? Çапла-и, тетĕп?

ИВАН. Эпĕ мар-çке, эсĕ ху хăвна Елена Тимофеевнăпа танлаштарма тытăнтăн. Эп сана Елена Тимофеевна ун пек таса мар ĕç тума пултараймасть терĕм кăна.

ОЛИМПИЯ. Çапла-çке, çапла! Сан ман çумра та, Петĕр çумĕнче те тахçанах ĕç çук. Эпир сана кирлĕ те мар.

ИВАН. Тархасшăн, киле кай. Эп питĕ ывăнтăм. Кăшт та пулин канма пар мана.

ОЛИМПИЯ. Эс районĕпе паллă çын, сана пурте пĕлеççĕ, хисеплеççĕ, хакласçĕ. Эс нумайăшне инкекрен, вилĕмрен çăлнă, телей кӳнĕ. Кăçал РОНО заведующине вилĕмрен çăлтăн…

ИВАН. Ăнланатăп…

ОЛИМПИЯ. Ун патне килне кай та сăмах майĕн кала, систер, халь нумайăшĕ çапла тăваççĕ.

ИВАН *(тарăхса)*. Эс… Эс ун пек-кун пек çинчен ан та шухăшла! Ман хамăн ирĕкпе ватăлмалăх кунăмра намăс курас-и? Нихçан та пулмасть ун пек! Эп кунта мĕн ачаран ӳснĕ, ман çинчен халиччен пĕр çын япăх каламан! Чунпа эп яланах таса пулнă. Мĕнле сан чĕлхӳ çаврăнать? Мĕнле эс мана киревсĕр ĕç тума сĕнмешкĕн хăятăн?

ОЛИМПИЯ. Ан кăшкăр, çынсем илтеççĕ.

ИВАН. Илччĕр, камăн итлес килет, итлеччĕр! Петĕр тивĕçлĕ пулсан мансăрах, сансăрах, пирĕн пулăшусăрах медаль илет.

ОЛИМПИЯ. Ашшĕ мар эс, чунилли, тискер кайăк… ытти ачасен ашшĕсем… ав…

*Çутă сӳнет.*

*Пĕрремĕш картинăри декорациех. Хĕвеллĕ кун. Кĕпер çинче Ирина тăрать. Олимпия кĕрет.*

ОЛИМПИЯ. Ирочка, мĕн тăватăн эс кунта? Мĕншĕн экзамен панă çĕрте мар?

ИРА. Эпĕ экзамен тытрăм, Олимпия Порфирьевна.

ОЛИМПИЯ. Пуринчен малтан-и?

ИРА. Аха.

ОЛИМПИЯ. Мĕнле паллă лартса пачĕç?

ИРА. Пиллĕк.

ОЛИМПИЯ. Пиллĕк? Маттур! *(Ира «ăхă» тесе пуçне сулать.)* Маттур!

ИРА. Петĕре тав. Тата ачасене… Вĕсем пулăшрĕç.

ОЛИМПИЯ. Петĕр памарĕ-и-ха?

ИРА. Эпĕ шкултан тухнă чух ăна чĕнменччĕ.

ОЛИМПИЯ. Мĕншĕн кĕтсе тăмарăн? Юлташусем мĕнле паллă илнине пĕлес килмест-им сан? Кама та пулин пулăшмаллаччĕ-и, тен?

ИРА. Малтан хатӗрленмен пулсан пилӗк минут хушшинче вӗренейместӗн… Максим Максимович шпаргалкăпа аппаланнине юратмасть…

ОЛИМПИЯ. Çавăн пекех хытă ыйтать-и?

ИРА. Таса, тӗрӗс çын. Пире те тӗрӗс, таса çын тăвасшăн.

ОЛИМПИЯ *(тарăннăн сывласа).* Çапла-çке. Кам ун пек пуласшăн мар? Темшӗн ман чун вырăнта мар, темшӗн пăлханатăп?

ИРА. Мӗн эсир? Петӗр пирӗн чи вăйлă математик. Вăл куçне хупсах, пӗр хатӗрленмесӗрех пӗтӗм ыйтăва хуравлать.

ОЛИМПИЯ. Ман паян темӗскер иртенпех ăнмасть-ха, çыпăçуллă пулмасть. Сана савăнтарас тенӗччӗ… Ун вырăнне темӗнле ухмахла ыйтусем пама тытăнтăм… *(Мăнаçлăн.)* Правлени ларăвӗнче сана, Ирочка, институтра вӗренме ямашкăн йышăнтăмăр. Стипендине кунтан илме пуçлатăн.

ИРА. Эп вӗренме каймастăп. Эсир пӗлетӗр-çке. Эпир пӗтӗм класӗпех…

ОЛИМПИЯ. Турăçăм! Пуç кӗçех çурăлса тухать. Йăлахтарсах çитертӗр. Вӗçӗмсӗрех эпир йышăнтăмăр, эпир сасăларăмăр тетӗр. Никампа канашламасăр, хăвăр ăссăн, çавăн пек пысăк ыйту татса паратăр-çке эсир?

ИРА. Мӗншӗн канашламан, канашланă. Учительсемпе те, ял председателӗпе те…

ОЛИМПИЯ. Кам вăл ял председателӗ? Хуçалăх руководителӗ. Сирӗн шăпа ăна пӗрре те хумхантармасть. Ӗçлекенсем пулччăр кăна. Эпир, аçăрсемпе аннӗрсем, çӗр çывăрмасăр сирӗн пуласлăх пирки шухăшлатпăр. Мӗн туса хутăр-ха эсир? Эпӗ правлени членӗсемпе чунтан калаçрăм: пултаруллă ачасене ял шучӗпе вӗренме ямашкăн ӳкӗтлерӗм. Пысăк тавлашу, харкашу пулса иртрӗ. Сан пирки те нумай çапăçма тиврӗ, Ирочка. Эсӗ пур, каймастăп, тетӗн. Хăвăр çинчен кăна шухăшламалла мар, сире вӗрентни яла кирлӗ, апла пулсан, патшалăха та!.. Çавна манма юрамасть.

ИРА. Мансăр пуçне тата кама-кама яма палăртнă?

ОЛИМПИЯ. Маринăпа Петӗре.

ИРА. Ăнланмалла. Петӗрпе мана апла. Ачасене яла ӗçлеме юлатпăр тесе агитацилекенсене. Лайăх шухăшласа кăларнă. Анчах та, Олимпия Порфирьевна, эпӗ пурӗпӗр каймастăп. Петӗрпе Марина хăйсем татса паччăр, хăйсен ирӗкӗ.

ОЛИМПИЯ. Кур-ха ăна, «хăйсен ирӗкӗ». Паллах, хăйсен. Эсӗ, мӗн, вӗсемшӗн те хăв татса парасшăнччӗ-им? Марина каятех, тем тесен те. Институт пӗтерет те ялах таврăнать. Ял председателӗн культура енӗпе заместителӗ пулать, ман вырăна. Эпӗ пенсие тухатăп. Шухăшла-ха эс, пилӗк çул Мускаврра пурăнатăн, пилӗк çул! Пилӗк çултан эс йăлтах урăх çын пулатăн, çӗнӗрен çуралнă пекех.

ИРА. Эп урăх çын пулас теместӗп. Çӗре юрататăп, кунти вырăнсене…

ОЛИМПИЯ. Айван-çке эс, Иришка, айван. Кайран хăвах ӳкӗнетӗн ак… Эсӗ çӗре хытă юрататăн, çавăнпа вӗренме сана ямалла та… Мӗншӗн тесен эс çӗрсӗр, уй-хирсӗр пурăнаймастăн, апла пулсан, диплом илсен ялах таврăнатăн. Яла, çӗре юратман çынна мӗншӗн ял шучӗпе вӗренме ямалла? Маринăнах илер-ха, вăл илемлӗскер, пӗр-пӗр каччă пуçне çаврать те хулари йӗкӗте качча каять, вара кӗт ăна! Эпир сана шанатпăр. Эс пирӗн шанчăк.

ИРА. Сире итлесе ман ачасене улталамалла-и? Çук, Олимпия Порфирьевна. Эпӗ пӗтӗмпех шухăшланă, виçнӗ, эп ниçта та каймастăп. Эпӗ ачасене улталама пултараймастăп.

ОЛИМПИЯ. Никама та улталамастăн эс. Вӗренме ял правленийӗ ярать. Апла-тăк санăн ачасен умӗнче нимӗнле айăп та çук, саншăн правлени ответ тытать.

ИРА. Ан ӳкӗтлӗр, пурӗпӗр усси пулмасть. Эпир заочно вӗренетпӗр.

ОЛИМПИЯ. Ытлашши кутăн эс! Качча каяс-тăвас пулсан упăшку тарăхсах вилет ӗнтӗ.

ИРА *(тӗлӗнсе).* Мӗншӗн апла калатăр, Олимпия Порфирьевна?! *(Каять.)*

ОЛИМПИЯ. Характерӗ пур вара. Пули-пулми пырса çыхланаймăн. Ира каймасан, Петӗре те вырăнтан хускатаймăн, вӗлерсен те каймасть. Ак инкек. Мӗн тăвас-ха, мӗн? *(Марине, Лида тата Петя кӗреççӗ. Вӗсем патне Олимпия васкаса пырать.)* Ну, ну? Ывăлăм! Миçе паллă илтӗн?

ПЕТӖР. «Тăваттă», анне, «тăваттă».

ОЛИМПИЯ *(каялла чакать).* Миçе, миçе? Мӗнле «тăваттă»? Шӳт тăватăн эс, Петӗр. Мӗншӗн аннӳне кăлăхах хăрататăн, ывăлăм?

ПЕТӖР. Эп шӳт тумастăп, анне.

ЛИДА. Чăнах та, Олимпия Порфирьевна. Петĕр «тăваттă» илчĕ. Маттур. Вăл пултарать. Лобачевский вăл пирĕн.

ОЛИМПИЯ. Турăçăм! *(Аллисене сарса.)* Пĕтрĕ ылтăн медаль! Мĕн пулчĕ? Мĕншĕн «тăваттă» çеç илтĕн? Ахальтен мар ниçта вырăн тупаймасăр çӳрерĕм. Инкек ку, чи пысăк инкек!

ПЕТĔР. Юрĕ-çке, юрĕ, лăплан. Нимĕнле трагеди те çук кунта… «Тăваттă» та япăх паллă мар.

ОЛИМПИЯ. Ылтăн медаль? Университет? Мускав? Ку вара трагеди мар-им? Ку чăн-чăн трагеди!

ПЕТĔР *(куларах).* Паллах, трагеди. Тата эп сана тахçанах каланă-çке, вĕренме каймастăп, ялта ик-виç çул ĕçлесе пăхатăп тесе.

ОЛИМПИЯ. Тăна кĕр, Петĕр! Ик-виç çултан кая юлатăн. Мĕн вĕреннине те манса пĕтетĕн. Эс ун чух Мускав университетне мар, института та кĕрейместĕн.

ПЕТĔР. Мĕншĕн пăшăрханатан эс, анне? Манăн вĕренмелле-çке, санăн мар.

ОЛИМПИЯ. Тĕрĕс калатăн, ывăлăм, тĕрĕс. Мĕншĕн эп саншăн пăшăрханатăп-ха? Юл яла, тракторист пул, авлан… Пĕр-пĕр ялти хĕре качча ил те пурăн мĕнле пурăнас килет çавăн пек. *(Кайма тăрать.)*

ПЕТĔР *(амăшне хăваласа çитсе чарать.)* Анне! Аннеçĕм, ан макăр… Кун пек пулнăшăн эп айăплă мар, анне, эп…

МАРИНЕ. Чăнах, чăнах, Олимпия Порфирьевна. Петĕр билет çине çырса панă ыйтусене пурне те пĕр такăнмасăр, шыв юхнă пек ответлерĕ. Задачăсене те тĕрĕс шутларĕ. Кайран ăна Максим Максимович хушса тепĕр ыйту пачĕ, питĕ йывăр ыйту… Пирĕн программăра та пулман вăл.

ПЕТĔР *(тарăхса).* Тупнă йывăр ыйту. Ниме тăман задача. Эпĕ хам васкарăм, шутламасăр-тумасăр ответ çыртăм та хутăм.

ОЛИМПИЯ *(Петĕре).* Мĕнле-ха апла, мĕнле-ха эс, ывăлăм! Шухăшлама кам чарнă сана!.. Шухăшламалла пулнă, мĕн чухлĕ шухăшлас тетĕн, çавăн чухлĕ.

ПЕТĔР. Пĕрре те йывăр мар, шухăшламалли те çук унта. Хĕрачасене кăна вăл йывăр пек туйăнать. Эпир Максим Максимовичпа уйрăм вĕреннĕ чух ун пеккисене мар шутланă. Кунта… хам та тĕлĕнетĕп… Кăштах шухăшланă пулсанах… хам айăплă, хам çăмăлттайла хăтлантăм.

ОЛИМПИЯ. Эс мана тĕплĕнрех каласа пар-ха, тен, тӳрлетме пулать ку инкеке, тен, кая юлман. Малалла, эс задачăна йăнăш шутланă тейĕпĕр, вара? Вара?

ПЕТĔР. Комисси членĕсем пĕр-пĕринпе калаçса илчĕç.

ОЛИМПИЯ. Интереслĕ, комисси членĕсем камсем-ха? Мĕн эс, аран-аран кашни сăмаха хирсе калаттармалла сана. Марина, пĕреххут эс кала-ха, комиссире камсем?

МАРИНЕ. Максим Максимович, Елена Тимофеевна тата РОНОран… комисси пуçлахĕ.

ОЛИМПИЯ *(тарăхса).* Çапла пуль терĕм çав. Каларăм Ивана, каларăм! Ах, кутăн-çке, шуйттан.

МАРИНЕ *(малалла калать).* Пĕр-пĕринпе калаçрĕç те Петĕре «тăваттă» лартса пачĕç.

ОЛИМПИЯ. Пĕтĕмпех паллă. *(Петĕре.)* Каларăм эп сана, асăрхаттартăм… Кашни кун оранжерея, чечек, Ирина… Вăл, ав, маттур. «Пиллĕк» çаклатнă та шăхăрса кăна çӳрет, хăнк та тумасть. Ылтăн медаль çаклатса илетех ĕнтĕ. Чирлĕ чух мĕн чухлĕ урок сиктерчĕ пулин те «пиллĕк» илнĕ! Эсĕ айван, ухмах, пĕр урок та сиктермен пулин те, математикăна пуринчен лайăх пĕлсен те, Максим Максимовичпа уроксем хыççăн юлса уйрăм вĕрентĕн пулин те… «тăваттă» кăна илтĕн. Намăс! Намăс!

МАРИНЕ. Максим Максимович «тăрăшрĕ».

ЛИДА. Лăпăртататăн кирлĕ-кирлĕ мара! Тĕрĕс мар вĕт, тĕрĕс мар! Тӳсме пултараймастăп эп сана çакăншăн. Максим Максимович никама та улталамасть.

ОЛИМПИЯ. Пĕрре пăхсах курăнать. Ман ывăлшăн уйрăмах тăрăшнă… Тавтапуç ăна уншăн… Петĕре пулăшнă пек, уншăн тăрăшнă пек хăтланать-ха тата… Чăн-чăн артист. Çу-ук, кăна манмастăпах!

ПЕТĔР. Анне, ухмахла ан калаç. Эпĕ хам айăплă.

ОЛИМПИЯ. Ан чĕн! Вĕсем сана лачакана путарас пирки Елена Тимофеевнăпа иккĕшĕ экзаменччен калаçса таталнă… Ак, тапалан ĕнтĕ çав шăршлă лачакара.

ПЕТĔР. Пулма пултараймасть.

ЛИДА. Мĕн калаçатăр эсир, Олимпия Порфирьевна!

ОЛИМПИЯ. Ыйтусене ответленĕ хыççăн мĕн тума ытлашши ыйту памалла пулнă-ха?

МАРИНЕ. Аха, аха. Ирккана, ав, пӗрремӗш ыйтӑва хуравлама тытӑннӑ-тытӑнман: ҫитӗ, тепӗр ыйтӑва ответле терӗҫ. Каллех пӗтӗмпех калаттарса пӗтермерӗҫ, чарчӗҫ. Максим Максимович Ирккана, ҫитӗ, задачӑна тӗрӗс ответленӗ, отлично тесе саламларӗ.

ОЛИМПИЯ *(Петӗре).* Илтетӗн-и? Куратӑн-и? Куратӑн-и?

ЛИДА. Ма элеклетӗн эс, Марина? Мӗншӗн?

МАРИНЕ. Тӗрӗс мар-им вара? Тӗрӗс. Йӑлтах эп каланӑ пек пулчӗ. Ав, Иркка килет, хӑйӗнчен ыйтатпӑр.

ИРА *(чупса кӗрет).* Ну, мӗнле? Петя? Хӗрсем мӗнле тытрӗҫ?

ЛИДА. Пурин те «тӑваттӑ».

ИРА. Ура! *(Сасартӑк чарӑнса.)* Мӗнле пурин те? *(Чӗнмеҫҫӗ.)* Петя, сана «тӑваттӑ» лартса пачӗҫ-и? Мӗншӗн? Эсӗ математикӑна пуринчен те лайӑх пӗлетӗн-ҫке?

ОЛИМПИЯ. Ах, чее-ҫке. Мӗнле курнӑҫланать вӑл. Никам та ним те калаймӗ.

ИРА. Эпӗ? Курнӑҫланатӑп-и, Олимпия Порфирьевна? Ма апла калатӑр?

ОЛИМПИЯ *(сиввӗн).* Йӑлтах паллӑ. Сан аннӳпе эсир пурте мухтакан Максим Максимович питӗ ӑста ӗҫлеҫҫӗ, нимӗн те калаймӑн, пӗтӗмпех йӗркеллӗ. Сана мӗншӗн «пиллӗк» лартса панӑ? Петӗре «тӑваттӑ» кӑна? Ылтӑн медаль пӗрре ҫеҫ-ҫке! Икке пайлама ҫук ӑна.

ИРА *(каялла чакса).* Эсир… Эсир мӗнле хӑятӑр? Лида! Петя!.. Мӗншӗн чӗнместӗр? Мӗншӗн нимӗн те каламастӑр? Эсир пӗлетӗр-ҫке? Мана… Мана нимӗнле медаль те кирлӗ мар!

ЛИДА *(Ирина патне пырса).* Сывлӑху та ҫирӗпленсе ҫитмен сан, Ира, пӑлханма юрамасть сана. Ан итле эс ӑна, тарӑхнипе ҫавӑн пек калаҫать вӑл.

ОЛИМПИЯ. Ҫапла-ҫке! Пӑлханма юрамасть! Ҫавӑнпа ӑна «пиллӗк» лартса панӑ та.

ИРА *(ним тума аптранӑ Петьӑна).* Петя, ма нимӗн те чӗнместӗн? Эсӗ те аннӳ пекех шухӑшлатӑн-и?

ОЛИМПИЯ. Халь тин мӗн тума сана Петя? Чуп, ав, хӑвӑн Максим Максимовичу патне! Вӑл вӗт сана юратса пӑрахнӑ! А-а, хӗрелтӗн-и? Кушак кам пуллине ҫисе янине питӗ лайӑх пӗлетӗп.

ПЕТӖР. Анне, чарӑн!

ИРА. Эсир ҫав тери хӑрушӑ ҫын, Олимпия Порфирьевна! Мана сирӗн Петӗрӗр кирлӗ мар, мана никам та кирлӗ мар! *(Чупса тухса каять.)*

ЛИДА. Ира, тӑхта-ха, эпӗ те пыратӑп. *(Ира хыҫҫӑн чупса тухса каять.)*

ПЕТӖР *(кимӗ ҫине ларать).* Анне, мӗн туса хутӑн эс?

ОЛИМПИЯ. Эпӗ-и? Эпӗ мар, вӗсем мӗн туса хучӗҫ. Анчах та чӑнлӑха пурӗпӗр тупатпӑр. Каларӗ тейӗн. Эсӗ ученӑй пулатӑн-пулатӑнах, мӗншӗн тесен эс чи талантли, ҫавӑнпа вӗсем кураймаҫҫӗ. Ӑнлантӑн-и?

ПЕТӖР. Пӗтеретӗн эс ман пурнӑҫа, юлташсене манран сивӗтетӗн. Э-эх!.. *(Чупса тухса каять.)*

*Ҫутӑ сӳнет.*

*Шкул директорӗн кабинечӗ. Елена Тимофеевнӑпа Олимпия Порфиьевна калаҫса лараҫҫӗ.*

ОЛИМПИЯ. Нимӗн тума та ҫук-и вара халь? Тепӗр хут экзамен тыттарма май ҫук-и?

ЕЛЕНА. Ҫук ҫав, Олимпия Порфирьевна, ҫук.

ОЛИМПИЯ. Ыттисене билетра кӑтартнӑ ыйтусемсӗр пуҫне урӑх ыйту паман-ҫке?

ЕЛЕНА. Вӑл комисси ирӗкӗнчен килет.

ОЛИМПИЯ. Тӗрӗс мар, тӗрӗс тумастӑр. Эпӗ ирӗксӗрех…

ЕЛЕНА. Хисеплӗ Олимпия Порфирьевна, экзаменсене мӗнле ирттермелли пирки йӗрке пур, тата ҫав йӗркене пӑсасран сыхлакансем те пур. Комисси йышӑнӑвне хирӗҫлеме нимӗнле сӑлтав та ҫук сирӗн.

ОЛИМПИЯ. Анчах та ман ывӑла чи пултаруллӑ ученик тетчӗҫ. Турӑҫӑм. Мӗнешкел хытӑ чӗреллӗ ҫынсем…

ЕЛЕНА. Эп сире лайӑх ӑнланатӑп. Максим Максимович та, эпӗ те, ытти учительсем те юлашки экзамена Петя ҫавӑн пек паллӑпа пӗтернӗшӗн кулянатпӑр. Анчах ним тума та ҫук халь тин.

ОЛИМПИЯ. Максим Максимович та тетӗр-и? Вӗлерсен те ӗненместӗп.

ЕЛЕНА. Кӑлӑхах. Петя унӑн чи юратнӑ вӗренекенӗ, эсир ӑна хӑвӑр та лайӑх пӗлетӗр…

ОЛИМПИЯ. Кирлӗ мара ан калаҫӑр, Елена Тимофеевна. Петьӑна «тӑваттӑ» лартса пама эсир малтанах калаҫса татӑлнӑ.

ЕЛЕНА *(васкамасăр ура çине тăрать).* Мĕскер?

ОЛИМПИЯ. Эп текех сиртен хăрамастăп. Ывăл шкул пĕтерчĕ. Ун кăмăлне хуçрăр пулин те вăл пĕтмест. Сирĕнпе, хăвăрпа мĕн пуласси паллă мар-ха. Кăштах пурăнар-ха, курăпăр.

ЕЛЕНА *(питĕ çиленсе).* Эсир хăвăр ăçта ларнине ан манса кайăр. Кунта урамра мар, шкулта эсир.

ОЛИМПИЯ. Эсир, директор тесе, службăри вырăнпа усă курса хăвăршăн кăна тăрăшатăр.

ЕЛЕНА. Хăвăр шухăшăра çирĕплетме пултаратăр-и?

ОЛИМПИЯ. Пултаратăп! Эсир Максим Максимовича хӳтĕлетĕр. Чее этем вăл, ултавçă, мораль енчен пăсăлнă этем.

ЕЛЕНА. Ăнланмастăп, мĕн каласшăн кунпа эсир?

ОЛИМПИЯ. Ку çĕнĕ хыпар мар, ăна пурте пĕлеççĕ. Максим Максимович сирĕн хĕрпе, Иринăпа туслă, вăл ăна юрататъ. Ачасене яла хăварас ыйтăва та вăл Иринăна ялта хăварас тесе хускатнă… Пĕлетпĕр.

ЕЛЕНА *(лăпкăн, пăлханмасăр).* Эп сире кӳрентерес теместĕп, анчах эсир ухмахла сӳпĕлтетнине никам та ĕненмест, Олимпия Порфирьевна. Ытла та таса мар чунлă иккен эсир.

ОЛИМПИЯ. Эп таса мар чунлă-и? Ну, кăна ахаль хăвармастăп. Паянах района каятăп.

ЕЛЕНА. Телейлĕ çул пултăр.

ОЛИМПИЯ. Петя ман ывăл, ман ача, ман юн! Вăл ман майлă! Эсир ăна тĕрĕс çул çинчен пăраймастăр, университета кĕретех. Тĕнчипе паллă ученăй пулать. Курăр вăт!..

*Çутă сӳнет.*

*Каçма. Илемлĕ ăшă ир. Каçма çинче Максим Максимович пулă тытса ларать. Чăмадансем йăтнă Олимпия, Петĕр тата Марина кĕреççĕ.*

ОЛИМПИЯ *(Петĕре).* Хыçалалла çаврăнса ан пăх. Телей пулмасть.

ПЕТĔР. Вăрăсем пек таратпăр.

ОЛИМПИЯ. Сахалтарах кăшлĕç.

МАРИНЕ. Юрать-ха никама та хирĕç пулмарăмăр. *(Максим Максимович хытă ӳсĕрет.)*

ОЛИМПИЯ. Кам унта?

ПЕТĔР *(савăнса).* Максим Максимович!

МАРИНЕ. Салам…

МАКСИМ. Ырă ир пултăр.

ОЛИМПИЯ *(Петĕрпе Маринене).* Хавăртрах, автобус каять.

ПЕТĔР. Тăхта-ха, анне.

МАКСИМ. Каясах тетĕр, эппин?

МАРИНЕ *(хатарланса).* Кайма юрамасть-им? Чаратăр-им, Максим Максимович?

МАКСИМ. Эп кайма юрамасть, чаратăп терĕ-им вара? *(Петĕре.)* Сана каяс умĕн курни питĕ аван-ха, Петĕр. Эп ăнланатăп: саншăн ку тĕлпулу кĕтнĕ, ĕмĕтленнĕ тĕлпулу пулмарĕ, çапах иксĕмĕр пĕр-ик сăмах калаçса илни пăсмасть пуль тетĕп.

ОЛИМПИЯ. Çитет! Эсир хăвăр калас тенине ытлашшипех каланă!

ПЕТĔР. Анне! Ан шавла-ха! Эсир Маринăпа кайăр, эп хăваласа çитетĕп. *(Маринепе Олимпия каяççĕ.)*

МАКСИМ. Экзаменсем хыççăн эс манран пăрăнса çӳреме тытăнтăн. Курнăçасшăн пулмарăн. Эпĕ сана уншăн ӳпкелеместĕп, çук. Анчах та эп сана акă мĕн каласшăн: Мускава таса кăмăлпа кай, телейлĕ çул пултăр, анчах университета вĕренме кĕресси çăмăл ĕç мар. Эс мана тĕрĕс ăнлан… ку вăл саншăн, санăн малашнехи пурнăçушăн питĕ кирлĕ. Эсир, вĕренекенсем, пирĕншĕн, учительсемшĕн, пурсăр та пĕр пек. Учитель пĕр вĕренекене юрататъ, теприне кураймасть, килĕштермест пулсан – вăл япăх учитель. Кашни вĕренекенĕн хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхне курман учитель тата япăхрах. Эп сана ытти вĕренекенсене юратнă пекех юратнă. Эс ăна хăвах лайăх пĕлетĕн. Санпа эпир ытларах ĕçленĕ, мĕншĕн тесен эс математикăпа ытти вĕренекенсенчен пултаруллăраххине курнă. Çавăнпа та эп санпа вăхăта хĕрхенмесĕр, уйрăм ĕçленĕ. Эп санпа яланах мухтаннă, савăннă. Экзаменра хăвăн пултарулăхна пур енчен те уçса паратăн тенĕ. Эп сана шаннă, эп сан пирки нимĕн чухлĕ те пăшăрханман. Эпĕ комисси членĕсене те сан пысăк пултарулăхна, эсĕ нумай та тарăн пĕлнине кăтартас тесе хамăн ыйтăва патăм. Эпĕ сан пĕлӳ пирки пĕрре те иккĕленмен. Çăмăллăнах хуравлатăн тенĕ. *(Пауза.)* Экзамен хыççăн сана мĕнле йывăр пулнине, эс мĕнле хурланнине питĕ лайăх чухлатăп. Анчах та эпĕ

мĕнле куляннине, мĕнле тарăхнине никам та курман. Ăнлан эс мана, эпĕ пĕрре те сана хур тăвас темен. *(Пауза.)* Çакна кăна каласшăнччĕ эп сана.

ПЕТĔР *(тăхтасан).* Эп ăнлантăм, Максим Максимович. *(Пауза.)* Тата эпĕ акă мĕн ăнлантăм… Аннене итлемелле марччĕ. Ăна пулах ачасем мана хисеплеми пулчĕç, хама сутăнчăк пек, ултавçă пек туятăп. Çавăнпа ялтан тухса таратăп халь.

МАКСИМ. Хăвăнтан ху тараймастăн, Петя, акă мĕн… Хăвăн йăнăшна туйса илни питĕ лайăх: эс ăна кирек хăçан та тӳрлетме пултаратăн. Пĕтĕмпех хăвăнтан килет. Кай та студент пулса таврăн. Ăнăçу сунатăп.

ПЕТĔР. Тавтапуç. Эп… Эп сире нихăçан та манмастăп.

МАКСИМ. Кай! Çулу такăр пултăр. *(Петĕр пĕр сăмах хушмасăр пуçне сĕлтет те каять. Максим Максимович пирус тивертет.)*

*Çутă сӳнет.*

*Елена Тимофеевна пӳлĕмĕ. Ира чӳрече умĕнче хаçат вуласа ларать.*

ЕЛЕНА *(кĕрет).* Каллех пĕччен! Урама тухса уçăлса çӳресчĕ. Çырма хĕррине кайса çӳре, оранжерейăна кĕрсе тух. Нивушлĕ ху лартса çитĕнтернĕ чечексене те курас килмест?

ИРА. Чечексемпе халь урăххисем аппаланччăр. Вĕсем мана кирлĕ мар.

ЕЛЕНА. Сана каллех çыру килсе пачĕç. Мускавран.

ИРА. Петĕртен-и? Çурса пăрах.

ЕЛЕНА. Çук, хĕрĕм, çурасах тесен, хăв çурса пăрах. Эп ăна сервант çине хуратăп.

ИРА *(кăшкăрса пăрахнă пек).* Вуламастăп эп ăна, вуламастăп!

ЕЛЕНА. Ку, Ира, хытă чĕреллĕ пулнине, çынна хĕрхенменнине пĕлтермест-и?

ИРА. Эс каçарма хушатăн-и, анне? Вăл Максим Максимовича, сана кӳрентерчĕ, пире пурне те сутрĕ те ялтан вăрттăн тухса тарчĕ. Юлташĕсене сутакан çын юратăва тивĕçлĕ мар, анне.

ЕЛЕНА. Эх, хĕрĕм, пурнăçра йăлтах эс каланă пек ансат пулмасть çав. Хăвăн телейӳшĕн хăвăнах кĕрешме тивет тепĕр чух.

ИРА. Телей? Пĕлместĕп, анне, пĕлместĕп. Кампа кĕрешес-ха манăн? Кама çĕнсе телей туртса илес?

ЕЛЕНА. Чи малтан хăвăнпа кĕрешмелле, хĕрĕм, хăвна çĕнмелле.

ИРА. Хампа мĕнле кĕрешес-ха манăн?

ЕЛЕНА *(кăмăллăн кулса).* Вунă çул хушши хăвпа ху кĕрешрĕн ĕнтĕ, хĕрĕм. Ăшăнти кахаллăха çĕнтерсе çулран-çул лайăх паллăсемпе вĕренсе пытăн. Ун пек кĕрешӳ малашне санăн тата çивĕчрех пулать. Халĕ сана хăвăншăн та, юлташусемшĕн те кĕрешме тивет. Сăмахран, Петĕр патне çыру çырасшăн мар эсĕ, улталарĕ пире, тетĕн. Сан ăшра хирĕçӳ çуралнă. Лайăх юлташ пулас тетĕн пулсан, çак хирĕçĕве çĕнтермелле сан. Петĕр çырăвĕсене вуламалла, çийĕнчех хурав памалла. Лайăх ача вăл. Ман шутпа, ахальтен килтен тухса кайман Петĕр. Унăн хăлхине амăшĕ йӳçĕхтерсе çитернĕ тесе шутлатăп эпĕ. Аптранă кăвакал кутăн чăмнă, теççĕ чăвашсем. Петĕрпе те çавăн пек пулса тухнă.

ИРА *(хыпăнса ӳксе).* Ай, анне!.. Ма малтанах калаçса пăхмарăм-ши эп санпа? Миçе çыру çĕтсе тăкрăм урайне эп. Çынни ахаль хыпса çунать пуль, эп татах çунма пулăшатăп.

ЕЛЕНА *(Иринăна ыталаса).* Çапла хăтланса тĕрĕс мар тунă эс, хĕрĕм. Йăнăша вăхăтра тӳрлетнине нимĕн те çитмест.

ИРА. Тавтапуç, анне, вăхăтра ăса вĕрентнĕшĕн. Паянах Петĕр патне çыру çыратăп. Чăнах та, амăшне пула килтен тухса кайнă вăл. Эх, çав Олимпия Порфирьевнăна!.. Пĕртен-пĕр ачинчен паянах профессор туса хурĕччĕ. Пулаççĕ те çав çĕр çинче çынсем. Мана та темтепĕр каласа пĕтерчĕ те вăл…

ЕЛЕНА. Вăхăтра вĕрентекен, чаракан пулман ăна. Халь тин ним тума та çук ĕнтĕ. *(Тем аса илнĕн, куларах.)* Аçу ăна темшĕн тав тăвасшăн-ха. Ман куçа уçрĕ Олимпия Порфирьевна, ăна пулах ĕçме пăрахрăм тет тепĕр чух.

ИРА. Аха, атте чăнах асăнкалать Олимпия Порфирьевнăна. Мĕн каланă лешĕ аттене? *(Тăруках савăнса.)* Кирек мĕн каланă пулсан та, атте ĕçме пăрахнăшăн çав тери савăнатăп. Юлташсем умне тухма вăтанаттăм атту, ытла та намăсчĕ.

ЕЛЕНА *(кулса).* Çапла, хĕрĕм, çапла. Ĕçме пăрахнăранпа ĕçлеме тытăнчĕ, килте те йĕркеллĕ. *(Ура çине тăрса.)* Манăн каймалла халь, хĕрĕм. Асту, Петĕре текех ан кӳрентер. *(Тухса каять.)*

ИРА. Юрать, анне, юрать. *(Лида кĕрет.)*

ЛИДА. Салам, Ира! *(Ирăна пырса ыталать.)*

ИРА. Салам, Лида, сана курманни нумай пулать. Тавах килнĕшĕн.

ЛИДА. Эп ерçеймерĕм-ха, эс ху та пĕрре те пырса курмастăн. Тус тетĕн тата…

ИРА. Ку хушăра хама йывăртарах туйрăм эп. Чир пĕтĕмпех иртсе кайман пулмалла.

ЛИДА. Ăнланатăп, Ира, ăнланатăп. Сана çăмăл пулмарĕ ку вăхăтра. Петĕр сăмах тытманни те самаях хумхантарчĕ сана. Пĕтĕм класа улталарĕ вĕт, кам шутланă ун пек туса хурать тесе. Мĕн-и, çыру çырать-и хăть?

ИРА. Çырать.

ЛИДА *(чÿречерен пăхса).* Иринка, кур-ха, кур! Асамат кĕперĕ!

ИРА *(чÿрече патне чупса пырса пăхать).* Лида, эпир санпа экзамен умĕн асамат кĕперĕ айĕнчен чупса тухасшăнччĕ.

ЛИДА. Аха!

ИРА. Эп шухăшлани пурнăçа кĕчĕ вĕт, Лида!

ЛИДА. Ну-у. Чăнах-и? Петĕр пирки шухăшланăччĕ-и эс?

ИРА. Çук, ун пирки мар, атте пирки шухăшланăччĕ… Ĕçме пăрахрĕ. Ку маншăн пысăк телей, Лида.

ЛИДА. Тĕрĕс, Ира. *(Тăруках сăмахне улăштарса.)* Пĕлетĕн-и? Петĕр килне пĕр çыру та çырмасть тет. Олимпия Порфирьевна кĕçех ухмаха ерес пек çÿрет. Телефонпа калаçма чĕнтернĕ. Петĕрĕ пыман. Халь Мускава каясшăн çÿрет. Сан пата çырать терĕн-и-ха?

ИРА. Çырать. Паян та илтĕм. Ав, сервант çинче выртать.

ЛИДА *(чупса пырса çырăва илет).* Мĕн хулăнăш çыру! Эс ăна вуламан та иккен. Мĕнле чăтатăнах!

ИРА. Ĕлкĕреймерĕм-ха.

ЛИДА. Ах, телейлĕ-çке эс, Ира! Эх, манăн камран та пулин çакăн пек хулăн çыру илсе вуласчĕ!

ИРА. Илетĕн, Лида, кун пек мар хулăннине илсе вулатăн… Халь эпир çамрăк, тин çеç пурăнма тытăнатпăр-ха.

ЛИДА *(шăппăнраххăн).* Мана Генка киномеханик питĕ килĕшет. Вăл мана кино кăтартма вĕрентет.

ИРА. Асту, урăххине ан вĕренттĕр вăл.

ЛИДА. Эп ăна-кăна чухламастăп пуль! Чухлатăп, питĕ лайăх чухлатăп. Малтан авлантăр, качча илтĕр…

ИРА. Юрататăп тесе уларĕ-и хуть?

ЛИДА. Нумай пулмасть каларĕ… Эх, çыру илмесĕрех качча тухма тивет пуль манăн… Ну, Петĕр çыруне вулатпăр-и?

ИРА. Вулар ара.

ЛИДА *(хаваслăн кулса).* Мана Генка качча илесшĕн. Мансăр пурăнаймастăп тет. Ну, тĕлĕнтерет-çке вара…

ИРА. Эс ху мĕн шутлан ун пирки.

ЛИДА. Тем тумалла, тăнран кайрăм ĕнтĕ.

ИРА. Качча тухма иртерех мар-и, Лида?

ЛИДА. Хам та çавăн пирки шухăшлатăп çав. *(Килкартинче йытă вĕрни илтĕнет, кăштах тăхтасан Максим Максимович кĕрет.)*

МАКСИМ. Юрать-и? Ырă каç пултăр, хĕрсем.

ИРА. Здравствуйте, Максим Максимович.

МАКСИМ. Елена Тимофеевнăпа пĕр ĕç çинчен калаçрăмăр эпир, Ира. Халь хăвăнпа калаçса пăхас тесе килтĕм.

ЛИДА *(хушша кĕрсе).* Мĕнле ĕç-ши вăл? Мана та пĕлме юрать-ши?

МАКСИМ. Хаçатра эп Калуга облаçĕнчи пĕр шкул çинчен вуларăм. Çав шкулта вĕренекен ачасем самаях пысăк лаптăк çинче чечек ÿстереççĕ, чечек вăррине патшалăха параççĕ. Шкул çавăншăн сахал мар укçа илет. Шкулта кунне виçĕ хутчен укçасăр апат çитереççĕ. Вĕренекенсем хăйсемех пурăнмалли пысăк çурт тунă. Интернат евĕрлĕ пулать ĕнтĕ.

ЛИДА *(сиксе тăрса).* Эх, пирĕн çавăн пек тăвасчĕ, э, Максим Максимович.

МАКСИМ. Елена Тимофеевнăпа шăпах çавăн пирки ыйту хускатрăмăр та. Ĕçе йĕркелеме сана хушасчĕ, Ира.

ИРА. Эпĕ текех шкулта вĕренместĕп-çке, вĕренекен мар.

ЛИДА. Максим Максимович, Ира килĕшет. Килĕшетĕн вĕт, Ира.

ИРА. Малтан шухăшласа пăхам-ха.

ЛИДА. Ура! Ура, Максим Максимович!

ИРА. Шăпрах эс, çухăрса пĕтĕм яла ура çине тăрататăн.

МАКСИМ. Нимех те мар. *(Тăрать.)* Килсе чăрмантартăм эп сире. Сирĕн, паллах, хăвăрăн хĕрачасен вăрттăн калаçу…

ИРА. Мĕн эсир, Максим Максимович, пирĕн нимĕнле вăрттăн калаçу та çук. Мĕн вăрттăнлăхĕ пултăр пирĕн… *(Килкартинче йытă ик-виçĕ хутчен вĕрсе илет, вара савăнса нăйкăшма тытăнать.)*

ПЕТĔР САССИ. Палларĕ… Палларĕ! Мĕнле пысăкланса кайнă вăл.

ЛИДА. Петя! Петĕр! Петĕр килчĕ!

МАКСИМ. Атя-ха, Лида, хирĕç тухар.

ИРА *(çухалса кайса).* Тăхтăр-ха… Эпĕ… эпĕ… вара… *(Лида Ира патне чупса пырать те ăна чуптăвать, унтан Максим Максимовичпа васкаса тухса каяççĕ. Хаваслă, савăнăçлă сасăсем илтĕнеççĕ. Ира аллисене кăкăр çине хурса хускалмасăр пĕр вырăнта тăрать. Алăка шаккани илтĕнет. Ира шартах сикет.)*

ПЕТĔР *(кĕрет).* Салам, Ира!

ИРА. Салам, Петĕр. *(Пауза. Пĕр-пĕрин çине вăрахчен пăхса тăраççĕ.)*

ПЕТĔР. Эп таврăнтăм, Ира.

ИРА. Куратăп.

ПЕТĔР. Эсĕ, мĕн, хавас мар-им?

ИРА. Хавас-ха.

ПЕТĔР. Пĕлетĕп, мана каçарса пĕтерейместĕн-ха, пĕтĕмпе те пĕр çыру кăна çыртăн.

ИРА. Кирлĕ мар, ун пирки калаçмăпăр.

ПЕТĔР. Мĕнле кирлĕ мар? Эп хам айăпа лайăх туятăп. Çапах та эс мана тĕрĕс ăнланасса шанатăп.

ИРА. Эп ăнлантăм ĕнтĕ, анчах юлташсем ăнланĕç-ши? Каçарĕç-ши сана?

ПЕТĔР. Чи малтан эс каçарни кирлĕ. Вăл мана юлташсен сучĕ умне тухма хăюлăх парĕ.

ИРА. Эп каçаратăп ĕнтĕ, хытă чĕреллĕ пулнăшăн эсĕ те мана каçар.

ПЕТĔР. Ира!.. Чунăм!.. *(Чупса пырса Ирăна ыталаса илет. Çапла пĕр сăмах чĕнмесĕр чылайччен тăраççĕ, алăка шаккани илтĕнсен çеç пĕр-пĕринчен уйрăлаççĕ. Марине вирхĕнсе кĕрет.)*

МАРИНЕ. Иринка! Тусăм! *(Чупса пырса Ирăна ыталаса йĕрет.)* Тунсăхларăм.

ИРА. Марина. Эсĕ те таврăнтăн-и? Ĕçсем мĕнле санăн?

МАРИНЕ. Института вĕренме илмерĕç мана.

ИРА *(тĕлĕнсе).* Илмерĕç? Сана-и? Ан тĕлĕнтер! Сана та илмесен…

МАРИНЕ. Илмерĕç. Намăс курни кăна пулчĕ.

ИРА. Мĕншĕн илмерĕç?

МАРИНЕ. Сассу япăх терĕç.

ИРА. Санăн-и? Ан тĕлĕнтер-ха?

МАРИНЕ. Олимпия Порфирьевна кăлăхах мухтанă иккен мана. Эх, мĕнлерех намăс куртăм тата… Пĕри, те комисси членĕ пулчĕ, çамрăкскер, хитрескер, сирĕн вĕренмелле те мар, эсир вĕренмесĕрех артистка терĕ. Шăтăк пулнă пулсан çавăнтах анса каяттăмччĕ. Олимпия Порфирьевна мана хуçкаланма, пăркаланма, куç хĕсме вĕрентрĕ. Ăна итлерĕм, ухмах. Вăт Петĕр университета кĕчĕ!

ИРА. Петĕр пултарать-ха вăл. Эс ху çинчен каласа пар. Ăçта-ăçта çитсе куртăн?

МАРИНЕ. Таçта та пултăм! Ленин мавзолейĕнче пултăм. Ленина куртăм. Ирочка! Унтан Кремльте пултăм… Царь-пушка текеннине те, пысăк чанне те куртăм… Университета, ВДНХ выставкине кайса куртăм. Таçта та пултăм. Пысăк театрта «Жизель» балет куртăм. Надя Павлова ташланине куртăм, Ирочка! Ăçта ларнине те манса кайрăм. Савăннипе кирлĕ-кирлĕ мар çĕртех ахлатса та алă çупса лартăм… Йĕрсе те илтĕм. Ара, хамăр Надя ташлать-çке.

ИРА. Мускав пысăк хула çав вăл…

МАРИНЕ. Вĕçĕ-хĕрри те çук. Пирĕн Шупашкартан пĕр вăтăр-хĕрĕх хут та пысăкрах пулĕ. Тен, ытларах та… Халăхĕ тата! Урамсенче те тăп-тулли, пурте таçта васкаççĕ. *(Максим Максимовичпа Лида кĕреççĕ.)* Эх, Ирочка, Мускав пек хитре хула тĕнчере те урăх çук пулĕ.

Курмалли нумай унта… Пурӗпӗр яла килес килекен пулчӗ. Питӗ тунсӑхларӑм. Яла таврӑнсанах Петӗр тӳрех кунта килчӗ, эпӗ ҫырмана чупса антӑм. Хамӑрӑн ватӑ йӑмрана куртӑм та йӗрсе ятӑм, куҫҫулӗпех йӗтӗм… Вӗренме кӗрейменшӗн те хурлантӑм…

ИРА. Ан хурлан, Марина, кӑҫал кӗреймерӗн пулсан тепӗр ҫул кӗретӗнех, шанчӑкна ан ҫухат кӑна.

МАРИНЕ. Пӗлместӗп, нимӗн те пӗлместӗп. Тепӗр хут… Хал ҫитӗ-ши? Олимпия Порфирьевна мана вӗҫӗмсӗр эсӗ ҫав тери хитре, ҫав тери шеп юрлатӑн, сассу сан шӑпчӑк сасси тесе мухтатчӗ… Эх, Ира, сан хӑрах куҫпа та пулин курасчӗ, мӗнле хитре хӗрсем унта… тӗлӗнсе каймалла! Эпӗ вӗсем хушшинче ҫӳпӗ анчах.

МАКСИМ *(Петӗре).* Студент мӗн калать?

ПЕТӖР. Аякра тӑван ял ытларах аса килет. Марина тӗрӗс калать.

МАКСИМ. Ҫапла пулмалла та вӑл. Савӑнтӑм эпӗ саншӑн, Петӗр. Иксӗмӗр тӑрӑшни сая каймарӗ, ман шанчӑка тӳрре кӑлартӑн. *(Петӗре ал тытать, унтан ыталаса илсе ҫурӑмӗнчен лӑпкать.)*

ПЕТӖР. Эсир пулӑшман, эсир хавхалантарман пулсан, паллах, нимӗн те пулмастчӗ.

МАКСИМ. Тупрӗ калаҫмалли. *(Килкартинче урса кайса йытӑ вӗрет.)*

ИРА. Мӗн пулнӑ ку йытта? Кам ҫине сиксе ларас пек вӗрет? *(Алӑкран Олимпия Порфирьевна васкаса кӗрет.)*

ОЛИМПИЯ *(Петӗр патне чупса пырать).* Ывӑлӑм! Сывӑ! Чӗрех! Мӗншӗн тӳрех киле кӗмерӗн? Тавтапуҫ кӳршӗсене, вӗсем каларӗҫ. Сан Петӗр таврӑннӑ терӗҫ. *(Петӗре чуптума тытӑнать.)* Студент! Студент! *(Пурин ҫине те пысӑк ҫӗнтерӳҫӗ пек пӑхать.)* Илтетӗр-и эсир, манӑн ывӑл студент! Манӑн ӗмӗт, манӑн шухӑш пурнӑҫланчӗ… Тинех пурнӑҫланчӗ!

МАКСИМ. Мӗн чухлӗ шӑв-шав пулчӗ, Олимпия Порфирьевна…

ОЛИМПИЯ. Ну, йытӑ та вара сирӗн, Ирина! Кӑштах татӑкӑн-татӑкӑн ҫурса пӗтермерӗ. Ӑҫтан тупрӑр ҫавӑн пек хаяр йытӑ?

ИРА. Ку лешӗ вӑл… Хайхи йытӑ ҫури.

ОЛИМПИЯ. Мӗнле «лешӗ»? Мӗнле «хайхи» тата?

ИРА. Эсир шыва путарасшӑн пулни.

ОЛИМПИЯ *(кӑштах аван мар пек туйса).* Мӗнле санӑн сывлӑхсем, Ирочка? Мӗнле пурӑнатӑн?

ИРА. Лайӑх пурӑнатӑп, питӗ лайӑх.

ОЛИМПИЯ. Марина, мӗнле ӗҫсем? У-у-у! Паллӑ! Кӗнӗ, кӗнӗ! Сана та илмесен! Каларӑм сана кӗретӗн тесе… Эп пулӑшни сая каймарӗ апла?

МАРИНЕ. Тавтапуҫ Олимпия Порфирьевна!

ОЛИМПИЯ. Тархасшӑн. Саламлатӑп. Чун-чӗререн саламлатӑп. Калатӑп сана, мана итлесен института кӗретӗнех тесе. *(Маринене тинкерсе пӑхать.)* Халь эс пушшех хитреленсе кайнӑ. Тепӗр хут саламлатӑп.

МАРИНЕ *(Олимпияран пӑрӑнса).* Унашкалах саламлама кирлӗ мар, Олимпия Порфирьевна.

ОЛИМПИЯ. Каларӑм вӗт, санран чаплӑ артистка пулать тесе. Ман шанӑҫа тӳрре кӑлартӑн.

МАРИНЕ. Пултӑм ӗнтӗ, чи чапли пултӑм. Эсир вӗрентнӗ пек куҫ хӗссе кӑтартрӑм та, тӳрех йышӑнчӗҫ.

ОЛИМПИЯ. Марина, эс… эс манран кулатӑн-им?

МАРИНЕ. Кулмастӑп, савӑнӑҫ туйӑмӗ вӗресе тӑнипе хама чараймастӑп, ытлашши каларӑм пулас.

ПЕТӖР *(тӳсеймест).* Анне, эс киле кай-ха. Эп…

ОЛИМПИЯ. Мӗскер? Мӗн терӗн ҫак эс? Илтрӗр-и, илтрӗр-и, мӗн калаҫать вӑл? Амӑшне хӑвалать!

ПЕТӖР. Анне…

ОЛИМПИЯ. Чӑрмантаратӑп апла? Тавтапуҫ, тавтапуҫ ырӑ, ылтӑн пек хаклӑ сӑмахушӑн, ывӑлӑм. Турӑҫӑм! Пурте манран пӑрӑнаҫҫӗ, пуриншӗн те ытлашши эпӗ, пурне те чӑрмантаратӑп… Турӑҫӑм! Эп саншӑн тӑрӑшман-и? Саншӑн асапланман-и? Эпӗ сана ҫын тӑвас тенӗ, хамшӑн мар, саншӑн тӑрӑшнӑ.

ПЕТӖР. Итле-ха мана…

ОЛИМПИЯ. Ан чӗн, ан чӗн! Сана университета кӗме эпӗ пулӑшрӑм. Эпӗ кукку патне ҫыртӑм, сахал мар укҫа куҫартӑм. Кукку тӑрӑшман пулсан…

ПЕТӖР. Эп, анне, нимӗнле куккана та курман! Тата эпӗ университета мар, Бауман ячӗпе хисепленекен института кӗтӗм.

*Ҫутӑ сӳнет.*

*Сад. Йӗри-тавра чечек. Садра Макмим Максимович, Иван Иванович, Лида, Марине, Афанасий Александрович тата Ира. Ҫамрӑксем юрӑ юрласа кӗреҫҫӗ.*

МАРИНЕ. Ирочка! Кур-ха, кур! Асамат кӗперӗ мӗнле хитре!

ИРА. Чӑнах та!..

МАРИНЕ. Чупса тухатпӑр-и?

ИРА. Лида?

МАРИНЕ. Петӗр?

ПЕТӖР. Ҫамрӑксем?

ПУРТЕ. Тухатпӑр!

ИРА. Ну… *(Елена Тимофеевна чупса кӗрет.)*

ЕЛЕНА. Ирочка! Ира! Эс ҫӳхе тӑхӑннӑ-ҫке, хӑвӑртрах кӗрсе тумланса тух.

ИРА. Ҫук, анне, мана пачах сивӗ мар, эпир йышпа, йышпа ӑшӑ. Максим Максимович, Иван Иванович, атте, анне, пурте алла-аллӑн тытӑнар… Петӗр, ачасем, эсир те ан юлӑр! *(Юрӑ малалла тӑсӑлать.)*

ОЛИМПИЯ. Эпӗ те… Мана та ан хӑварӑр! *(Петӗрпе Иван Иванович ҫумне пырса тӑрать. Юрӑ хытӑран хытӑ янӑрать.)*

ЧАРШАВ